К75
Х-68
Ч-43636

Анатолий
ХОВАНСКИЙ




# ПĔР ТĂВАН ТАРАТИНСЕМ

Национальная библиотека ЧР
4-043636

Обязат экз
К75
Х68

Анатолий ХОВАНСКИЙ

# ПӖР ТӐВАН ТАРАТИНСЕМ

Шупашкар
"Ҫӗнӗ Вӑхӑт"
2010

УДК 796/799
ББК 75.715
Х 68

Х 68 **Хованский А.И.**
**Пĕр тăван Таратинсем.** Шупашкар: “Çĕнĕ Вăхăт”, 2010. – 120 с.

И-43636

© Хованский А.И., 2010



**В.СЕМЕНОВ,**
ЧР тава тивĕçлĕ тренерĕ,
ЧР ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен
Федерацийĕн вице-президенчĕ:

## “Таратинсем пулнă, пур, пулаççĕ те”.

**НИКОЛАЙ** — “Урожай” ирĕклĕ спорт обществăн Тĕп Совечĕн чемпионĕ (1971 ç.).

**ИВАН** — спорт мастерĕ, Чăваш Республикин физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

**ВЛАДИМИР** – “Урожай” ирĕклĕ спорт обществăн Тĕп Совечĕн призерĕ (1974 ç.).



*Малти ретре (сулахайран сылтăмалла):* ***Раççей Геройĕ Николай ГАВРИЛОВ генерал-лейтенант, спорт мастерĕ Сергей ТАРАТИН, Раççей халăх артисчĕ Леонид ЯКУБОВИЧ.***

# УМСĂМАХ

Кавал – районти чи пысăк ялсенчен пĕри. Хамăрпа кӳршĕллĕ республикăсенче те лайăх пĕлеççĕ ăна. 17-мĕш ĕмĕртех пуçланнă. Вĕлле пек кĕрлесе тăракан пасарĕ, 1871 çултанпах çулсерен ирттерекен ярмăркки чапа кăларнă ăна. Чулхулапа Хусан тата Чĕмпĕр хулисенчен те килнĕ Кавал ярмăрккине. Забродин, Серебренников, Лукин, Волчков вырăссем Кавалта çурт лартса, магазин тытса пурăннă. Эмадуллин тутар та магазин тытнă, складсем тусах чăх çăмарти пухнă, хуласене ăсатнă. Пасарпа ярмăркка кавалсене тĕрлĕ халăхпа явăçма, çĕршыври лару-тăрăва чухлама май панă. 1845 çултах уçнă шкулĕ вара ял çыннисене пĕлӳ илме, «çутта тухма» пулăшнă. Çак шкултан 1918–2009 çулсенче 7 пин ытла çамрăк вĕренсе тухнă, тулли мар вăтам тата вăтам пĕлӳ илнĕ, вĕсенчен нумайăшĕ кайран Тăван çĕршывăн тĕрлĕ хулисенчи университетсемпе институтсенче вĕренсе аслă пĕлӳллĕ, халăх хуçалăхĕн нумай енлĕ специалисчĕсем пулса тăнă.

Кавал шкулĕнчен вĕренсе тухнисен хушшинче эпир çĕршер ял хуçалăх специалисчĕсене, çар çыннисемпе юристсене, писательсене, журналистсене, художниксене, артистсене, спортсменсене тата ытти професси çыннисене куратпăр. Вĕсенчен нумайăшĕ правительство наградисене, СССР тата Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин хисеплĕ ячĕсене илме тивĕç пулнă. Василий Степанович Степанов Кавал шкулĕ хыççăн Мускаври ял хуçалăх академине вĕренсе пĕтернĕ, нумай çулсем хушши Казахстанра совхоз директорĕнче ĕçленĕ, çерем çĕрсем уçнă çĕре хастар хутшăннă, лайăх ĕçпе палăрнă. Çавăншăн ăна Социализмла Ĕç Геройĕ ятне панă, икĕ хутчен Ленин орденĕпе наградăланă.

1954 çулта, Казахстанăн çурçĕр облаçĕнче çерем çĕрсене уçса алла илме пуçланă чухне, «Красивинский» совхозăн историйĕ пуçланнă. Правительство çĕршывăн çĕнĕ тырă пуссине тума механизаторсене, строительсене, выльăх-чĕрлĕх пăхакансене çеç мар, специалистсен опытлă кадрĕсене, хуçалăх руководителĕсене янă. Акмолинск (каярахпа Целиноград) облаçĕнчи Есильски районне чи малтанхисенчен пĕри

Василий Степанович Степанов çитнĕ. Ăна çĕнĕ «Красивинский» совхоз директорĕ пулма лартнă. Унăн малтанах ял хуçалăх производствинче пухнă пысăк опыт пулнă, совхозсен системинче ĕçленĕ.

Чи малтанхи çул Степановăн организаторпа руководитель çеç мар, экономист та, агроном та, инженер та, воспитатель те пулмалла пулнă. Вăл ответлă задачăсене лайăх ăнланнă, çĕнĕ совхозăн нумай йывăрлăхĕсене курса тăнă. Вĕсем çинчен уççăн калаçнă. Çакă ăна çынсене пĕрлештерме, мобилизацилеме пулăшнă.

Хуçалăха вăл хăй виличченех ертсе пынă. Опытлă агроном, ăста механизатор, принциплă руководитель Степанов совхозран пысăк тĕш-тырă фабрики туса хума пултарнă. Унăн хуçалăхĕ облаçра та малта пынă.

Ученăйсем те сахал мар тухнă ку шкултан. Икĕ доктор, наука кандидачĕсем – 13. Кавал шкулĕнче пурĕ 5 наркоминистр пĕлӳ илнĕ. Петр Федорович Юрьев – Чăваш Республикин суту-илӳ, кайран çĕр ĕç наркомĕ, Конон Пименович Белков – юстици министрĕ, И.Н.Широв – ял хуçалăх министрĕ, Чăваш АССРĕн çутĕç наркомĕ те Кавал шкулĕн пирвайхи директорĕ Гаврил Михайлович Михайлов пулнă. 1921–1926 çулсенче ĕçленĕ. Халăха вĕрентес ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунăшĕн ăна «Халăха вĕрентес ĕç отличникĕ» хисеплĕ ят панă.

Кавалсем спортпа та туслă. Спортăн тĕрлĕ енĕпе вуншар çамрăк спорт мастерĕн тата кандидачĕн нормативĕсене пурнăçланă. Вĕсен хушшинче эпир шашкăлла выляс енĕпе республикăн темиçе хут чемпионĕсене – Анатолий Фомина, Юрий Козырева, Николай Дмитриева, Николай Кузнецова, ирĕклĕ майпа кĕрешессипе – Николай, Иван, Владимир, Сергей, Руслан Таратинсене, Оля Ивановăна, Арина Табаковăна, Владимир Тихонова, Николай Адюков йывăр атлета, Юрий Исаев йĕлтĕрçĕне, Иван Московкин самбиста, йĕтре тĕртес, копье, граната, диск ывăтас енĕпе республика, Раççей, СССР чемпионне тата рекордсменне Генриэтта Николаевăна (Юрьева) тата ыттисене куратпăр.

Паянхи кун Кавалта 480 кил хуçалăхĕ шутланать, 950 çын пурăнать. Ялта Адюковсен, Табаковсен, Артюковсен, Таратинсен йăхĕсем уйрăмах йышлă.

## ТАРАТИН Петр Сергеевич



*1943 çул.*

1908 çулта октябрĕн 5-мĕшĕнче Кавалта çуралнă. Ялти шкулта пĕлӳ илнĕ хыççăн 1927 çулта чăвашсен Шупашкарти педагогика Тĕп техникумне вĕренме кĕрет, ăнăçлă вĕренсе тухать. Ун хыççăн вăл Томск округĕнчи Шаловскри шкулта ĕçлеме тытăнать. Пĕр вăхăтрах районти авиаципе хими обществин юлташлăх оборонин хушăвĕпе çамрăксене Хĕрлĕ Çара призыва илмелли плана мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслесе тăрать. Çакна Томск округĕнчи Ишимск районĕнчи райсовет ĕçтăвкомĕ панă справкăпа çирĕплетнĕ.

1930 çулхи майăн 14-мĕшĕнче Томск округĕнчи Ишимск районĕнчи Григорьевск ял Советне кĕрекен Малиновка поселокĕнчи общественноçпа Сталин ячĕпе хисепленекен колхоз панă рекомендацире çапла палăртнă: **«Эпир – батраксем, чухăн пурăнакансем тата вăтам пурăнаканнисенчен ытларах пайĕ Петр Сергеевич Таратин 1928 çултан пуçласа пирĕншĕн мĕн пур вăйран тăрăшнине, çĕнĕ пурнăçшăн – социализм строительствишĕн хăйĕн пĕтĕм пултарулăхне панине куратпăр.**

**Вăл канма та пĕлмен, кунĕн-çĕрĕн пирĕнпе пулнă – калаçусем, пухусем ирттернĕ, пире тĕрĕс çул çине тăма пулăшнă.**

**П.С.Таратин киличчен пирĕн Малиновка тарăн тĕттĕмлĕхре пурăннă. Йĕри-тавра мĕн пулса иртнине пире никам та ăнлантарса паман. П.Таратин килнĕ хыççăн, вăл пуçарулăх кăтартнипе тата унăн организаторла пултарулăхĕ пысăк пулнипе эпир**

**тĕрĕс çул çине тăтăмăр, социализм строительстви-не активлă хутшăнма пуçларăмăр. Хаçат-журнал-семпе интересленме тытăнтăмăр. Ирттерекен ме-роприятисенче вăл пире колхозсемпе совхозсем йĕркелесен вĕсен укçи-тенкипе çынсен пурнăçне лайăхлатма май пурри çинчен ăнлантарса паратчĕ.**

**П.С.Таратин пуçарăвĕпе Сталин ячĕпе хисеп-ленекен колхоз йĕркелерĕмĕр. Вăл Ленин кăтартнă çулпа малалла çирĕппĕн аталанса пырать. Пирĕн колхоз Сталин ячĕллĕ. Эпир, колхозниксем, унăн ятне ямастпăр. Сталинла çирĕп дисциплинăпа со-циализм тума активлă хутшăнатпăр. Çакна пурнăç-лама пирĕнпе пĕрле çирĕп дисциплинăллă П.Тара-тин комсомолец пур.**

**Вăл тунă калама çук пысăк ĕçе пĕтĕмне çырса кăтартаймастпăр. Çакна кăна çирĕплетсе калама пултаратпăр: вăл шкулта та, халăх хушшинче те пултаруллă, пысăк авторитетлă, социализмшăн пĕтĕм чун-хавалне паракан çын.**

**Ку отзыв-рекомендацие Сталин ячĕпе хисепле-некен колхозпа Малиновка ялĕнчи граждансен пĕрлехи пухăвĕнче йышăнса çирĕплетнĕ.**

*Пĕрлехи пуху хушнипе колхоз председателĕ Кубасов, членĕсем – Иванов, Васильев, ял Совет уполномоченнăйĕ Савельев алă пуснă».*

Куратпăр ĕнтĕ, вăл вăхăтра пирĕн ентеш – Петр Сер-геевич Таратин Томск округĕнчи Ишимск районĕнчи Гри-горьевск ял Советĕнчи халăха çутта кăларас, вĕсен пурнăç условийĕсене лайăхлатас енĕпе чăннипех те пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. Чăваш каччи унта ырă йĕр хăварнă.

Анчах та тăван ен пултаруллă çамрăка хăй еннех илĕртнĕ. 1931 çулхи августăн 1-мĕшĕнче вăл ĕçрен хăй ирĕкĕпе тухса тăван района таврăнать.

Районти çут ĕç пайĕнче тăрăшакансем те мал ĕмĕтлĕ çамрăкăн пултарулăхне асăрхаççĕ. Ăна Кивĕ Вĕренерти 4 çул вĕренмелли шкул заведующийĕ пулма çирĕплетеççĕ.

Пурнăç тути-масине самаях тутанса пăхма ĕлкĕрнĕскер 1931 çулхи декабрĕн 14-мĕшĕнче Мурманскри хула Совечĕн строительство енĕпе ĕçлекен кантурта хĕрарăмсене производствăна ĕçлеме илес тата вырнаçтарас енĕпе сектор заведующийĕнче вăй хума тытăнать. Хĕрлĕ Çара каймашкăн повестка илсен 1932 çулхи июнĕн 15-мĕшĕнче вăл ĕçрен тухать те тăван киле таврăнать.

Часах ăна Кĕтеснерти улма-çырла типĕтекен заводăн директорĕ пулма çирĕплетеççĕ. Производствăна малалла аталантарассишĕн хăйĕн мĕн пур пĕлĕвне, ăсталăхне парать. Унăн тăрăшулăхне палăртса Вăрмар райсовет ĕçтăвкомĕн председателĕ Яндараев характеристикăра çапла çырнă: «Таратин Петр Сергеевич хăйĕн ĕçне тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласа пырать. Вăл пултаруллă ертсе пынипе çулталăкри производство планне 121% пурнăçланă, продукци хăйхаклăхне планпа пăхнинчен 10% чакарнă, ĕç тухăçлăхне 25% ӳстернĕ. Ĕçре ырă тĕслĕх кăтартнăшăн Наркомснабăн 1933 çулхи октябрĕн 7-мĕшĕнчи тата «Союзплодоовощ» Чăваш кантурĕн 1933 çулхи декабрĕн 22-мĕшĕнчи йышăнăвĕсемпе килĕшӳллĕн Таратина çăм пуставран çĕленĕ костюм тата 225 тенкĕ укçан парса хавхалантарнă. Завода тата Таратин ятне Вăрмар райсовет ĕçтăвкомĕн Президиумĕн йышăнăвĕпе ВКП(б) 17 съезчĕ ячĕпе хисепленекен Хĕрлĕ хăма çине кĕртме йышăннă».

Çавăн пекех П.С.Таратина ĕçри пысăк çитĕнӳсемшĕн Мускаври «Улма-çырлана хатĕрлесе вырнаçтарас енĕпе ĕçлекен «Главторгплодоовощ» тĕп управленийĕн приказĕпе 500 тенкĕ преми парса чыс тунă.

1936 çулхи январь уйăхĕнче ăна Кĕтеснерти улма-çырла типĕтекен заводран Етĕрне районĕнчи Саръялти вар завочĕн заведующийĕ пулма çирĕплетеççĕ. Кунта ĕçленĕ вăхăтра хăйĕн квалификацине Украинăри Чернигов облаçĕнчи пĕр хулара ӳстерет. Тепĕр çултанах ку заводра чирлесе ӳкнипе хăй ирĕкĕпе ĕçлеме пăрахать, яла таврăнать, тăван «Маяк» колхоз экономикине тĕреклетессишĕн хăйĕн мĕн пур вăй-халне парать.

1941 çулта П.Таратин Хĕрлĕ Çар ретне тăрать. Рота старшинине П.Таратина панă характеристикăра çапла çырнă: *«Рота старшини П.Таратин чи лайăх кĕçĕн командир. Салтаксемшĕн лайăх тăрăшакан старшина, вăл вĕсене рабочисемпе хресченсен Хĕрлĕ Çар Уставне, хĕç-пăшала мĕнле салатса пуçтармаллине, стройпа утма тата политикăна вĕрентет. Çавна май командовани ăна темиçе хутчен те тав тунă».*

Çулла. Çанталăк уяр та лăпкă. Тӳпере пĕр пĕлĕт татки те курăнмасть. Колхозра хĕрӳ ĕç вĕрет: хăшĕсем уй-хирте, улăхра тăрăшаççĕ, теприсем пахчасенче тĕрмĕшеççĕ. Пĕри тепринчен лайăхрах ĕçлессишĕн тăрăшать. Савăнать ĕçчен халăх.

Анчах сасартăк хăрушă хыпар персе çитет. Вăрçă! Кашнин чĕрине çĕçĕпе чикнĕ евĕрлех туйăнать çак кĕтмен çĕртен илтнĕ хыпар. Ирсĕр фашистсем пирĕн юратнă Тăван çĕршыв çине вăрă-хурахла тапăннă.

Тăван çĕршыв хăрушлăхра, ăна çăлмалла. Вăйпитти арçынсем Тăван çĕршыва сыхласа хăварма фронта тухса кайнă. Ялта ватăсемпе çамрăксем анчах юлнă. Колхозри пĕтĕм йывăрлăх вĕсем çине тиеннĕ. Вăрçа пулах колхозра лашасем сахалланса юлнă.

Вăрçă пуçлансан темиçе кунтанах Кавалта митинг ирттернĕ. Унта хутшăннисем хăйсен пурнăçне шеллемесĕр тăшмана çапса аркатма хатĕр тăни, мĕн вăй çитнĕ таран фронта пулăшма пулни çинчен пĕлтернĕ. «Пурте – фронт валли, пурте – тăшмана çĕнтерме!» – çапла тĕллев лартнă колхозниксем.

Аслă Отечественнăй вăрçа Кавалтан 400 çын ытла хутшăннă. 200-шĕ хаяр вăрçă хирĕсенче пуçĕсене хунă. А.А.Кудрявцев полковник паттăрлăх кăтартнăшăн Ленин, Хĕрлĕ Ялав, Хĕрлĕ Çăлтăр, Отечественнăй вăрçă орденĕсем илме тивĕçлĕ пулнă. Г.В.Моклаков, В.С.Морозов хаяр вăрçăра аманса Хĕрлĕ Ялав орденĕсемпе тавранă.

1946 çулта П.Таратин фронтовик киле таврăнать. Малтан ăна бригадира лартаççĕ. Шанса панă ĕçе тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлать. Часах ăна колхозниксем «Маяк» колхоз председателĕ пулма суйлаççĕ.

# КОЛХОЗ ПРЕДСЕДАТЕЛЁНЧЕ – 6 ÇУЛ



*Зоя Тимофеевна хăйĕн юратнă маттур ывăлĕсемпе.*

«Вăрçă хыççăн Таратин Петр Сергеевич колхоз председателĕнче ĕçлерĕ. Вăл колхоза малалла ячĕ. Колхозниксене тырă та, укçа та валеçме пуçларĕ. Атăл хĕрринчен пĕрене турттарса ялта кермен пек чаплă клуб туса лартрĕ. Кун пек культура учрежденийĕ республикăра та сахал пулнă. Лашасемпе тата вăкăрсемпе пĕрене турттарма çамрăк ачасене Николай Иванович Веселовский илсе çӳренĕ», – çапла каласа панăччĕ колхоза нумай çул председатель пулса ăнăçлă ертсе пынă Иван Николаевич Туртушов ветеран. Çак яваплă та çăмăл мар ĕçре П.Таратин 1946 çултан пуçласа 1952 çулччен тăрăшать.

Йывăр чир канăç паман Петр Сергеевича. 1955 çулхи августăн 22-мĕшĕнче вăл çĕре кĕрет.

Мăшăрĕ – Зоя Тимофеевна, 1914 çулта çуралнăскер, Кавал хĕрĕ пулнă. Вăл 1930 çултан пуçласа 1965 çулччен

«Маяк» хуçалăхра уй-хир бригадинче тăрăшнă.

Çапла вара кил хуçалăхĕнчи пĕтĕм йывăрлăх мăшăрĕпе ачисем çине тиенет. Çапах та Таратинсем йывăрлăхсене çĕнтерсе пыма тăрăшаççĕ.

Мăшăрĕ çĕре кĕрсен Зоя Тимофеевна ачисене пурнăç çулĕ çине кăларассишĕн, тивĕçлĕ пĕлӳ парассишĕн хăйĕн мĕн пур вăй-халне, сывлăхне парать. Вăл яланах çемье çирĕплĕхĕ, кил-çурт ăшши, вучах упраканĕ, обществăн тĕрекĕ пулнă. Ачасен пуласлăхĕшĕн пăшăрханнă, яваплăха туйса ырми-канми ĕçленĕ.

Питех те шел, Зоя Тимофеевна Таратина 2005 çулхи майăн 15-мĕшĕнче пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ. Ачисен пултарулăхĕпе, мăнукĕсен ырлăхĕпе текех савăнса пурăнма тӳр килмерĕ ăна. Ачисем вара юратнă амăшне ырă кăмăллă пулнăшăн, Тăван çĕршыва юрăхлă çынсем парнеленĕшĕн яланах асра тытаççĕ, унпа мăнаçланаççĕ, мухтанаççĕ. Ашшĕ пекех çирĕп пулнă, кĕрнеклĕ 5 ывăлĕ – Геннадий, Юрий, Николай, Иван, Владимир унăн пархатарлă ĕçне малалла тăсса пыраççĕ.

Пĕр тăван Таратинсем Совет Союзĕ вăхăтĕнче те, хальхи Раççей Федерацийĕнче те çар службин тивĕçĕсене чыслăн пурнăçланă, чăваш ятне çӳлте тытнă, çĕршыв чиккине шанчăклăн хӳтĕленĕ, хӳтĕлеççĕ те. Çар чаçĕсенчен салтаксен ашшĕ-амăшĕсем патне тав туса çырнă çырусем те çакна лайăх çирĕплетсе параççĕ.

Чăн-чăн арçыннăн-хӳтĕлевçĕн – хăйĕн çемйишĕн шанчăклă тĕрев пулмалла, тăван кил вучахне упрамалла, çывăх çыннисемпе тăванĕсемшĕн тăрăшмалла, юратăва сыхламалла. Çĕршывăмăрăн ырă пурнăçĕ çакăн пек шанчăклă никĕс çинче кăна йĕркеленет.

Тăван çĕршыва юратни, унăн интересĕсемшĕн тăрасси, уншăн пурнăçа та пама хатĕрри пирĕн салтаксемшĕн яланах кăтартуллă пулнă. Пирĕн çар çыннисем çапăçу хирĕсенче тĕлĕнмелле паттăрлăхпа хăюлăх кăтартса нихçан сӳнми мухтав çĕнсе илнĕ.

Çакна Кавалти Таратинсем яланах асра тытаççĕ. Хăй-

сен ачисемпе мăнукĕсене Тăван çĕршыва юратма воспитани парса ÿстереççĕ.

Кăçал эпир совет халăхĕпе унăн хĕç-пăшаллă вăйĕсем Аслă Отечественнăй вăрçăра нимĕç фашисчĕсене çапса аркатнăранпа 65 çул çитнине анлăн паллă турăмăр. Вăрçă нуши кашни çемьенех пырса кĕнĕ.

Петр Сергеевич Таратин хăрушă вăрçăн тумхахлă çулĕпе паттăррăн утса тухнă, хула хыççăн хулана, ял хыççăн яла тăшмантан ирĕке кăларассишĕн хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр çапăçнă, вилĕмпе куçа-куçăн тăнă, çĕнтерĕве хăвăртрах çывхартассишĕн тăрăшнă.

Зоя Тимофеевна тылра кунне-çĕрне пĕлмесĕр, вăйхала, сывлăха хĕрхенмесĕр тар юхтарса ĕçленĕ, фронта пулăшнă. Аслă Çĕнтерÿ ячĕпе ăна панă юбилей медалĕсем те çакна лайăх çирĕплетсе пăраççĕ.

Вĕсен паттăрлăхĕ ачисен чĕринче ĕмĕрлĕхех ырă йĕр хăварнă.



*Зоя Тимофеевна Александра, Ольга, икĕ Галина тата Юля кинĕсемпе пĕрле.*

# МАЛТАНХИ УТĂМСЕМ

Кивě Вěренер ялěнче пурăннă спорт ветеранě, ирěклě майпа кěрешес енěпе темиçе хутчен те республика чемпионě пулнă Илья Алексеевич Алексеев каласа пани халě те асрах-ха:

«1966 çулхи ěç итогěсене пăхса тухнă чухне рабочисем совхозра физкультурăпа спорт ěçне пуçарса ярасси çинчен сăмах хускатрěç.

– Совхозра рабочисемпе служащисен пурнăçě лайăхланса пырать. Вěсем лайăх пурнăçпа çеç лăпланса ларасшăн мар, хăйсен сывлăхěсене çирěплетес шутпа физкультурăпа спорт еннеллех туртăнаççě. Спорт инвентарěсем: шашка-шахмат, йěлтěрсемпе конькисем тата ыттисене те туянаççě. Совхозра физкультурăпа спорта малалла аталантарасси пирěн тивěç пулмалла. Кавал ял Совет территорине кěрекен ялсенчи ěç çыннисем «Право йěркисене пăсмасăр пурăнар тата ěçлер» девизпа ырă пуçару турěç. Республикăри пур коллективсенче те ăна хапăлласа йышăнчěç. Апла тăк, физкультурăпа спорта аталантарасси çине пирěн уйрăмах пысăк тимлěх уйăрмалла, кивě, усал йăласенчен хăтăлмалла. Рабочисемпе служащисем сире физкультурăпа спорта ертсе пыма сěнеççě», – терě мана ун чухне совхоз директорě пулса ěçленě Николай Герасимович Герасимов.

Юратакан ěçрен пăрăнас мар тесе хирěçлемерěм. Килěшрěм. Çав кунах мана трактор бригадин учетчикěн ěçěнчен хăтарса, физкультурăпа спорт ěçне ертсе пыма приказ çырчěç. Мěнрен пуçламалла-ха? Совхоз директорěпе Н.Герасимовпа, партком секретарěпе, рабочком председателěпе, ВЛКСМ комитечěн секретарěпе канашласа пăхрăм. Вěсем физкультурăпа спорт ěçне малалла аталантарас тěллевпе ěç планě туса хатěрлеме, ăна активистсемпе пěрле сӳтсе явма шутларěç.

Ěç планěн проектне туса хатěрличчен спорт вăййисене активлă хутшăннă паллă спортсменсемпе, шашистсен

тренерĕпе Н.Козыревпа калаçса пăхрăм. Вăл шашка секцине ертсе пыма пулчĕ. Республика чемпионĕ тата рекордсменĕ Г.Юрьевăпа унăн мăшăрĕ Г.Николаев учительсем йĕлтĕрпе çăмăл атлетика секцийĕсен ĕçне лайăхлатас енĕпе пулăшма, сĕтел çинчи теннис секцине ертсе пыма шантарчĕç. Йывăр атлетикăна юратакансем те тупăнчĕç. Унăн секцине Чăрăшçырма каччи, Çиçтĕпе уйрăмĕнче агроном пулса ĕçлекен Г.Захаревский ертсе пыма килĕшрĕ. Кĕрешекенсем авалтанпах нумай пирĕн совхозра. Вĕсене ертсе пырас ĕçе Ю.Покровский хăй çине илчĕ. Футболистсен командине йĕркелеме Иванпа Николай Таратинсем нумай вăй хучĕç. Волейбол вăййине юратакансем, паллах, кашни ялтах нумай. Ăна та айккинче хăвармарăмăр. Алă мечĕкĕн командине А.Петров хатĕрлерĕ.

Спортсменсемпе калаçнă хыççăн совхозра мала тухассишĕн ирттерме палăртнă спорт ăмăртăвĕсен ĕç планĕн проектне рабочкома тăратрăмăр.

Çакă питех те кăмăла килчĕ. Н.Герасимов директор, активистсем спорт ăмăртăвĕсем ирттермелли плана тĕплĕн сӳтсе леврĕç, хăш-пĕр хушусем кĕртрĕç. Совхоз чемпионĕсене чыс туса парнесем пама тата хĕрлĕ хăюран «Ленинский» совхоз  чемпионĕ» тесе çырнă лента формине çирĕплетрĕмĕр. Кашни уйрăмрах, бригадăсенче тата совхозăн тĕп кантурĕнче спорт витринисем хатĕрлеме, кĕске вăхăтра спорт площадкисем тума яваплă çынсем уйăртăмăр.

Совхозри физкультура комитетне 9 çынран суйларăмăр. Кивĕ Вăрмарта – В.Алексеев, Кавалта – И.Таратин, Пăвакассинче – Ю.Кохнуров, Çиçтĕпере – В.Христофоров, Чăрăшçырмара – Г.Захаревский, Кивĕ Вĕренерте – В.Каланов.

Çапла вара физкультурăпа спортăн пурлăх бази çулсерен тĕрекленсе пычĕ».

«Ленинский» совхозри тата Кавалти вăтам шкулти спортсменсем совхоз тата шкул чысне районти тата республикăри ăмăртусенче пултаруллăн хӳтĕленĕ.

## СПОРТ ВЕТЕРАНĔСЕН АСА ИЛĔВĔСЕМ

***1957–1959 çулсенче «Маяк» колхозра (Кавал ялĕ) физкультура коллективĕн председателĕ пулнă И.ИЛЬИН***

Кавалсем мĕн авалтан спортпа туслă пулнă. Эпĕ ĕçленĕ вăхăтра колхозра 40 мăшăр йĕлтĕр шутланатчĕ, вĕсене ялти клубра упраттăмăр. Колхозра ăмăртусем тăтăшах йĕркелеттĕмĕр. Чи пултаруллисем колхоз чысне районти тата республикăри ăмăртусенче хӳтĕлетчĕç. Районти физкультурăпа спорт комитечĕн председателĕ М.Кубенев (Кавал ялĕнчен) пире штанга илсе пачĕ. Çакăн хыççăн çамрăксем спорта татах та ытларах туртăнма пуçларĕç. Пĕр тăван Таратинсенчен çав çулсенче Геннадий гранатăна инçете ывăтас енĕпе палăрса тăратчĕ. Юрий кĕрешӳпе интересленетчĕ. Николай штанга çĕклеме кăмăллатчĕ. Каярахпа вĕсем те ирĕклĕ майпа кĕрешме хăнăхса пычĕç.

***«Урожай» ирĕклĕ спорт обществăн районти Совечĕн председателĕ пулнă Г.РАЗУМОВ (1964 çул)***

Районти спорт обществинче ĕçлеме пуçласан Кавалти пултаруллă пĕр тăван Таратин – спортсменсемпе (Юрий, Николай, Иван, Владимир) çывăх паллашрăм. Ара çавсем-çке республикăри ăмăртусенче район чысне пултаруллăн хӳтĕлеççĕ. Шупашкарта ĕçлекен Николай Таратина пĕрле ĕçлеме инструктора илтĕм. Мĕнле кăна ăмăртусене хутшăнман-ши вĕсем? Яланах малти вырăнсене тухнă. Районти тата ялсенчи Акатуйсенче вăл вăхăтра Кольăпа Ваньăна илекеннисем пачах пулман пулĕ тесен те çылăх пулас çук. Кĕрешекенсем виçипе хăйсенчен йывăр пулнă пулин те пурпĕрех çурăм çине çаварса хуратчĕç. Миçе така çĕнсе илмен-ши вĕсем кĕрешсе? Ирĕклĕ майпа кĕрешсе Коля спорт мастерĕн кандидачĕн,

Иван спорт мастерӗн нормативӗсене пурнӑҫланӑ. Владимир та ирӗклӗ майпа ӑнӑҫлӑ кӗрешетчӗ. Нихӑҫан та манас ҫук: Вӑрмарти вӑтам шкулӑн спорт залӗнче вӗсем республика чемпионӗсене ҫӗнтерчӗҫ. «Мӗн акатӑн, ҫавӑ шӑтать», теҫҫӗ халӑхра. Николайпа Иванӑн ачисем те ашшӗнчен юлмарӗҫ. Русланпа Сергей ирӗклӗ майпа кӗрешсе ырӑ тӗслӗх кӑтартрӗҫ, кӑтартаҫҫӗ те.

Пӗр тӑван Таратинсен амӑшӗ Зоя аппа та асран тухмасть. Вӗсен патӗнче пӗрре кӑна мар пулнӑ эпӗ. Яланах тарават йышӑнатчӗ. Ҫавӑн пек паттӑр ачасем ҫуратса вӗсене тӗрӗс ҫул ҫине кӑларнӑшӑн ӑна тав сӑмахӗ калас килет. Паян пирӗн хушӑра ҫук ӗнтӗ вӑл. Сывӑ пулнӑ пулсан ачисемпе тивӗҫлипе мухтанма пултаратчӗ. Таратинсен призӗсене ҫӗнсе илессишӗн районти Спорт ҫуртӗнче ҫулсерен ирӗклӗ майпа кӗрешсе уҫӑ турнир ирттереҫҫӗ. Унта тӗрлӗ ҫӗртен спортсменсем нумай килеҫҫӗ. Ҫак ырӑ йӑлана малашне те пӑрахас марччӗ, Таратинсене асрах тытасчӗ.

### *Ирӗклӗ майпа кӗрешес енӗпе темиҫе хутчен те республика чемпионӗ пулнӑ И.АЛЕКСЕЕВ (1969 ҫул)*

Классикӑлла кӗрешесси... Тӳрех каламалла, юлашки ҫулсенче пирӗн районта спортӑн ҫак енӗ вӑйлӑн аталанса пыма пуҫларӗ. Ӑна аталантарассишӗн тӑрӑшаканӗсенчен пӗри вӑл – Юрий Григорьевич Ефремов спортсмен. Чылай чемпионсем хатӗрленӗ. Вӑл Совет Ҫарне кайсан Кавалсем нумай ҫулсем хушши Юрий ҫитӗнӗвӗсемшӗн савӑнчӗҫ. Юрий хӑйӗн эстафетине Николай Таратина парса хӑварчӗ. Кавалсен ырӑ йӑлисене Николай малалла шанчӑклӑн тытса пырать.

Иртнӗ кунсенче Вӑрмар поселокне республикӑри «Урожай» ирӗклӗ спорт обществинче мала тухассишӗн классикӑлла кӗрешекенсем пухӑнчӗҫ.

Ҫурма ҫӑмӑл виҫеллисем хушшинче район чысне Ю.Григорьевпа С.Ильин спортсменсен хӳтӗлемелле.

Н.Таратин та çак виçерех кĕрешет. Колян, ирĕксĕрех искусствăлла майпа хăйĕн виçине ӳстерсе, иккĕмĕш çурма вăтам виçеллисемпе кĕрешĕве тухма тиврĕ. Халиччен 68 килограмм таранччен виçепе кĕрешнĕ спортсмен 74 килограмлă виçери спортсменсемпе кĕрешĕве тухрĕ. Тренер хăйне хăй шанчĕ, пур йывăрлăха парăнтарса, чемпион ятне çĕнсе илчĕ.

Çапла, икĕ куна пынă ăмăртусенче Вăрмар районĕнче çĕнĕрен ӳссе çитĕннĕ, пултаруллă та хастар, чăтăмлă та çирĕп сывлăхлă паттăрсем район чысне хӳтĕлессишĕн пĕтĕм вăйне пачĕç. Çакăнта, çирĕппĕнех каламалла, Н.Таратин тренерĕн тӳпи те пысăк. Вунă районтан килнĕ 67 спортсмен хушшинче Вăрмарсем уйрăмах палăрчĕç.

Вунă виçе категорийĕнчен пиллĕкĕшĕ пĕрремĕш вырăнсене, икĕ спортсменĕ – иккĕмĕш, виçĕ кĕрешӳçи виççĕмĕш вырăнсене йышăнчĕç.

Çăмăлтарах виçеллисенчен пирĕн районти Г.Васильевпа А.Александров тăваттăмĕш çаврăма çитиччен пурне те çĕнтерсе, лайăх кĕрешсе пычĕç.

– Шупашкар районĕнчен килнĕ Михайловпа Вăрмар спортсменне Зайцева кавир çине тухма чĕнетпĕр! – илтĕнсе каять вăтам шкулăн спорт залĕнче судьян уçă сасси. Володя Зайцев кавир çине пĕр хумханмасăр утса тухать. Çара хуллисемпе ура хырăмĕсем çинче, пĕтĕрсе явнă канат çинчи пек, мускулсем палăраççĕ. Пурнăçри тĕрлĕ сăлтавсене пула Володя кĕрешĕве тĕплĕнрех хатĕрленеймен. Апла пулин те, чылайăшĕ вăл çĕнтерессе шаннă. Иккĕмĕш вăтам виçери спортсменсен кĕрешĕвĕ мĕн пурĕ те пилĕк çеккунт кăна тăсăлчĕ. Судья шăхличин сасси илтĕнчĕ кăна – эпир сывлăшра Шупашкар спортсменĕн пушмак тĕпне çеç курса юлтăмăр. Хăшĕсем çакна сиссе те юлаймарĕç пулĕ. Тĕлĕнмелле рекорд! Эпĕ пилĕк çеккунтра пĕр кĕрешӳçĕ теприне кавир çине вырттарма пултарнине нихăш ăмăртура та курман, пĕр хаçат çинче те вуламан. Район команди классикăлла кĕрешессипе илнĕ хисеплĕ титула, 1966 çулта çухатнăскере, каялла тавăрчĕ:

4-43636

1969 çулхи республика чемпионĕ пулса тăчĕ. Патăрьелсемпе Шупашкарсем иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсенче.

### *1970 çулта Вăрмарти ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн директорĕнче ĕçленĕ А.БУТАЕВ*

Ачасемпе çамрăксен Вăрмарти спорт шкулне çулталăк каялла йĕркеленĕ.

Халĕ шкулта икĕ уйрăм: ачасем кĕрешессин мелĕсене вĕренеççĕ тата велосипедпа чупма хăнăхаççĕ. Спорт шкулне 120 çамрăк çӳрет. Вĕсене пултаруллă тренерсем – Иван Таратинпа Петр Павлов воспитани параççĕ.

Кавир çинче кĕрешессипе О.Константинов, В.Ушаков, О.Алексеев республикăн пĕрлештернĕ командин составне кĕме пултарчĕç.

Иван Таратин республикăри ăмăртусене темиçе хутчен те хутшăннă, малти призлă вырăнсене çĕнсе илнĕ. Кăçал вăл çур çул хушшинче кăна 8 çамрăка пĕрремĕш разряд, 25 спортсмена виççĕмĕш разряд нормативне пурнăçлама пулăшнă.

Çав çулхине районти ĕçпе юрă уявĕнче кĕрешсе Иван Таратин паттăра юлнă, Измаил Гимадеев иккĕмĕш пулнă.

### *12 çул районти спорт комитетне ертсе пынă М.СЕМЕНОВ (1972 ÇУЛ)*

1972 çулхи июнь уйăхĕ. «Урожай» ирĕклĕ спорт обществăн Тĕп Совечĕ ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе Свердловск хулинче Атăлпа Урал тăрăхĕнчи колхозсемпе совхозсенчи физкультура коллективĕсен зонăри ăмăртăвне ирттернĕ. Çак турнира «Ленинский» совхозри физкультура коллективĕ те хăйĕн командине тăратрĕ. Команда составĕнче – совхозри спорт енĕпе ĕçлекен инструктор-методист И.Алексеев, ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн тренерĕ Н.Таратин тата Канашри педагогика училищинче физкультура уйрăмĕнче вĕренекен И.Таратин. Çавăн пекех çав турнира

районти ял хуçалăх управленийĕнче электрикра ĕçлекен Ю.Ефремов, Вăрмарти сĕтел-пукан фабрикинче тăрăшакан В.Никифоров, районти «Хĕрлĕ ялав» хаçат редакцийĕнче ĕçлекен М.Статьев, Вăрмарти вăтам шкулта вĕренекен А.Герасимов хутшăнчĕç. 48 килограмм таран таякан спортсменсем хушшинче А.Герасимов «Урожай» ирĕклĕ спорт обществăн Тĕп совечĕн чемпионĕ ятне çĕнсе илнĕ. Ăна Дипломпа наградăланă, хаклă парне парса чыс тунă.

Ку ăмăртура Николай Таратин виççĕмĕш вырăн йышăнчĕ. Шăллĕ – Иван Петрович лайăх результат кăтартрĕ. «Ленинский» совхоз команди тăваттăмĕш вырăна тухнă.

***Вăрмарти ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн директорĕ, СССР спорт мастерĕ Н.ПАВЛОВ (1974 çул)***

Ирĕклĕ майпа кĕрешекенсем – Иванпа Николай Таратинсем «Ленинский» совхозра тренер пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем классикăлла кĕрешес енĕпе республикăра пулса иртнĕ ăмăртура республика чемпионĕн ятне çĕнсе илчĕç. Пултаруллă тренерсем хатĕрленĕ В.Веселовский те ирĕклĕ майпа кĕрешессипе республика чемпионĕн ятне çĕнсе илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Николай 68 килограмлă виçере мала тухнă, Ваня шăллĕ 74 килограмм таякансем хушшинче пĕрремĕш вырăн йышăннă. Владимир иккĕмĕш вырăнта пулнă.

***1977–1983 çулсенче «Урожай» ирĕклĕ спорт обществăн Чăваш область Совечĕн председателĕнче ĕçленĕ П.СИДОРОВ***

Вăрмар районĕнчи Кавал ялĕнчи пĕр тăван Таратинсене ВЛКСМ Елчĕк райкомĕн пĕрремĕш секретарĕнче ĕçленĕ чухнех лайăх пĕлетĕп. Вĕсен спортри çитĕнĕвĕсем çинчен Чăваш радиопа панă передачăсенче те тăтăшах итленĕ, хаçат-журналсем çинче те сахал мар вуланă. Иван Петровичпа пĕр çулалла пулнă май, штанга çĕклес

енӗпе ирттернӗ республикӑри ӑмӑртусене час-часах хутшӑнаттӑмӑр, призлӑ вырӑнсене ҫӗнсе илеттӗмӗр. Иван Петрович тата ирӗклӗ майпа кӗрешес енӗпе палӑрса тӑратчӗ. Ҫав енӗпех пиччӗшӗ – Николай, шӑллӗ – Владимир пысӑк ҫитӗнӳсем тӑватчӗҫ.

«Урожай» ирӗклӗ спорт обществин облаҫри Совечӗн председателӗнче ӗҫленӗ чухне вӗсемпе татах та ҫывӑхрах паллашрӑм. Кавала та час-часах пырса ҫӳреттӗм, «Ленинский» совхозра ирттернӗ Акатуйсенче вӗсен пултарулӑхӗнчен тӗлӗнеттӗм.

Кӗрешме Таратинсен йӑхӗнчен 7–8 ҫамрӑк хутшӑнатчӗ. Кашниех хӑйӗн пултарулӑхӗпе тӗлӗнтеретчӗ. Районти Акатуйсенче те вӗсемех ҫӗнтеретчӗҫ. Николай, Иван, Володя пӗрре кӑна мар республика чемпионӗн ятне тивӗҫнӗ.

### *Вӑрмарти ачасемпе ҫамрӑксен спорт шкулӗн директорӗнче ӗҫленӗ пулнӑ А.ФЕДОРОВ (1978 ҫул)*

Спорт шкулне уҫнӑранпа кӗҫех 10 ҫул ҫитет. Ҫак тапхӑрта ҫӗршер ача спортра ҫитӗнӳсем турӗҫ, хӑйсен сывлӑхне ҫирӗплетрӗҫ. Спортпа туслӑ пулни ӗҫре те, вӗренӳре те пысӑк ӳсӗмсем тума пулӑшать. Кунтан вӗренсе тухнӑ ачасенчен чылайӑшӗ аслӑ е ятарлӑ вӑтам пӗлӳ илсе тӗрлӗ вырӑнсенче вӑй хураҫҫӗ. Спорт шкулне уҫнӑранпа эпир пӗр СССР спорт мастерне, спорт мастерӗн вунӑ кандидатне хатӗрленӗ, 100-е яхӑн спортсмен пӗрремӗш разряд нормативне пурнӑҫланӑ.

Пӗтӗм Союзри пысӑк ӑмӑртусенче те пирӗн воспитанниксене  курма пулать. Нумаях пулмасть Украина ССР командине хӳтӗлесе, Юрий Сейфуллин самбо меслечӗпе кӗрешсе СССР Кубокне ҫӗнсе илчӗ. Спорт мастерӗн нормативне тепӗр хут ҫирӗплетрӗ. Александр Ларионов, Владимир Вишнев, Вячеслав Тушинский Ленинградри физкультура иститутӗнче вӗренеҫҫӗ. Вӗсем – хула чемпионӗсем.

Классикӑлла кӗрешессипе те палӑрса тӑраҫҫӗ пирӗн спортсменсем. Нумай ҫул хушши Юрий Ефремов, Нико-

лай Таратин лайăх спортсменсем çитĕнтерчĕç. Вĕсенчен Юрий Григорьев, Юрий Сейфуллин, Анатолий Герасимов, Валерий Веселовский, Иван Таратин нумай хутчен республика чемпионĕсем пулнă. Анатолий Герасимов вара РСФСРти «Урожай» ирĕклĕ спорт обществин зонăри чемпионĕ.

***Философи наукисен докторĕ, профессор, Шупашкарти кооператив институчĕн деканĕ, Чăваш патшалăх премийĕн лауреачĕ, Чăваш халăх поэчĕ Н.ИСМУКОВ***

Спорта ачаранах юратса ӳсрĕм. Пултаруллă спортсменсен çитĕнĕвĕсемпе савăнаттăм, вĕсем пек пулма ĕмĕтленеттĕм. 1962 çулта Свердловскри физкультура техникумне вĕренсе пĕтертĕм. Университетра пĕлĕве малалла ӳстертĕм. Спортри ăсталăха лайăхлатсах пыраттăм. Йĕлтĕрпе чупас енĕпе спорт мастерĕн кандидачĕн нормативне пурнăçларăм. Çӳллĕшне сиксе 1,8 метр планкăна çăмăллăнах парăнтараттăм. Пĕр вăхăт ялти шкулта, Çĕрпӳри ял хуçалăх техникумĕнче физкультура преподавателĕнче ĕçлерĕм. Çав вăхăтра ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе Вăрмарсем пысăк çитĕнӳсем тăватчĕç. Чăвашрадиопа та, республикăри хаçатсенче те Кавалта çуралса ӳснĕ пĕр тăван Таратинсен спортри çитĕнĕвĕсем çинчен пĕлтерсех тăратчĕç. Эпĕ вĕсенчен пĕрне – Иван Петрович Таратина уйрăмах лайăх пĕлетĕп. И.Я.Яковлев ячĕллĕ чăваш патшалăх педагогика институтĕнче физвоспитани уйрăмĕнче ăс пухнă чухне эпĕ философие вĕрентеттĕм. Унăн спортри çитĕнĕвĕсенчен чăннипех тĕлĕнеттĕм, савăнаттăм. Таратинăн спортри çитĕнĕвсем çинчен студентсене каласа параттăм.

Акă пĕр тĕслĕх кăна илсе кăтартам. Патăрьел районĕнчи Кĕçĕн Шăнкăртамри Сабантуй халĕ те куç умĕнчех. Вăрмар каччи Иван Таратин та пынăччĕ унта. Сабантуйăн савăнăçлă пайĕ вĕçленчĕ те спорт мероприятийĕсем пуçланчĕç. Спортăн тĕрлĕ енĕпе ăмăртусем вĕçленчĕç те

ĕнтĕ. Кĕçех чи тыткăнлаканни, кĕрешӳ пуçланмалла. Паттăра юлас текенсем чылаййăн çырăннă списока. Вĕсен хушшинче Иван Таратинăн хушамачĕ те пур. Кĕрешĕве чи çамрăккисем пуçларĕç. Унтан аслăрах çултисем. Акă черет чи йывăр виçеллĕ спортсменсем патне çитрĕ. Пĕри те парăнасшăн мар, кашниех çĕнтересшĕн. Финала вара Патăрьел районĕн чи пултаруллă спортсменĕ, Сабантуйăн икĕ хут абсолютлă чемпион ятне тивĕçнĕ, наци кĕрешĕвĕ енĕпе Раççей спорт мастерĕ, тутарла-пушкăртла кĕрешес енĕпе республика тата Раççей чемпионĕ Абдулла Камалетдинов тата Вăрмар каччи Иван Таратин тухрĕç. Иккĕшĕ те опытлă, чапа тухнă спортсменсем. Чылая тăсăлчĕ ăмăрту. Абдуллана «хăйсен стени» те пулăшаймарĕ. Иван ăна пурпĕрех çурăм çине çаврăнса çапрĕ, паттăра юлчĕ.

Вăрмар районĕнчи Кавал ярмăрккинче те пулса курнă. Унта та Иван Петрович çĕнтерсе паттăра паракан такана нихăçан та аларан вĕçертмен. Çакна çеç калатăп, çивĕч тытăçура çĕнсе илнĕ такасен аш-пăшне ас тивсе пăхма мана пĕрре кăна мар тӳр килнĕ. Çавăншăн савăнатăп кăна.

Иван Петровича эпĕ 28 çул лайăх пĕлетĕп. Чи шанчăклă та çывăх тус вăл маншăн. Паян кунччен унпа туслă çыхăну тытатпăр. Тĕл пулса калаçатпăр, тĕрлĕ ыйтусене сӳтсе яватпăр. Çавăн пек лайăх, ĕçлĕ юлташ пулнишĕн эпĕ савăнатăп, унпа мухтанатăп. Пирĕн туслă çыхăну малашне те çирĕпленсех пырĕ. Унăн Сергей ывăлĕ, ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе Раççей спорт мастерĕ пирĕн патĕнче – кооператив институтĕнче вĕренсе «юриспруденци» специальноçне илчĕ.

Эпĕ вара Таратинсене малашнехи пурнăçра ăнăçусем сунатăп.

## ТАРАТИН Геннадий Петрович



1933 çулхи январĕн 6-мĕшĕнче çуралнă. Ял хуçалăх экономикине тĕреклетессишĕн тăван хуçалăхра 1943 çултан пуçласа 1983 çулччен рабочи, водитель, комбайнер пулса вăй хурать. 1955 çулта вăл демобилизаци йĕркипе салтакран таврăнать. Чунра вăй вĕресе тăрать. Колхозра мĕн чухлĕ ĕç. Комбайнерсем те кирлĕ, тимĕрçĕ лаççинче те ĕç пур. Вăйпитти çамрăк ялти паллă тимĕрçĕне Анатолий Григорьева пулăшма ĕçе кĕрет. Ун чухне тимĕрçĕ хĕрĕх çула çывхарса пырать. Ăна ĕçре пулăшаканĕ, йывăр мăлатукпа ĕçлекен кирлĕ. Çамрăк каччă çава туптама, çурлана çивĕчлетме, лаша урисене таканлама вĕренет. Малтанхи çулсенче йывăç кăмрăкне моторпа вĕртерсе çунтарман, уйрăм сывлăш вĕртерекен механизма алă вăйĕпе ĕçлеттернĕ. Йывăç кăмрăкне чăпта михĕсемпе Мари Республикинчен лашапа турттарнă. А. Григорьев 1978 çулта тивĕçлĕ канăва тухать. Ун хыççăн Гена Таратин тĕп тимĕрçĕ пулса тăрать.

– Тимĕрçĕ ĕçĕнче техника аталанни курăнсах каймасть, тивĕçлĕ канури Анатолий ĕлĕкрех лаша çуни тунă пулсан, юлашки çулсенче трактор çуни ăсталаттăмăр. Çунан тĕп пайĕсене пĕренерен тумалла, çуна тупанĕсене хулăн шинăсем вырнаçтармалла. Станок пулман пирки хулăн тимĕр миçе хут унăн алли витĕр тухман-ши? – ассăн сывласа каласа паратчĕ ветеран. Тивĕçлĕ канăва тухсан та вăл хăй ĕçне пăрахман, 1994 çулччен тимĕрçĕре тăрăшнă.

Гена спортпа та туслă пулнă. Шашкăлла выляма юратнă. Уйрăмах кĕрешессине кăмăлланă вăл, ялти чи пултаруллă спортсменсенчен пĕри шутланнă. Питех те шел, 2010 çулта вăл пирĕнтен уйрăлса кайрĕ.

## ТАРАТИН Юрий Петрович



1937 çулхи майăн 1-мĕшĕнче çуралнă. 1960 çулта автошкулта вĕренсе шофер правине илнĕ. Кавал шкулĕ хыççăн мал ĕмĕтлĕ çамрăка пĕлĕве малалла ÿстерес, аслă Тăван çĕршыва усăллă çын пулас ĕмĕт канăç паман. Урăх хуласене тухса каяс пулсан паспорт кирлĕ-çке. Ку ыйтупа çамрăк каччă ял Советне темиçе хутчен те пынă, анчах унăн ыйтăвне тивĕçтермен. Ял Совечĕн пуçлăхĕсем, çамрăкăн кăмăлне пăсас мар тесе пулĕ, пĕррехинче çапла каланă:

«Таратинсем мĕн авалтанах лайăх кĕрешме пултаракансен йăхĕ. Юрий! Эсĕ мĕнрен катăк вара? Кĕрешсе, çĕнтерсе кăтарт, вара паспортлă пулатăн».

Çак сăмахсем самаях шухăша янă ăна. Пултаруллă спортсмен пулнă май, хăйĕн кĕрешÿри ăсталăхне татах та туптама пуçланă, Кавал ярмăркки çитессе чăтаймасăр кĕтнĕ.

Акă кĕтнĕ кун çитнĕ. Ярмăрккăна халăх йышлăн килнĕ. Юрий те кунтах. Пăлханать хăй. Юлташĕсем ăна хавхалантараççĕ, кĕрешÿре ăнăçусеем сунаççĕ.

Кĕрешÿ хĕрсех пырать. Черет Юрий патне те çитет. Çичĕ çамрăкпа тупăшма тивет унăн. Пурне те çĕнтерет. Çакăн хыççăн тин ăна ял Советĕнче паспорт илме справка çырса параççĕ. Часах вăл паспорт илет те Красноярск крайĕнчи Ачинск хулине тухса каять, шоферта ĕçлеме пуçлать, тăрăшулăх кăтартать. Кунта та хастар пулнипе палăрса тăрать. Тăван ен килех туртать ăна. Яла

таврăнать. Хуçалăхра ĕçлеме сварщиксем кирлĕ. Çак профессие илес тесе Шупашкарти профтехучилищĕне вĕренме кĕрет. Унтан ăнăçлă вĕренсе тухать. «Ленинский» совхоз директорĕ Н.Герасимов ăна ĕçе хаваспах йышăнать. Каярахпа трактор бригадин бригадирĕ пулма уйăрса лартать.

Районти «Хĕрлĕ ялав» хаçат редакторĕн заместителĕ пулнă май колхозсемпе совхозсене тăтăшах тухса çÿреттĕм (Х.А.). «Ленинский» совхозра та пĕрре кăна мар пулнă. 1985-мĕш çулта Юрий Таратинпа тĕл пулни халĕ те асрах-ха. Ун чухне тĕш тырă пухса кĕртмелли техникăна хĕрÿ ĕççи валли мĕнле хатĕрленине тĕрĕслеме рейд бригадине килнĕччĕ.

– Пирĕн совхоз районти чи пысăк хуçалăхсенчен пĕри. Тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсене çулсерен 2200 ытла гектар çинче çитĕнтеретпĕр. Вĕсене пухса кĕртме 66 трактор, груз турттармалли автомашинăсем 22 тата ытти ял хуçалăх техники нумай. Çавсене тухăçлă ĕçлеттересси, хуçалăх экономикине тĕреклетме пулăшасси – манăн тивĕç, – тет Юрий Петрович. Унтан вăл калаçăва малалла тăсать. – Çур акине агротехникăлла чи лайăх вăхăтра тата пысăк пахалăхпа ирттертĕмĕр. Механизаторсем икĕ сменăпа ĕçлесе хăйсен мĕн пур тăрăшулăхне пачĕç. Хĕрÿ ĕççинче техника ванса ларнă тĕслĕхсем пулман. Ахальтен-и, КПСС райкомĕн бюровĕпе райсовет ĕçтăвкомĕ, ял хуçалăх ĕçченĕсен профсоюз райкомĕ тата ВЛКСМ райкомĕн бюровĕ социализмла ăмăртăвĕн тĕп тапхăрĕнче агрегатсем акма çĕр хатĕрлес тата ирхи тĕш тырă культурисем акас енĕпе пирĕн совхозри Петр Николаевич Мучуков механизатор мала тухнă тесе палăртнă. Ун ячĕпе район центрĕнчи Ĕç Мухтавĕн ялавне çĕкленĕ. Механизаторсен çур акинчи хастарлăхĕ çинчен темиçе тĕслĕх те илсе кăтартма пулать. Пурте вĕсем ĕçе чунтан парăннă.

Ял хуçалăх культурисене тухăçлă çитĕнтерессишĕн тата вĕсене йĕркеллĕ пухса кĕртессишĕн кам мĕнле вăй

хунă-ха, çитменлĕхсене пĕтерме ўлĕмрен мĕн тумалла? Çак ыйтусене Кавалти Культура çуртĕнче ирттернĕ механизаторсен пухăвĕнче анлăн сўтсе яврĕç. Канашлăва эпĕ те хутшăннăччĕ (Х.А.). Унта «Кăçалхи уй-хир ĕçĕсен итогĕсем тата механизаторсем умĕнче тăракан задачăсем» çинчен совхоз директорĕ М.Хабибуллин тĕплĕн чарăнса тăчĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче кăçалхи «ĕç паттăрĕсен» ячĕсене ырă асăнчĕ, наянсене питлерĕ, умра тăракан задачăсемпе паллаштарчĕ. Пухăннисене çавăн пекех совхозри профком председателĕ Р.Исаева саламларĕ.

Часах ăмăрту çĕнтерўçисене чыслама пуçларĕç. Акă вĕсем – ĕç паттăрĕсем: Анатолий Ашмарин, Василий Табаков, Николай Ефремов, Петр Мучуков.

А.Ашмарин СК-5 комбайнпа пурĕ 9 пин центнер ытла тырă вырса çапнă. Вăл совхозри комбайнерсем хушшинчи ăмăртура кăна мар, районта та пĕрремĕш вырăн йышăннă. В.Табаков тырă турттарас енĕпе уйрăмах палăрнă. Н.Ефремов механизатор хăмла татнă çĕрте тăрăшулăх кăтартнă. Пурĕ 55,5 тонна «симĕс ылтăн» татнă.

Çак çитĕнўсенче трактор бригадин бригадирĕ Юрий Таратин хăйĕн тўпине те курать. Техникăна яланах юсавлă тытасси унăн тăрăшулăхĕнчен нумай килет-çке-ха.

Мĕн пенсие тухиччченех Юрий Петрович ку должноçра вăй хурать.

## ТАРАТИН Николай Петрович



1943 çулхи февралĕн 2-мĕшĕнче çуралнă. Ялти шкулта 8 класс вĕренсе пĕтернĕ хыççăн комсомол путевкипе Павлодар облаçне ĕçлеме тухса каять. Кунти пĕр совхозра платникре тăрăшать, тырă хумалли складсем тунă çĕрте вăй хурать. Унтан Муром хулинчи пиллĕкмĕш номерлĕ строительствăпа монтаж пуйăсĕ (СМП-5) çинче рабочи пулать. Пĕр вăхăтрах касхи курсра вĕренсе шофер правине илет. Часах Совет Çарне кайма черет çитет. Салтакран демобилизаци йĕркипе таврăнсан тăван «Ленинский» совхозра водительте вăй хурать, спортпа туслашать.

1967–1968 çулсенче Шупашкарти Чапаев ячĕпе хисепленекен заводра ĕçленĕ чухне Николай Петрович ирĕклĕ майпа кĕрешме вĕренекенсен секцине çӳрет. Ăмăртусенче начар мар результатсем кăтартать.

1967 çулта Кавал каччи «Зенит» ирĕклĕ спорт обществи тата заводри профсоюз комитечĕ ирĕклĕ майпа кĕрешсе мала тухассишĕн ирттерекен ăмăртăва пуçласа хутшăнать. Çурма çăмăл виçере кĕрешсе пурне те çĕнтерет, чемпион ятне çĕнсе илет.

Çав çулхине декабрĕн 16–17-мĕшĕсенче ирттернĕ ăмăртура çурма çăмăл виçере ирĕклĕ майпа кĕрешсе Шупашкар хулин чемпионĕ пулса тăрать.

1967–1970 çулсенче «Труд» ирĕклĕ спорт обществин чемпионĕ ята тивĕçет.

1968 çултан пуçласа 1976 çулччен пирĕн ентеш «Уро-

жай» ирĕклĕ спорт обществинче классика тата ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе мала тухассишĕн irttерне тĕрлĕ шайри ăмăртусенче яланах тенĕ пек чемпион ятне çĕнсе илнĕ. Çакна ăна панă грамотăсемпе дипломсем те лайăх çирĕплетеççĕ.

1969 çулхи январь уйăхĕн варринче Патăрьел районĕнчи Жданов ячĕпе хисепленекен колхозăн спорт залĕнче «Урожай» ирĕклĕ спорт обществинче мала тухассишĕн ăмăртусем пулса иртнĕ. Çав ăмăртусене курма тата хамăр спортсменсемшĕн «чирлеме» спорт ветеранĕ И.Алексеев та пынă. Унти тупăшусем çинчен вăл çапла каласа панăччĕ: «Спортсменсем 1969 çулхи чемпион-команда тата чи лайăх спортсмен ята çĕнсе илессишĕн кавир çине ирĕклĕ майпа кĕрешекенсем тухрĕç. «Урожай» общество ирттернĕ республикăри ăмăртусене халиччен нихăçан та çакăн чухлĕ кĕрешӳçĕ хутшăнманччĕ-ха. Вунă районтан пухăннă вунпĕр командăра 86 спортсмен тăван район чысне хӳтĕлерĕç. Классикăпа ирĕклĕ кĕрешĕвĕн çĕнĕ правилисем тăрăх командăра халичченхи пек 8 çын мар, вунă виçери спортсмен-кĕрешӳçĕ пулмалла. Вăрмар районĕн командинче мĕн пурĕ те 7 кĕрешӳçĕ çеç пулчĕ пулин те, вĕсем район чысĕшĕн нумай вăй хучĕç. Пилĕк спортсмен чĕрĕк финала çитиччен, Н.Прокопьевпа В.Захаров çурма финала, И.Гимадеевпа Н.Таратин финала çитиччenех пĕр парăнмасăр кĕрешсе пычĕç. И.Гимадеев, сăмахран, иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ.

Ăмăртусенче уйрăмах пирĕн район представителĕ, Кавал каччи Н.Таратин лайăх результат кăтартрĕ. Вăл курма пынисене кăна мар, халиччен пĕлмен-палламан спортсменсене те, судьясен коллегине те тĕлĕнмеллипех тĕлĕнтерчĕ.

Вунтăватă çынпа кĕрешрĕ Николай. Вĕсенчен вунвиççĕшне çурăм çине лапах вырттарса хучĕ. Акă, юлашкинчен – финал. Кавал каччин Патăрьел паттăрĕпе кĕрешмелле. Аслă судья Н.Семенов куракансене шăпланма ыйтрĕ, унтан судьясен составĕ пĕр шухăш-кăмăллă пулса 86 кĕрешӳçĕрен чи пултарулли, техника майĕсене чи ăста пĕле-

кенни Н.Таратин пулнине палăртни çинчен пĕлтерчĕ.

Патăрьел спортсменĕ те парăнасшăн мар. Вăл Николая хăй халичченхи кĕрешӳсенче усă курман меслетпе (спортсменсем ăна «Вертушка» теççĕ) улталасшăн пулчĕ. Анчах Таратин пурпĕрех çухалса каймарĕ. Хăй тапăнса вылянисĕр пуçне, вăл вăхăтра сыхланма та пултарчĕ.

Кĕрешӳ хĕрсе кайнă самантра куракансем ура çине сике-сике тăрса çухрашма пуçларĕç. Мĕншĕн çав териех хумханаççĕ-ши вĕсем? Камшăн ытлашши пăшăрханаççĕши? Сăлтавне Коля çуратнă иккен. Вăл, Патăрьел спортсменне икĕ уринчен çирĕппĕн ярса илсе, ăна енчен енне çавăркаланă. Часах Вăрмар кĕрешӳçи 11 очко пухма пултарни паллă пулчĕ.

Куракансем çине-çинех кăшкăраççĕ, хăйсен ентешне Таратинран вĕçерĕнсе хăтăлма сĕнеççĕ. Анчах лешĕн вĕсен канашне итлеме вăхăт çук – унăн сыхланмалла, вăйне упрама пĕлмелле. Чăннипех ты йывăр самант. Патăрьел спортсменĕн çăлăнăç кĕтмелли çук.

– Вăхăт! – илтĕнсе каять аслă судьян сасси.

Паттăрсем иккĕшĕ те çур минутлăха кану ирттереççĕ. Каннă хыççăн та Николай хăйĕн хастарлăхне нимĕн чухлĕ те чакармарĕ. Хăйпе кĕрешекенĕн çитменлĕхĕсене вăл лайăх пĕлет ĕнтĕ. Кĕрешĕвĕн тепĕр тапхăрĕ пуçлансан 21 çеккунтран вăл Патăрьел спортсменне çĕнтерет. Шăхлич сасси илтĕнсе каять. Таратин çĕнтернине пĕлтерет ку. Вăрмар спортсменĕ Николай Таратин «Урожай» ирĕклĕ спорт обществин чемпионĕ» ята çĕнсе илчĕ».

1969 çулхи декабрĕн 13–14-мĕшĕсенче Шупашкарта В.И.Чапаев призĕсене çĕнсе илессишĕн РСФСРти облаçсемпе автономиллĕ республикăсенчи командăсем хушшинче ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе ирттернĕ турнирта çăмăл виçере каллех Н.Таратин çĕнтерӳçĕ пулса тăнă.

1970 çулта вăл «Ленинский» совхозри физкультура коллективне ертсе пыма тытăнать.

Шупашкарта В.И.Ленин çуралнăранпа 100 çул тата Чăваш АССРĕ 50 çул çитнине халалласа ирттернĕ Чăваш

Республикин Спартакиадинче 62 килограмлă спортсменсем хушшинче ирĕклĕ майпа кĕрешсе Н.Таратин мала тухнă.

1971 çулхине Вăрмара республикăри спортсмен-кĕрешӳçĕсем пухăнчĕç. Сакăр команда, 60 çын. Ял хуçалăхĕпе хатĕрлев ĕçĕнчи рабочисемпе служащисен профсоюз обкомĕн призне çĕнсе илессишĕн ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен ăмăртăвне ирттерчĕç. Хĕрӳ кĕрешӳре Вăрмар команди çĕнтерчĕ. Иккĕмĕш вырăна – Патăрьелсем, виççĕмĕшне Елчĕксем тухрĕç.

«Ленинский» совхозри пĕр тăван Николайпа Иван Таратинсем тата çамрăк спортсмен А.Павлов пĕрремĕш вырăнсене йышăнчĕç.

– Кавал команди ялти спортсменсен чи лайăх коллективĕсенчен пĕри, – терĕ «Урожай» ирĕклĕ спорт обществин облаçри Совечĕн председателĕ Василий Петрович Мясников. – Унтан тухнă чылай спортсменсене республикăра лайăх пĕлеççĕ. Н.Таратин, акă, кĕрешес енĕпе Чăваш АССР чемпионĕн ятне çĕнсе илнĕ. Кавал спортсменĕсем пĕлтĕр совхозсем хушшинче физкультурăпа массăллă ĕç енĕпе ирттернĕ социализмла ăмăртура мала тухнă.

«Урожай» ирĕклĕ спорт обществин Тĕп Совечĕ Горький хулинче Çурçĕр тата Пĕтĕм Раççейри Центрти зонăри ялти спорт вăййисем ирттернĕ. Çак явапллă ăмăртура çăмăл виçеллисем хушшинче ирĕклĕ майпа кĕрешсе Н.Таратин пĕрремĕш вырăн йышăннă, чемпион ятне çĕнсе илнĕ, СССР спорт мастерĕн кандидачĕн нормативне пурнăçланă.

1972 çулхи июлĕн 22–24-мĕшĕсенче профсоюзсен ирĕклĕ спорт обществисен Пĕтĕм Союзри Совечĕ Свердловск хулинче РСФСРти зонăра ирĕклĕ майпа кĕрешсе мала тухассишĕн колхозсемпе совхозсенчи физкультура коллективĕсем хушшинче ăмăртусем ирттернĕ. Çивĕч кĕрешӳре Николай Таратин виççĕмĕш вырăна тухнă.

1974 çулхи майăн 18–19-мĕшĕсенче Шупашкарта Чăваш Республикин çуллахи VI Спартакиади иртнĕ. Çитĕнсе çитнисем хушшинче классика енĕпе кĕрешсе 68 килограмм таран таякан спортсменсем хушшинче, пурне те çĕнтерсе,

Николай Петрович Таратин каллех чемпион ятне тивĕçет.

– 1976 çулхи март уйăхĕнче ирĕклĕ майпа кĕрешсе «Урожай» ирĕклĕ спорт обществинче мала тухассишĕн Шупашкарта ирттернĕ ăмăртура 68 кг таран таякан спортсменсем хушшинче юлашки хут чемпион ятне çĕнсе илтĕм. Эпĕ ун чухне 32 çултаччĕ, – тулли кăмăлпа аса илет Николай Петрович спортра тунă пысăк утăмсене.

Вĕсемсĕр пуçне ялсенчи тата районти Акатуйсенче çĕнтерсе миçе хутчен чи сумлă парне – така çĕнсе илмен-ши?

1968–1976 çулсенче вăл Вăрмарта, Кавалта çамрăксене ирĕклĕ майпа кĕрешме вĕрентет, спорт инструкторĕ пулать, çамрăк спортсменсем хатĕрлет. Çĕрпӳри совхоз-техникумран вĕренсе тухать, техник-механик специальноçне илет. 1976 çултан пуçласа 2003 çулччен вăл малтан «Ленинский», унтан «Ковали» хуçалăхра механик, тĕп инженер, машинăпа трактор паркĕн пуçлăхĕнче ырми-канми ĕçлет. Тивĕçлĕ канăва тухсан та ĕçсĕр лармасть. Тĕрлĕ ăмăртусене судья пулса хутшăнать. Ӳсекен çамрăк ăрăва кĕрешӳ меслечĕсене вĕрентет.

А.Ф.Федоров ячĕллĕ районти ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн дирекцийĕ спорт шкулĕ 35 çул тултарнă ятпа ирĕклĕ майпа кĕрешессине аталантарма тивĕçлĕ тӳпе хывнăшăн Николай Петрович Таратин спорт ветеранне Дипломпа наградăланă.

Н.Таратинăн воспитанникĕсем паян кун та тĕрлĕ шайри ăмăртусенче хăйсен пултарулăхĕпе палăрса тăраççĕ.

2009 çулта Тольятти хулинче Вячеслав Петрова асăнса ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе Атăлçи федераци округĕн чемпионачĕ иртнĕ. Унта Н.Таратинăн воспитанникĕ, Кавалта çуралса ӳснĕ спорт мастерĕ Оля Иванова та хутшăннă. Çивĕч кĕрешӳре пирĕн ентеш пĕрремĕш вырăн йышăннă. Çак пысăк çитĕнӳсемшĕн Ольăн малтанхи тренерне – Николай Петрович Таратина Тольяттири ирĕклĕ майпа кĕрешекен Федераци Президенчĕ Б.Серов дипломпа наградăланă.

## ТАРАТИН Иван Петрович



1948 çулхи сентябрĕн 12-мĕшĕнче Кавал ялĕнче çуралнă. Шкулта улттăмĕш класра вĕреннĕ чухнех спортпа çывăх туслашать. Спортăн тĕрлĕ енĕпе ăмăртусенче яланах малти вырăнсене йышăнать. Спортшăн хыпса çунакан çамрăк совхозра ирттерекен ярмăрккăри спорт мероприятийĕсене курмасăр пĕрре те юлман. Анчах та кашни ярмăрккăрах кĕрешес енĕпе тутарсем паттăра юлни пачах та килĕшмен ăна. Тутар çамрăкĕсем йышлăн килсе кĕрешсе парнесене пĕтĕмпех илсе кайнипе кам кăмăллă пулĕ? Хамăр çĕр çинчех пире мăшкăлласа хăвараççĕ-çке. Çакна нумайччен чăтса пурăнмалла-и? Тутар республикинчи Зеленодольск районĕнчи Павлин ялĕнчи Мансур Салахов тутар ачи виçĕ хутчен «Ленинский» совхоз чемпионĕ пулни те шухăшлаттарнă ăна. Нивушлĕ тутарсене çĕнтерекен чăвашсем çуралман çĕр çинче. Çакă канăç паман Ивана. Ку тĕллевпех ĕнтĕ ирĕклĕ майпа кĕрешме вĕренет, хăйĕн ăсталăхне туптасах пырать.

«Вăрмарти ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн тренерĕ Юрий Григорьевич Ефремов кĕрешме вĕренмелли секцие çÿрекен çамрăксене Кавала илсе килнĕччĕ. Вăл вĕсемпе кăтартуллă занятисем ирттерчĕ. Çакă ялти çамрăксен кăмălне кайрĕ, вĕсенче кĕрешме вĕренес туйăм çуратрĕ. Çавăн хыççăн эпĕ те Вăрмара çÿреме пуçларăм. Занятисем район центрĕнчи йывăçран тунă Культура çуртĕнче

иртетчĕç. Секцие çырăннисем самаях йышлăччĕ. Республикăра ирттерекен ăмăртусенче вĕсенчен чылайăшĕ призерсен йышне кĕме пултарнăччĕ», – аса илет спортăн малтанхи утăмĕсене Иван Петрович.

1966 çулта Кавалти вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн тĕрлĕ енлĕ аталаннă спортсмен малтан «Ленинский» совхозра вăй хурать. Çăмăл виçеллисем хушшинче штанга çĕклес енĕпе совхоз чемпионĕ пулать.

Салтака кайиччченех ялти пултаруллă спортсмен, Акатуйсенче кĕрешсе темиçе хутчен те паттăра юлнă Юрий Васильевич Покровский тата Николай Васильевич Козырев ертсе пынипе ăмăртусене хутшăнма пуçлать, кĕрешӳ мелне вĕренсе пырать, çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тăвать.

Часах Совет Çарне кайма черет çитет. Тус-тăвансемпе ял-йыш çамрăк каччăна салтака савăнăçлă лару-тăрура ăсатса ярасçĕ. Командирсемпе начальниксен приказĕсене çирĕп пурнăçласа пыма, чăваш ятне çӳлте тытма наказ парасçĕ.



*1966 çул. Арапуçĕнчи Акатуйра паттăра юлнă (сулахайран сылтăмалла): Н.Тимофеев (Арапуç), Ю.Покровский тата И.Таратин (Кавал) кĕрешӳçĕсем.*

Салтакра спортри ăсталăха ӳстерсе пыма условисем пушшех те лайăхрах. Спорт ăмăртăвĕсене тăтăшах хутшăнать. Çар чаçĕн V Спартакиадинче ирĕклĕ майпа кĕрешсе вăтам виçеллĕ спортсменсем хушшинче чемпион ятне çĕнсе илет. Гранатăна инçете ывăтас енĕпе пĕрремĕш вырăн йышăнать. Спортăн ытти енĕсемпе те чăваш каччи ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăрать. Служба вăхăчĕ пĕр сисĕнмесĕрех иртсе каять.

Салтакран çирĕпленсе таврăннă каччăна районта часах асăрхаççĕ. Пĕр вăхăт район центрĕнчи спорт шкулĕн директорĕ, ирĕклĕ майпа кĕрешме вĕрентекен тренер пулса ĕçлет.

Вăл вăхăтра «Урожай» ирĕклĕ спорт обществин спортсменĕсем ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе ытти обществăсем хушшинче яланах малти вырăнсене çĕнсе илнĕ. Республика командин йышĕнче ытларах пирĕн ентешсем – И.Таратин воспитанникĕсем пулнă.

1969 çулта Чăваш Республикин Çут ĕç министерстви ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе шкул ачисен XIII Спартакиадине ирттернĕ. И.Таратин унта судья пулса хутшăннă. Ĕçе лайăх йĕркеленĕшĕн Çут ĕç министерстви ăна Хисеп грамотипе наградăланă.

1970 çулта В.И.Ленин çуралнăранпа 100 çул çитнине халалласа республикăри профсоюзсен çуллахи IV Спартакиадинче ирĕклĕ майпа кĕрешсе 82 килограмм таран таякан спортсменсен хушшинче Кавал каччи Ваня пурне те парăнтарать, чемпион ятне çĕнсе илет.

1971 çулта Канашри педагогика училищин физвоспитани уйрăмне вĕренме кĕрет. Физкультурăпа спорта парăннă яшсемпе хĕрсем пуçтарăннă кунта. Вĕсем хушшинче чи пултаруллисем те пур-çке. Ваня вара ыттисенчен чылай çӳллĕ шайра пулнипе палăрса тăнă. «Спартак» ирĕклĕ спорт обществи ирттернĕ тупăшусенче яланах малти вырăнсене йышăннă. Малтан вăл йĕтрене 10 метр та 37 сантиметра тĕртнĕ пулсан, тепĕр ăмăртура хăйĕн кăтартăвне 10 метр та 81 сантиметра çитерет. Граната ывăтассипе, штанга çĕклессипе, кире пуканĕ йăтассипе хăйĕн

кăтартăвне лайăхлатсах пырать. «Спартак» спорт общеҫстви ҫăмăл атлетика енĕпе мала тухассишĕн Шупашкарта иртттернĕ ăмăртура Канашри педучилище команди ҫĕнтерӳҫĕ ятне тивĕҫет. Педучилище чысне 800х400х200х100 метрлă эстафетăра И.Таратин, И.Осипов, В.Кожанов, В.Борисенок пултаруллăн хӳтĕлеҫҫĕ.

Акă, манăн умра «Спартак» ирĕклĕ спорт обществин 1972 ҫулхи рекордсемпе пысăк ҫитĕнӳсем тунине кăтартакан таблица. Йывăр атлетикăпа рекорд тунисен хушшинче Иван Таратинăн хушамачĕ те пур. Ҫапла вара ҫурма вăтам виҫеллĕ спортсменсем хушшине вăл штангăна карт туртăнса (рывок) 97,5 кг ҫĕклет, кăкăр ҫинчен 120 кг тĕртет. Икĕ упражненире 217,5 кг ҫĕклет, рекорд тăвать.

Ҫуллахи каникул вăхăтĕнче студент килте тăрмăшать. Ҫав вăхăтрах ялсенче тата район центрĕнче ирттерекен Акатуйсенче хăйĕн вăйне тĕрĕслет.

1971 ҫулта район центрĕнчи стадионта Акатуйра паттăра юлассишĕн 20 яхăн ҫамрăк кĕрешнĕ. Акă юлашки тĕл пулусем. Симĕс кавир ҫинче – пĕлтĕрхи чемпион – Кавал каччи Иван Таратин тата Чăрăшҫырма паттăрĕ – Ю.Тимерлев. Нумай вăхăт хушши кĕрешнĕ хыҫҫăн кĕрешӳ никам та ҫĕнтерейменнипе вĕҫленет.

1972 ҫулта сентябрь уйăхĕнче педучилище команди (капитанĕ И.Таратин) ĕҫҫынни депутачĕсен Канаш хула Совечĕ ҫумĕнчи физкультурăпа спорт комитечĕ ҫăмăл атлетика енĕпе пĕрлештернĕ «Коммунизмшăн» хаҫат парнисене ҫĕнсе илессишĕн вĕренӳ заведенийĕсем, вакунсем юсакан, автомобильсем валли саппас пайĕсем туса кăларакан тата электропогрузчиксен завочĕсен производство коллективĕсен командисем хушшинчи ăмăртусене хутшăнать, каллех ҫĕнтерет.

Вĕреннĕ вăхăтра педучилищĕре тĕрлĕрен спорт тата культурăллă-массăллă мероприятисем тăтăшах йĕркеленĕ. Ваня вĕсенчен пĕринчен те пăрăнса юлман. «Атăрха, каччăсем» конкурс халĕ те ун асĕнчех-ха. Ҫав конкурса та вăл ҫĕнтерӳҫĕ ята тивĕҫет.

И.Таратин Канашри педагогика училищинче вӗреннӗ чухне кунти физкультура преподавательне, юниорсем хушшинче 800 метра чупас енӗпе Чӑваш Ен тата Тутар республикин рекордсменне, ҫӑмӑл атлетика тата волейбол енӗпе республикӑра 18 чемпион хатӗрленӗ Равиль Бикчурина уйрӑмах ырӑпа аса илет.

Ҫавӑн чухне ӗнтӗ пирӗн ентеш волейболла выляса 4 хутчен, футболла 2 хут район чемпионӗн ятне тивӗҫет.

– Спортри ҫитӗнӳсемшӗн, мана вӗрентсе ырӑ канашсем нумай панӑшӑн эпӗ хамӑн юратнӑ учителе, «Чӑваш Республикин физкультурӑпа спортӑн тава тивӗҫлӗ учительне» Равиль Мингалиевич Бикчурина чун-чӗререн тав тӑватӑп. Вӑл сывӑ пурнӑҫ йӗркине ҫирӗп тытса пыма, мана спортӑн анлӑ ҫулӗ ҫине тухма нумай пулӑшрӗ. Ҫавӑнтан никӗсленчӗ те ӗнтӗ манӑн спортӑн ҫӑмӑл мар пархатарлӑ та мухтавлӑ кун-ҫулӗ, спортри пӗтӗмӗшле аталану, хускану, ҫирӗп вӑй-хал, – тулли кӑмӑлпа аса илет педучилищӗре вӗреннӗ вӑхӑтсене Иван Петрович Таратин.

Педучилищӗрен вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн пултаруллӑ ҫамрӑка Кавалти вӑтам шкула физкультура учителӗ пулса ӗҫлеме яраҫҫӗ. Училищӗре вӗренсе илнӗ пӗлӳпе практикӑра анлӑн усӑ курма тытӑнать. Ҫавна май шкулти физкультурӑпа спорт аталанӑвӗ ҫӳллӗ шая ҫӗкленет. Шкул команди спортӑн тӗрлӗ енлӗ ӑмӑртӑвӗсенче яланах призлӑ вырӑнсене ҫӗнсе илет. «Ленинский» совхозри физкультура коллективӗпе тачӑ ҫыхӑну тытать. Совхоз команди ҫӑмӑл атлетикӑпа «Советская Чувашия» хаҫат призӗсене ҫӗнсе илессишӗн Шупашкарта ирттернӗ эстафета ӑмӑртӑвӗсенче виҫӗ хутчен ҫӗнтерсе дипломсемпе призсем ҫӗнсе илнӗ. Ҫак ҫитӗнӳре физкультура учителӗн И.Таратинӑн тӳпи уйрӑмах пысӑк пулнӑ.

Кавалти вӑтам шкула вӗренме вӑл вӑхӑтра Кивӗ Вӗренер, Ҫиҫтӗпе, Чӑрӑшҫырма, Пӑвакасси ҫамрӑкӗсем те ҫӳренӗ. Вӗсен хушшинче те пултаруллӑ спортсменсем ӳссе ҫитӗннӗ. Физкультура учителӗ вӗсен спортри кӑтартӑвӗсемпе чӑннипех савӑнать те, мухтанать те. Унӑн вос-

питанникĕ, Çиçтĕпе каччи Николай Вениаминович Гренадерский çăмăл атлетикăпа СССР спорт мастерĕн нормативне пурнăçланă (1981). Вăл Чăваш Республикин тата Тутарстанăн чемпионĕ тата рекордсменĕ. Раççейре мала тухассишĕн ирттернĕ хĕллехи чемпионатра вăл 800 тата 1500 метра чупса кĕмĕл медаль çĕнсе илнĕ.

Çак ялтанах тепĕр пултаруллă спортсменка вĕреннĕ. Маргарита Анатольевна Семенова велосипедпа чупас енĕпе СССР спорт мастерĕ, республикăри хĕрарăмсен командин составĕнче чупса Чăваш Ен тата Раççей чемпионки (1988). 15 километра шоссе çинче 20,70 мин (1985) чупса тухнă, республика рекордне çĕнетнĕ. Çавăн пекех 25 километра командăпа 35.40.16 минутра (1985), 50 километра командăпа 1.08.30 мин. (1989) чупса тухса пысăк çитĕнӳ тунă.

Владимир Рисов (Кавал) ирĕклĕ майпа кĕрешсе Раççей Спартакиадинче иккĕмĕш вырăн йышăннă. Слава Адюков ирĕклĕ майпа кĕрешсе тĕрлĕ шайри ăмăртусенче çĕнтерсе темиçе хутчен призлă вырăнсене çĕнсе илнĕ.

Олег Молокин 10-мĕш класра вĕреннĕ чухнех ирĕклĕ майпа кĕрешсе çитĕнсе çитнисем хушшинче 48 килограмм таран таякан спортсменсене çĕнтерсе республика чемпионĕн ятне тивĕçнĕ. 11-мĕш класра ăс пухнă вăхăтра 52 килограмм таран таякан çамрăксене парăнтарса каллех республика чемпионĕн ятне çĕнсе илнĕ. Республика чемпионĕн ятне икĕ хут тивĕçнĕ спортсменăн ырă енĕсене халĕ ачисем малалла тăсаççĕ, кавир çинче кĕрешсе ашшĕ пекех маттур пулса çитĕнеççĕ.

Паянхи пекех астăватăп: ССР Союзĕ 50 çул тултарнă çулхине «Восход» колхоз ĕçченĕсем хăйсен çурхи уявне – Акатуя чаплăн уявлама хатĕрленчĕç. Шăхальсем хăнана килме кӳршĕ ялсенчи тăванĕсемпе пĕлĕшĕсене кăна мар, Тутар Республикинчи Апастово тата Зеленодольск районĕсенчи хăш-пĕр ялсенчи тутарсене те чĕннĕ. Акатуй пуласси çинчен пĕлтерсе ялсенче пĕлтерӳсем çырса çапрĕç. Çак хыпара Иван Петрович та тахçантанпах кĕтнĕ.

Вăл Шăхале лайăх кăмăл-туйăмпа çитрĕ. Тĕрлĕ енлĕ ăмăртусем вĕçленчĕç те ĕнтĕ. Чи интересли тата вăрăма тăсăлаканни – паттăрсен кĕрешĕвĕ пуçланчĕ.

Ăмăрту судйи П.Павлов кĕрешме кăмăл тăвакансене список çине çырăнма ыйтать. Часах 23 çын çырăнчĕç. Кĕрешÿ малтанах чи çăмăл виçеллисенчен пуçланчĕ. Унтан аслăраххисем тытăçма пуçларĕç. Курма татах та интереслĕрех. Ăста кĕрешеççĕ, пурте тĕреклĕ. Чи явапли, чемпион ятне илессишĕн кĕрешмелли ăмăртусем пуçланаççĕ. Чемпиона кам юлĕ-ши? Самăр такана илме кам тивĕçлĕ пулĕ? Çакă кашнинех кăсăклантарчĕ. Чемпион титулĕшĕн нумайччен кĕрешрĕç. Чи вăйлăраххисем иккĕн юлчĕç. Пĕри – Кавал каччи Иван Таратин, тепри – Тутар республикинчен килнĕ Мансур Салахов. И.Таратина районта чылайăшĕ лайăх пĕлеççĕ. Çакăн пек ăмăртусене вăл кашни çулах хутшăнать, хăйĕн пултарулăхĕпе тĕлĕнтерет. Ахальтен мар ĕнтĕ классика тата ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе республика чемпионĕн ятне темиçе хут çĕнсе илнĕ.

Çивĕч кĕрешÿре пирĕнентеш «тăшмана» пурпĕрех çĕнтерчĕ, çурăм çине çавăрса хучĕ.

– Пултаратăн, Иван Петрович, малашне те маххă ан пар, чăваш ятне çÿлте тыт, – терĕ колхоз председателĕ Анатолий Илларионович Пуклаков паттăрăн аллине çирĕп чăмăртаса.

1973 çул. Колхозсемпе совхозсенче çурхи уй-хир ĕçĕсем вĕçленнĕ ĕнтĕ. Ака-суха ĕçĕсене пĕтĕмлетме хуçалăхсенче тата район центрĕнче кĕçех Ĕçпе юрă тата спорт уявĕсем – Акатуйсем пуçланмалла.

Кĕтнĕ вăхăт çитрĕ. Вăрмар поселокĕнчи стадионта халăх хĕвĕшет кăна. Кашни ялтанах çынсем праçнике нумай килнĕ. Районти «Хĕрлĕ ялав» хаçатра Акатуй пирки çапла çырнă йĕркесем пур: «... *Акă юлашки тытăçу. Вăйлă та пиçĕ кĕлеткеллĕ çамрăк хăйпе кĕрешекене вăйлăн ярса тытрĕ те симĕс курăк çине çавăрса хучĕ. Лешĕ темĕнле тапкалашсан та унăн айĕнчен тухма пултараймарĕ.*



*1972 çул. “Восход” колхоз Акатуйĕнче “Ленинский” совхоз представителĕ И.Таратин кĕрешсе паттăра юлнă. Колхоз правленийĕ ăна чи хисеплĕ парне — така парнеленĕ.*



*1973 çул. И.Таратин районти Акатуй паттăрĕ.*

*– Тĕрĕс, Иван, маттур! – илтĕнчĕç тĕрлĕ енчен ăна саламланă сасăсем. Теприсем вара кӳренӳллĕн мăкăртатса та илчĕç.*

*Çĕнтерӳçĕпе паллаштаратпăр: Кавал каччи Иван Таратин вăл. Канашри педучилищин физкультура уйрăмĕнчен вĕренсе тухнă. Мĕн ачаранах спортпа туслă пулнă. Кăçал вăл ялсенче пулса иртнĕ Акатуйсенче темиçе хутчен те паттăра юлнă».*

«Пĕрремĕш хут паттăра Арапуçĕнчи Акатуйра кĕрешсе 1966 çулта юлтăм. Ун чухне эпир виççĕн: Ю.Покровский (Кавал), Н.Тимофеев (Арапуç) тата эпĕ пĕр-пĕрне ниепле те парăнтараймарăмăр, пурте паттăра юлтăмăр. Пурĕ вара Акатуйсенче кĕрешсе 147 хут паттăра юлтăм, çав шутран 16-шне районти Акатуйсенче», – аса илет Иван Петрович.

1976 çулхи ноябрь уйăхĕнче Патăръел районĕнчи Жданов ячĕпе хисепленекен колхоза кĕрекен Кĕçĕн Шăнкăртам ялĕн культура çуртĕнче тутарла-пушкăртла (наци кĕрешĕвĕ) тупăшассипе ăмăрту пулнă. Ку кĕрешӳ республикăри «Урожай» ирĕклĕ спорт обществинче мала тухассишĕн пынă. Вунпĕр команда хушшинче пирĕн район команди те пулнă. Иккĕмĕш вырăн йышăннă.

– Финалта Патăрьел районĕн чемпионĕпе Камалетдиновпа кĕрешме тиврĕ. Çурăм çине икĕ хутчен çавăрса хутăм пулин те, манăн çĕнтерĕве йышăнмарĕç. Виççĕмĕш хут çавăрса çапсан кăна судья эпĕ çĕнтернĕ тесе пĕлтерчĕ, – каласа парать Иван Петрович.

Кавалти вăтам шкулти физкультура учителĕ, спорт мастерĕн кандидачĕ Иван Таратин ăмăртура пысăк çитĕнӳ тунă. 90 килограмм таран таякан спортсменсемпе кĕрешсе пĕрремĕш вырăна тухнă, наци кĕрешĕвĕ енĕпе спорт мастерĕн нормативне пурнăçланă. «Ленинский» совхозри Григорий Исаев инженер-механик та пĕрремĕш вырăна тивĕçнĕ.

Таратинпа Исаева I степеньлĕ дипломсем тата парнесем панă. Çивĕч кĕрешӳре Анатолий Адюков, Владимир Табаков, Василий Ильин, Вячеслав Адюков, Владимир Степанов, Николай Иванов лайăх результатсем кăтартнă.

Çав уйăхрах Шупашкарта Андриян Николаев космонавтăн призĕсене çĕнсе илессишĕн ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе ăмăрту пулса иртнĕ. Ăмăртăва пирĕн районти спорт шкулĕн Кавалти филиалĕнчи спортсменĕсем хутшăннă.

Шупашкар, Канаш, Хусан, Йошкар-Ола, Хабаровск, Красноярск хулисемпе Дагестан АССРĕнчи тата ытти хуласемпе районсенчен пынă спортсменсем хушшинче çивĕч кĕрешӳ пынă.

62 килограмлă виçере 25 спортсмен вăй виçнĕ. Кавал ялĕнчи Н.Иванов пурне те çĕнтерсе пĕрремĕш вырăн йышăннă.

Кавир çинче 70-90 килограмлă спортсменсем хушшинче те тупăшу интереслĕ иртнĕ. Ку виçере каллех Кавалсем – Валерий Веселовский çĕнтернĕ.

Пирĕн район команди çак пысăк ăмăртура пиллĕкмĕш вырăн йышăннă.

И.Таратин 1970-мĕш çултан пуçласа 1982 çулччен классика тата ирĕклĕ майпа кĕрешессипе «Урожай» ирĕклĕ спорт обществин чемпионĕн ятне тивĕçнĕ.

1970 тата 1980 çулсенче классика тата ирĕклĕ майпа кĕрешсе И.Таратин ултă хутчен республика чемпионĕ пулнă.

И.Таратин кӳршĕри тутар ялĕсенчи Сабантуйсене те тăтăшах тухса çӳренĕ. 1977 çулхи Тутар республикин Нăрлат район центрĕнчи Сабантуя вăл ниепле те манма пултараймасть. Çавăн чухне ĕнтĕ унăн Тутар республикинчи Зеленодольск хулин паттăрĕпе, СССР спорт мастерĕпе Динар Халиловпа кĕрешме тивнĕ. Паттăра юлассишĕн тупăшма 36 çын çырăннă. Вĕсенчен тăваттăшĕ – чăвашсем, ыттисем пурте тутарсем. «Çурма финала тухма 5 çын тăрса юлтăмăр, тăваттăшĕ – чăвашсем, – аса илет Иван Петрович. – Эпĕ ун чухне 76 кг тайнă пулсан, Динар манран йывăртарахчĕ – 90 кг. Финалти тытăçу чылай вăрăма тăсăлчĕ. Ара, паттăра юлассишĕн кĕрешетпĕр-çке. Эпĕ ăна пурпĕрех çурăм çине çаврса хутăм».

Халиччен ку таврара пӗр чӑваш та паттӑра юлни пулман. Иван Таратин вара хӑйӗн пултарулӑхӗпе тутарсене чӑннипех те тӗлӗнтернӗ.

Тепӗр икӗ çултан Нӑрлатри Сабантуйра кӗрешсе вӗсем Тухватуллин тутарпа иккӗшӗ паттӑра юлнӑ.

1970 çулччен районти Акатуйсенче кӗрешсе пӗр чӑваш ачи те паттӑра юлма пултарайман, пӗрмаях тутарсем çӗнтернӗ. Çав çултан кӑна чӑвашсемшӗн «паттӑрлӑх çулӗ» уçӑлнӑ. Акатуйра вӗсем Валерий Никитинпа (Арапуç) каллех паттӑра юлнӑ. Ун чухне тата 1979 çулта Акатуйра кӗрешсе Иван Таратин çӗнтернӗ.

Çав çулхине Вӑрнарта йывӑр атлетикӑпа иртнӗ ӑмӑртӑва халӗ те астӑвать.

– Пӗр кӗтмен çӗртен, çителӗклӗ таран хатӗрленмесӗр тухса кайма лекрӗ çав ӑмӑртӑва. 75 килограмм таран таякан спортсменсемпе тупӑшма тиврӗ. Пурпӗрех çӗнтертӗм. Икӗ упражненире штангӑна 187,5 килограмм çӗклерӗм, – кӑмӑллӑн аса илет Иван Петрович.

Куратпӑр ӗнтӗ, пур енлӗ аталаннӑ спортсмена тепӗр чух ӑмӑртӑва кирлӗ пек хатӗрленмесӗрех ӑнӑçу кӳрет.

Тепӗр çулхине унӑн самбо енӗпе кӗрешсе «Урожай» ирӗклӗ спорт обществинче мала тухассишӗн Шупашкарта иртнернӗ ӑмӑртӑва хутшӑнма тӳр килет. 90 килограмм таран таякан спортсменсем хушшинче каллех çӗнтерӳçӗ пулса тӑрать.

5 км дистанцире йӗлтӗрпе чупса пӗрремӗш вырӑн йышӑннӑшӑн çут ӗç работникӗсем профсоюз райкомӗн грамотине тивӗçет.

Етӗрнере иртнернӗ турист-краеведсен республикӑри VII слетӗнче И.Таратин йӗркеленӗ учитель-туристсен команди пӗрремӗш вырӑна тухнӑ. Пирӗн ентеше вара республикӑри çут ӗç министерстви грамотӑпа наградӑласа чыс тунӑ, санаторие кайма путевка панӑ.

Район шайӗнче иртнернӗ ӑмӑртусенче те вӑл чӑн-чӑн спортсмен пулнине çирӗплетсе панӑ, ыттисемшӗн тӗслӗх пулнӑ. Район центрӗнчи стадионта ГТОн çуллахи норми-

сене нумай енлĕ ăмăртса пурнăçлас енĕпе яланах малти вырăнсене йышăннă.

Пурнăç пĕлĕве куллен ӳстерсе пыма хистет.

«Çамрăкла вĕренмесен ватăлсан вĕренме хĕн вара». Ваттисен çак каларăшне яланах асра тытнă вăл. Пĕлĕве малалла ӳстерес тесе Шупашкарти чăваш патшалăх педагогика институчĕн физвоспитани уйрăмне вĕренме кĕрет 1985 çулта института вĕренсе пĕтерни çинчен алла диплом илет.

Чăваш Республикин Министрсен Совечĕ çумĕнчи физкультурăпа спорт комитечĕ «Ленинский» совхозри производство гимнастикин инструктор-методистне И.П.Таратина яллă вырăнсенче физкультурăпа спорта малалла аталантарма пулăшнăшăн Хисеп грамотипе наградăласа пысăк чыс тунă.

«Урожай» ирĕклĕ спорт обществин районти Совечĕ тата районти çут ĕç пайĕпе вĕрентекенсемпе наука ĕçченĕсен профсоюз райкомĕ шкулта физкультурăпа спорт ĕçне лайăх йĕркеленĕшĕн тата пултаруллă спортсменсем хатĕрленĕшĕн Кавалти вăтам шкулти физкультура учительне Иван Петрович Таратина темиçе хутчен те Хисеп грамотисемпе наградăланă.

«1985 çулта пирĕн ялта кĕрешме вĕренмелли спорт секцийĕ ĕçлетчĕ. Унта ачасем хаваспах çӳретчĕç. Занятисенче Акатуйсенче кĕрешсе пĕрре кăна мар паттăра юлса чапа тухнисем, спорт ветеранĕсем – И.Алексеев, Ю.Покровский, Г.Исаев, Николайпа Юрий, Владимир Таратинсем пулчĕç, çамрăксене кĕрешӳ техникине алла илме вĕрентрĕç.

Пирĕн ялти кĕрешӳçĕсем районта, республикăра пулса иртнĕ ăмăртусене хутшăнса малти вырăнсене йышăннă. Акă республикăра ирĕклĕ майпа кĕрешессипе ăмăрту пулнăччĕ. Унта ялти вăтам шкулта вĕренекенсем тăххăрăн тата Кĕлкешри вăтам шкул учителĕ Ю.Данилов хутшăннăччĕ.

Чи малтанах 62 килограмм виçеллисем ăмăртрĕç. Кунта Ю.Данилов чемпион пулса тăчĕ.Тĕрлĕ виçеллисем хуш-

шинче О.Акчурин – иккĕмĕш, В.Васильев, Н.Кузьмин виççĕмĕш вырăнсене йышăнчĕç.

Командăри В.Кузнецов, Г.Алексеев, И.Адюков, В.Иванов, Ю.Алжиров, М.Кудряшов та хăйсен ăсталăхне кăтартрĕç.

Çапла вара 15 команда хушшинче пирĕн команда иккĕмĕш вырăна тухрĕ. Пĕрремĕш вырăнта – Чăваш ял хуçалăх институчĕн команди.

Каярахпа шкулта ирĕклĕ майпа кĕрешме вĕренессипе секци уçрăмăр. Хамăр шкултах ку енĕпе ăмăртусем часчасах ирттереттĕмĕр. Хăш-пĕр спортсменсем хамăр патĕнче кăна мар, республикăра та палăрса тăратчĕç. 1991 çулта икĕ вĕренекен республика чемпионĕн ятне çĕнсе илнĕччĕ. Пĕри – Олег Молокин 48 килограмм виçеллисенчен, тепри – Сергей Русанов 52 килограмм таран таяканнисем хушшинче.

Сергей Аваков, Анатолий Игнатьев, Владимир Иванов, Сергей Яковлев та яланах республикăри призерсен шутĕнче пулчĕç.

Ирĕклĕ майпа кĕрешме вĕренмелли секцие 40–50 çын çӳретчĕ. «Ленинский» совхоз директорĕ Николай Герасимович Герасимов спортсменсен ĕçĕ-хĕлĕпе интересленсех тăратчĕ. Акатуйсене кайса çӳреме «Волга» автомобиль (кун йышшисем республикăра та нумаях пулман) тата автобус уйăрса паратчĕ. Ăмăртуран таврăннă хыççăн спортсменсемпе тĕл пулса калаçатчĕ, тĕрлĕ майпа хавхалантарма тăрăшатчĕ. Тренировкăсем ирттерме 5 пин тенкĕ тăракан мат илсе пачĕ. Призсемпе, чемпион лентисемпе тивĕçтеретчĕ. Ун хыççăн совхоз директорĕнче ĕçленĕ Ермолай Ермолаевич Иванов та спорта аталантарасси çине пысăк тимлĕх уйăратчĕ. Çавăн пекех «Путь Ильича» колхоз председателĕнче ĕçленĕ Иван Михалович Михайлова ты ырăпа кăна асăнмалла. Вăл колхозри Акатуйсене хутшăнма кашни çулах йыхрав хучĕсем ярса паратчĕ.

Районти спорт комитечĕ пирĕн спортсменсем ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе пысăк çитĕнӳсем тунăшăн мана –

«Ленинский» совхозри спорт инструкторне тата Кавалти вăтам шкул учительне 2 пин тенкĕ парса чыс тунăччĕ. Спортри пултарулăха çапла хаклани пире татах та пысăкрах çитĕнӳсем тума хавхалантаратчĕ», – тулли кăмăлпа каласа парать Иван Петрович.

1991 çул. Вăхăт малаллах шăвать. Иван та 40 çул урлă каçрĕ ĕнтĕ. Апла пулин те пултаруллă спортсмен кĕрешме пăрахма шутламасть-ха. Темиçе çул хушши районти тата ялсенчи Акатуйсенче кĕрешсе паттăра юлни ывăнтарса çитермен ăна. Пушшех урăхла, вăл кĕрешӳ мелĕсемпе вăрттăнлăхĕсене вĕренсе ăсталăхне ӳстерсе пынă. Çав çул район центрĕнчи, Шăхальти, Кивĕ Вĕренерти, Кавалти, Кивĕ Вăрмарти, Арапуçĕнчи Акатуйсенче кĕрешсе вăл пурне те çĕнтернĕ, паттăра юлнă.

Ун хыççăнхи çулсенче вăл хăй кĕрешме пăрахать. Çав вăхăтрах кавир çинче кĕрешме хăйĕн ывăлĕпе тăванĕсене хăнăхтарать, Таратинсен йăхĕнчи кĕрешес пултарулăха çӳлте тытса пыма пулăшать.

1993–1997 çулсенче вăл «Ленинский» совхоз директорĕ. Хуçалăх экономикине тĕреклетессишĕн хăйĕн мĕн пур вăй-халне парать.

1997 çулхи ноябрĕн 15-мĕшĕ халĕ те унăн асĕнчен тухмасть. Çав кун районти Культура çуртĕнче районăн 70 çулхи юбилейне анлăн паллă тунăччĕ. Савăнăçлă пухура доклад тунă хыççăн ĕçре палăрнисене наградăсем пама пуçларĕç. Çавсен хушшинче И.Таратин ятне те асăнчĕç, ăна сцена çине хăпарма чĕнчĕç. «Чăваш Республикин физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят пани çинчен свидетельство тыттарчĕç. Чăваш Республикин Президенчĕ Н.Федоров ăна – ирĕклĕ кĕрешӳ енĕпе аслă тренера – Иван Петрович Таратина вĕрентӳ, шкул ачисене воспитани парас, физкультурăпа спорта аталантарас енĕпе тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн панă.

Пĕр вăхăт вăл халăхăн йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен комбинатра коммерци директорĕ те пулать. Уйрăм

предпринимательте тăрăшать. «Тав-Сервис» тулли мар яваплă обществăра ĕçленĕ вăхăтра ĕçри пысăк çитĕнӳсемшĕн, пултаруллă пулнăшăн администраци ăна Египет, Турци, Араб Эмирачĕ, Тайланд çĕршывĕсене кайса канма путевкăсем уйăрса панă, Тав çырăвĕсем парса хавхалантарнă.

«Тав-Сервис» тулли мар яваплă обществăн руководителĕсем физкультурăпа спорта аталантарасси, сывă пурнăç йĕркине çирĕп тытса пырасси çине пысăк тимлĕх уйăраççĕ. «Сывлăх – пурлăх» текен каларăша вĕсем яланах асра тытаççĕ. Сывă çыннăн ĕçлес хастарлăхĕ те, ĕç тухăçлăхĕ те пысăк. Общество аталанăвĕнче çын факторĕ тĕп вырăн йышăнать. Çакна И.Таратин производствăри кăтартусем лайăхланса пынипе çирĕплетсе парать. Вăл ĕçленĕ «Тав-Сервис» обществăри туслă коллектива, унăн руководителĕсене умри тĕллевсене пурнăçа кĕртессишĕн хастар кĕрешнĕшĕн тав тăвать, малашнехи ĕçре ăнăçусем сунать.

1970 çултан пуçласа 1978 çулччен И.Таратин Раççей шайĕнче иртттернĕ ăмăртусене те тăтăшах хутшăннă, лайăх результатсемпе савăнтарнă. 1976 çулта Смоленскра иртнернĕ РСФСРти халăхсен Спартакиадинче улттăмĕш вырăн йышăннă.

Ирĕклĕ майпа кĕрешсе ултă хут республика чемпионĕ пулнă И.Таратинăн тĕрлĕ организацисемпе обществăсем панă Хисеп грамотисемпе дипломсем темĕн чухлех. Вĕсене вăл хаклă реликви вырăнне хурса упрать.

Ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе пĕр тăван Таратинсен призĕсене çĕнсе илессишĕн турнир ирттересси çирĕп йăлана кĕчĕ. Çак интереслĕ мероприятие йĕркелесе ирттерме вăл çулсерен укçа-тенкĕ нумай уйăрать.

– 1970–1990-мĕш çулсем пĕр тăван Таратинсемшĕн спортри çитĕнӳсем пысăк пулнипе палăрса юлчĕç. Спортри çак ырă йăлана халĕ пирĕн ачасемпе мăнуксем, спортăн анлă çулĕ çине тухма пулăшнă пирĕн воспитанниксем малалла тăсса пыраççĕ, – хăйĕн шухăш-кăмăлне пĕлтерет Иван Петрович Таратин.

1998 çул. Иван Таратиншăн тепĕр паллă пулăмпа асра юлмаллаччĕ. Ветерансем хушшинче ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе Францири Бордо хулинче иртетерекен тĕнче чемпионатне хутшăнмалла пулнă унăн. Унта кайма укçине те тӳлесе хунă ĕнтĕ. Яваплă ăмăртăва хатĕрленсе тренировкăсене çӳллĕ шайра, çирĕп режимпа ирттерме пуçланă вăл. Яланхи пекех, январĕн 24-мĕшĕнче, ирхине тренировкăна тухнă. Физзарядка тунă хыççăн çан-çурăма çирĕплетмелли ытти упражненисем пурнăçланă, 10 çухрăма çуран чупма хатĕрленнĕ. «Инкек куçа курăнса килмест», теççĕ. Пĕр кĕтмен çĕртен Иван Петровичшăн пăтăрмах сиксе тухнă. Унăн пилĕкĕ ыратма пуçланă, урисем хуçине итлеме пăрахнă. Çапла вара вăл йывăр чирпе Шупашкарти больницăра 5 уйăх çурă выртнă. Ăна иккĕмĕш ушкăнри инвалид тесе йышăннă.

Малашлăха, пуласлăха ĕненекен çирĕп чунлă çамрăк йывăр чире парăнтарма тĕллев лартнă. Тĕрлĕрен хусканусем, упражненисем тунă. Тăрăшни сая кайман. Хăрушă чире парăнтарнă-парăнтарнах спорта чунтан парăннă вĕри чĕреллĕ çамрăк. Паян кунта хăйне çирĕп вăй-халлă, ăслăтăнлă туять. Спорт тата ытти мероприятисене активлă хутшăнать, вĕсене йĕркелеме спонсор пулса пулăшать.

– Мана сыватассишĕн кунне-çĕрне пĕлмесĕр тăрăшнă, хăйĕн мĕн пур вăй-халне, пĕлĕвне панă больницăри урологи уйрăмĕн заведующине Геннадий Федорович Шилина, Шашкаров, Н.Ситников врачсене чун-чĕререн тав тăватăп. Çавăн пекех мана ура çине хăвăртрах тăратассишĕн хăйсен пултарулăхне хĕрхенмен медицина ĕçченĕсене, часрах сывалма хавхалантарнă тус-юлташсене тав сăмахĕ калатăп, ĕçре тата пурнăçра ăнăçусем сунатăп, – савăнса каласа парать спорт ветеранĕ Иван Петрович Таратин.

И.Таратин чапа тухнă спортсмен пулнипе пĕрлех, пултаруллă организатор, малашлăха çивĕч курса тăракан чаплă предприниматель те. 2008 çулта Вăрмар поселокĕнче пысăк та капмар, виçĕ хутлă Мега Центр суту-илӳ ком-

плексӗ туса лартрӗ. Кунта вӗсем Сергей ывӑлӗпе халӑха куллен кирлӗ тӗрлӗрен таварсемпе туллин тивӗҫтерме тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫавӑншӑн вӗсене халӑх тав тӑвать.




*"Мега Центр" суту-илӳ комплексӗ*

Виҫӗ хутлӑ суту-илӳ комплексӗнче мӗн кӑна ҫуккӑ-ши? Ҫавӑнпа кунтан халӑх татӑлмасть. Инҫех те мар строительство материалӗсем упранакан пысӑк склад туса лартнӑ. Хуҫалӑхра кирлӗ пулакан пур строительство материалӗсене те тупма пулать. Укҫа ҫеҫ кирлӗ. Суйла кӑна. Туянакан япаласене киле мӗнле илсе ҫитересси пирки шухӑшласа пуҫа ватма кирлӗ мар. Хӑйсен автомашинипе тӳлевсӗрех леҫсе параҫҫӗ. Ҫавӑн пекех ҫынсем хӑйсене кирлӗ ытти япаласем пирки тупса килме заказ пама пултараҫҫӗ. Халӑх ыйтӑвне туллинрех тивӗҫтерес тӗллевпе кӑҫал тепӗр пысӑк склад туса лартрӗҫ. Вӑл та кӗҫех хута кайӗ.

## ТАРАТИН Владимир Петрович



1952 çулхи февралĕн 9-мĕшĕнче Кавалта çуралнă. Шкулта вĕреннĕ чухнех спортпа çывăх туслашать, уйрăмах ирĕклĕ майпа кĕрешессине кăмăллать. Ирĕклĕ майпа кĕрешсе «Ленинский» совхозра мала тухассишĕн irттернĕ ăмăртусенче яланах призерсен шутĕнче пулнă вăл.

1971 çулхи февраль уйăхĕнче район центрĕнче ирĕклĕ майпа кĕрешсе ялти спортсменсем хушшинче республикăра мала тухассишĕн ăмăрту irттернĕ. Хăйĕн виçинче, пурне те çĕнтерсе, Владимир республика чемпионĕн ятне тивĕçет.

Вăл çавăн пекех классика енĕпе кĕрешес енĕпе те республика чемпионĕ.

Кавал шкулĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн районти çар комиссариачĕ çамрăк каччăна ДОСААФ автошкулне вĕренме ярать. Водитель правине илнĕ хыççăн нумаях та вăхăт иртмест, ăна Совет Çарне службăна кайма повестка параççĕ. Ял-йыш, тăванĕсемпе тус-юлташĕсем салтака савăнăçлă лару-тăрура ăсатса яраççĕ, чăваш ятне çӳлте тытма наказ параççĕ. Тольятти хулинчи çар чаçне, авторотăна лекет. Виçĕ çул хушши çар объекчĕсем тунă çĕрте ЗИЛ автомашинăна тухăçлă ĕçлеттерет, ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăрать. 1971-1973 çулсенчи салтак служби сисĕнмесĕрех иртсе каять.

Салтакран вăй-хал енчен çирĕпленсе таврăннă çамрăк каччăна тăван «Ленинский» совхозра кĕтеççĕ. Ара,

автобуспа çӳреме водитель кирлӗ-çке. Вӑл хаваспах килӗшет. Совхозра выльӑх-чӗрлӗх йышлӑ усранӑ, çавӑнпа выльӑхсене хӗл каçарма утӑ-улӑм сахал мар кирлӗ пулнӑ. Совхозри рабочисем выльӑх апачӗ хатӗрлеме Ставрополь облаçне тата ытти çӗре тӑтӑшах кайнӑ. Вӗсене вара унта ӗçлеме атобуспа В.Таратин водитель илсе çӳренӗ.

Салтакран демобилизаци йӗркипе таврӑннӑ хыççӑн çирӗп кӗлеткеллӗскер ӑмӑртусене хутшӑнать, хӑйӗн пултарулӑхне ӳстерсех пырать.

1974 çулхи февраль уйӑхӗнче «Урожай» ирӗклӗ спорт обществин Тӗп Совечӗ Горький облаçӗнчи Дзержинск хулинче нумай енлӗ ӑмӑртса (йӗлтӗрпе чупасси, турник çинче туртӑнасси, тӗл пересси) РСФСРта мала тухассишӗн колхозсемпе совхозсенчи физкультура коллективӗсем хушшинче ӑмӑртусем ирттернӗ. Çивӗч кӗрешӳре Владимир Таратин виççӗмӗш вырӑн йышӑннӑ. Çак ӑмӑрту пирки унта хутшӑннӑ, вӑл вӑхӑтра Кавалти вӑтам шкулта физкультура учителӗнче ӗçленӗ Татьяна Васильевна Ашмарина çапла каласа парать: *«Ленинский» совхоз команди Дзержинск хулинчи тупӑшусенче республика чысне хӳтӗлерӗ. Совхозри ВЛКСМ комитечӗн секретарӗ В.Табаков ертсе пынипе улттӑн тухса кайрӑмӑр. Владимир Таратин хӑйӗн пултарулӑхне чӑннипех те кӑтартрӗ, призерсен шутне кӗчӗ, виççӗмӗш вырӑна тухрӗ. Пур енлӗ аталаннӑ спортсмен районти ӑмӑртусенче те яланах малти вырӑнсене тухатчӗ. Турник çинче туртӑнассипе ӑна çитекенни пулманпа пӗрех. Йӗлтӗрпе чупма та ӑстаччӗ вӑл. Районти «Хӗрлӗ ялав» хаçат призӗсене çӗнсе илессишӗн ирттерекен ӑмӑртусенче те яланах малтисен ретӗнче пулнӑ. Çав çитӗнӳсене Володя Дзержинскра ирттернӗ Раççей шайӗнчи ӑмӑртусенче тепӗр хут çирӗплетсе пачӗ, виççӗмӗш вырӑн йышӑнма пултарчӗ. Совхоз команди те виççӗмӗш вырӑна тухрӗ».*

1975 çулхи мартӑн 15-мӗшӗнче «Урожай» ирӗклӗ спорт обществин районти VIII конференцийӗнче обществӑн районти Совечӗн председателӗ Н.Васильев доклад туса пачӗ.

Вăл çапла каларĕ: «Районти ĕç çыннисем иртнĕ çула хăшпĕр ӳсĕмсемпе вĕçлерĕç. Çак çитĕнӳсемшĕн ялсенчи физкультурниксемпе спортсменсем те сахал мар вăй хунă. Чылай спортсменсем колхоз-совхоз производствине активлă хушăнаççĕ, малти ретре пыраççĕ, ырă тĕслĕх кăтартаççĕ. Сăмахран, «Ленинский» совхозри Владимир Таратин шофер пулса ĕçлет. Пĕрремĕш разрядлă спортсмен вăл. Ĕçре хастар пулма ăна спорта юратни, унпа туслă пулни пулăшать».

В.Таратин хăйĕн пурнăçне ял хуçалăхĕпе çыхăнтарнă. Шофера вĕренсе тухнă. 1970 çултан пуçласа мĕн паян кунччен водительте тăрăшать.

Хăйĕн пĕлĕвне малалла ӳстерес тĕллевпе 1983 çулта Çĕрпӳри ял хуçалăх техникумне вĕренме кĕрет, техник-механик специальноçне илсе унтан ăнăçлă вĕренсе тухать.



*Пĕр тăван Владимир, Иван, Николай Таратинсем.*

## ТАРАТИН Сергей Иванович



1974 çулхи сентябрĕн 17-мĕшĕнче Кавал ялĕнче çуралнă. Мĕн çамрăклах спорта хăнăхса ӳснĕ. «Улми улмуççинчен аякка ӳкмест» тенĕ ваттисен сăмахĕ чăн пулни унăн спортри çитĕнĕвĕсенчен паллă. Сергей те, ашшĕ пекех (Иван Петрович ывăлĕ), пур енлĕ аталаннă спортсмен пулса çитĕнет.

– Кавалти вăтам шкулта виççĕмĕш класра вĕреннĕ чухне спорт пурнăçра кирлине, вăл сывлăха тата вăй-хала çирĕплетме пулăшнине ăнланса илтĕм. Çавăн чухне ĕнтĕ спорт секцине çӳреме пуçларăм, ăсталăха ӳстерсе пытăм, – аса илет шкулта вĕреннĕ вăхăтсене Сергей Иванович.

Çакна мухтанас тесе каламасть вăл. Шкулта вĕреннĕ чухне панă чылай грамотăсемпе дипломсем Сергей çамрăклах спортпа туслă пулнине лайăх çирĕплетсе параççĕ.

Улттăмĕшпе çиччĕмĕш классенче вĕреннĕ чухнех вăл шашкăлла выляс енĕпе шкул чемпионĕ пулнă.

1987 çулта март уйăхĕнче Кавалти вăтам шкул команди ВЛКСМ Канаш хула комитечĕ «Тĕлĕнмелле шашка» клубăн призĕсене çĕнсе илессишĕн ирттернĕ зонăри ăмăртусене хутшăнать. Çивĕч тупăшура Сергей Таратин виççĕмĕш вырăна тухать.

Кавал ялĕнче çитĕнсе çитменнисем хушшинче йĕркеленĕ «Факел» клубра шашка турнирĕсене тăтăшах йĕркеленĕ. Чылай чухне вĕсенче Сергей çĕнтернĕ.

Вăхăт иртсе, çан-çурăм, вăй-хал тĕрекленсе пынă май, малашлăха ăнтăлакан, шкулта ăс пухакан çамрăк, ашшĕ-

нчен тĕслĕх илсе, ирĕклĕ майпа кĕрешессине ытларах кăмăллама пуçлать. Кĕрешме вĕренекенсен секци занятийĕсене пĕр сиктермесĕр çӳрет, кĕрешӳ мелĕсене, вăрттăнлăхĕсене вĕренет, ăсталăха ӳстерсе пырать.

Тăван «Ленинский» совхозра ирĕклĕ майпа кĕрешсе мала тухассишĕн ирттерекен уçă чемпионатсенче, хăйĕн виçинче, çулсерен чемпион ятне çĕнсе илет.

1988 çулхи декабрь уйăхĕнче Шупашкарти Чапаев ячĕпе хисепленекен производство пĕрлешĕвĕн спорт керменĕнче В.И.Чапаев ячĕллĕ приза çĕнсе илессишĕн ирĕклĕ майпа кĕрешекенсем ăмăртнă. Çакăн пек пысăк ăмăртăва Кавал çамрăкĕ пĕрремĕш хут хутшăнать. Апла пулин те çухалса каймасть. Хăйĕн мĕн пур вăй-халне парать, ăсталăхĕпе тĕлĕнтерет. Ăмăртăва Горький, Ульяновск, Арзамас облаçĕсенчи тата Чăваш АССРĕнчи çамрăксен командисем хутшăннă. Çивĕч кĕрешӳре Кавалти вăтам шкулта вĕренекен Сергей Таратин тата Юрий Яковлев виççĕмĕш вырăнсене йышăннă. Çак шкултах вĕренекен Андрей Семенов, Сергей Адюков, Сергей Русанов, ДОСААФ автошкулĕн курсанчĕ Юрий Смирнов лайăх результатсем кăтартнă.

Спортри ăсталăха ӳстерсе пыракан çамрăк республика тата район чысне Хусанта, Шупашкарта, Канашра, Красноармейски районĕнче тата ытти çĕрте ирттернĕ ăмăртусенче пултаруллă хӳтĕленĕ, призерсен ретне кĕме тивĕçлĕ пулнă.

1989 çулхи январĕн 6–8-мĕшĕсенче Шупашкарта ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕсенче вĕренекенсем хушшинче ирĕклĕ майпа кĕрешсе республикăра мала тухассишĕн ăмăрту ирттернĕ. Ăна профсоюзсен облаçри Совечĕ йĕркеленĕ. 44 килограмм таран таякан спортсменсем хушшинче Сергей Таратин, пурне те çĕнтерсе, чемпион ятне çĕнсе илет. Ун чухне вăл саккăрмĕш класра вĕреннĕ пулнă.

Март уйăхĕнче Шупашкарта профсоюзсен облаçри Совечĕ ирĕклĕ майпа кĕрешсе вĕрентӳпе тренировка ушкăнĕсем хушшинче мала тухассишĕн каллех ăмăрту ирт-

тернĕ. 47 килограмм таран таякан спортсменсем хушшинче Сергей иккĕмĕш вырăн йышăннă.

Умра – явапллă ăмăртусем. 1990 çулхи январĕн 7–9-мĕшĕсенче Шупашкарта иртекен тупăшусене хатĕрленмелле. Ăна профсоюзсен республикăри Совечĕ йĕркелет. Кун хутĕнче те Сергей чăн-чăн пултаруллă спортсмен пулнине çирĕплетсе парать. 1973–1974 çулсенче çуралнă, 52 килограмм таран таякан спортсменсем хушшинче пĕрремĕш вырăн йышăнать. Ăна I степеньлĕ дипломпа наградăлаççĕ.

Апрель уйăхĕн пуçламăшĕнче ВЛКСМ Красноармейски райкомĕ ирĕклĕ майпа кĕрешсе В.Кацов воин-интернационалист призĕсене çĕнсе илессишĕн ăмăрту ирттернĕ. 54 килограма яхăн таякан спортсменсене пурне те парăнтарса вăл пĕрремĕш степеньлĕ диплома тата парнене çĕнсе илет. Вăл çавăн пекех «Техника енчен чи лайăх кĕрешекен» ята тивĕçет.

Тепĕр темиçе кунтанах унăн профсоюзсен облаçри Совечĕ ирĕклĕ майпа кĕрешсе республикăра мала тухассишĕн Шупашкарта ирттерекен ăмăртăва тухса каймалла. Çакă ăна нимĕн чухлĕ те хăратмасть. Кун пек тупăшусене пĕрре кăна мар хутшăннă вăл. 50 кг таран таякан çамрăксем хушшинче иккĕмĕш вырăна тухать.

Районти шкулсенче вĕренекенсем хушшинче кире пуканĕ йăтассипе Вăрмар поселокĕнче ирттернĕ ăмăртура 50 килограмм таран таякан çамрăксем хушшинче иккĕмĕш вырăн йышăнать.

Вĕренӳ çулĕ те вĕçленсе килет ĕнтĕ. Умра – 11-мĕш классенчен вĕренсе тухакан, çара кайма хатĕрленекен арçын ачасен çар вĕрентĕвĕн сборĕ. Кунта та Сергей ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăрать. Гранатăна 41 метр инçĕшне ывăтса пĕрремĕш вырăн йышăнать, районти вĕренӳ пайĕн грамотине тивĕçет.

1991 çулта шкултан лайăх паллăсемпе тарăн пĕлӳ илсе вĕренсе тухать. Шкулта илнĕ вăтам пĕлӳ çеç çырлахтармасть ăна. Çамрăк каччă Шупашкарти ял хуçалăх



*1996 çул. Районти Акатуй паттăрĕ С.Таратин.*

академине, агрономи факультетне вĕренме кĕрет. Тарăн пĕлӳ илме тăрăшнипе пĕрлех спорта та пăрахмасть, ăсталăха куллен туптаса пырать.

1992 çулхи сентябрĕн 14-мĕшĕнче Шупашкарта граждан вăрçин геройĕн В.И.Чапаев призĕсене çĕнсе илессишĕн Пĕтĕм Раççейри турнир иртнĕ. Çавăн чухне ĕнтĕ вăл Раççей спорт мастерĕн нормине пурнăçлать.

Çакна палăртмалла: С.Таратин районти тата колхозсемпе совхозсенче ирттернĕ Акатуйсенчи спорт мероприятийĕсене тăтăшах хутшăннă, тĕрлĕ енлĕ ăмăртса призлă вырăнсене çĕнсе илнĕ.

1996 çулхи июнь уйăхĕнче район центрĕнчи стадионта ирттернĕ ĕçпе юрă тата спорт уявĕ – Акатуй халĕ те куç умĕнчех-ха. Уявăн савăнăçлă пайĕ вĕçленчĕ те спорт мероприятийĕсем пуçланчĕç. Халăх кĕрешӳ пынă вырăна пухăнчĕ. Йăлана кĕнĕ йĕркепе ăна чи çамрăккисем пуçларĕç. Часах 65 килограмлă виçеллĕ çамрăксем кĕрешме тытăнчĕç. Вĕсен хушшинче паттăра юлассишĕн çивĕч

тытăçу пулса иртрĕ. Ăмăртăва Кавалсемпе Мăнçырма какчисем тĕплĕн хатĕрленни палăрчĕ. Çавăнпах ĕнтĕ Сергей Таратин паттăра юлчĕ. Мăнçырмасем С.Егоровпа С.Левин иккĕмĕшпе виççĕмĕш пулчĕç.

С.Таратин Раççей пĕлтерĕшлĕ ăмăртусене те тăтăшах хутшăннă, призлă вырăнсене çĕнсе илнĕ.

Чăваш ял хуçалăх академийĕнчен вĕренсе тухсанах ăна çара илеççĕ. 1996–1997 çулсенче Сывлăш-Çар Вăйĕсен Армин Тĕп спорт клубĕнче (ЦСКА) службăра тăрать.

1997–2001 çулсенче Шалти ĕçсен органĕсенче тăрăшать.

1998–2000 çулсенче Шупашкарти кооператив институтĕнче заочно вĕренсе иккĕмĕш аслă пĕлӳ, «юриспруденци» специальноçне илет.

Сергей Иванович Таратин 2001 çултанпа уйрăм предприниматель. Вăл Вăрмар поселокне илем кӳрекен, район центрĕнче туса лартнă виçĕ хутлă капмар «Мега Центр» суту-илӳ комплексĕн генеральнăй директорĕ.

## ТАРАТИН Петр Николаевич



Чăваш Республикинчи Вăрмар районĕнчи Кавал ялĕнче 1970 çулхи июлĕн 23-мĕшĕнче çуралнă. Ялти вăтам шкултан вĕреннĕ чухнех спортпа туслă пулнă. Йĕлтĕрпе чупнă, шашка-шахматла, волейболла, футболла вылянă, турник çинче туртăннă. 11-мĕш класра вĕреннĕ чухне автомобильпе чупма вĕреннĕ, шкулта ăс пухнă чухнех водитель правине илнĕ. Çакă ăна салтакра та кирлĕ пулнă. Салтака Туркмени республикине лекет. Шанса панă техникăна икĕ çул тухăçлă ĕçлеттерет. Командирсемпе начальниксен приказĕсене çирĕп пурнăçласа пырать, чăваш ятне çӳлте тытать. Служба срокĕ сисĕнмесĕрех иртсе каять. Демобилизаци йĕркипе тăван киле таврăнать. Салтакран çирĕпленсе таврăннă çамрăк каччăн аллисем мирлĕ пурнăçри ĕçсĕр тунсăхласа çитнĕ. Совхоз руководителĕсем ăна бензин турттармалли автомашина çирĕплетсе параççĕ. Хуçалăхра бензинсăр пĕр ĕç те пула пĕлмест, ара, автомашинăна унсăр чуптараймастăн-çке. Хуçалăхри цистернăсене бензинпа вăхăтра тултарас тесе ырми-канми тăрăшать. Çур аки тата тыр-пул пухса кĕртесси унран нумай килнине тĕрĕс ăнланать вăл. Çавăнпа техникăна яланах юсавлă тытма тăрăшать. Мĕн совхоз саланса кайиччenех автомашинăпа ĕçлет вăл.

Хальхи вăхăтра тĕрлĕ ĕçсем тăвать: çынсене шыв кĕртсе парать, ытти ĕçсем пурнăçлать. «Аллисем ылтăн унăн», – тет ял-йыш Петр Николаевич пирки. Çавăн пекех ĕçлеме Мускава та çӳрет.

## ТАРАТИН Руслан Николаевич



1976 çулта Кавал ялĕнче çуралнă. Шкулта вĕреннĕ чухнех спортпа туслă пулнă. Ялти вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн пĕлĕве малалла Шупашкарти энергетика техникумĕнче тăснă. Техникума 1991 çулта вĕренме кĕрет те 1994 çулта вĕренсе тухать.

Ирĕклĕ майпа кĕрешсе «Ленинский» совхозра мала тухассишĕн йĕркелекен ăмăртусене кашни çулах хутшăнать, малти вырăнсене çĕнсе илет. 44 килограмм таран таякан спортсменсем хушшинче вăл совхоз чемпионĕ пулса тăрать, 51 килограмм таран таяканнисем хушшинче иккĕмĕш вырăн йышăнать.

1990 çулхи январь уйăхĕнче профсоюзсен область Совечĕ 1975–1976 çулсенче çуралнисем хушшинче ирĕклĕ майпа кĕрешсе ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕсенче вĕренекенсем хушшинче мала тухассишĕн Шупашкарта ирттернĕ ăмăртусенче 41 килограмм таран таякан спортсменсемпе тупăшса Руслан Таратин иккĕмĕш вырăна тухать.

Апрель уйăхĕнче ВЛКСМ Красноармейски райкомĕ В.Кацов воин-интернационалиста асăнса ирттернĕ тупăшура 44 килограмм таран таякан çамрăксем хушшинче пурне те çĕнтерсе Руслан чемпион ятне çĕнсе илет.

Вăрмарти ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ кире пуканĕ йăтас енĕпе шкул ачисем хушшинче районта мала тухассишĕн ирттернĕ ăмăртура 60 килограмм таран таякан спортсменсем хушшинче иккĕмĕш вырăна тухать.

1994 çулта наци кĕрешĕвĕ енĕпе районта мала тухас-

сишĕн ирттернĕ тупăшура 65 килограмм таран таякан спортсменсем хушшинче унăн виççĕмĕш вырăнпа килĕшме тивет.

Энергетика техникумĕнче вĕреннĕ чухне спорт мероприятийĕсене тăтăшах хутшăнать, пултаруллă спортсмен пулнипе палăрса тăрать.

«Спартак» спорт обществи йывăрăшне çĕклес енĕпе ирттернĕ ăмăртура 60 килограмм таякан атлетсем хушшинче икĕ енлĕ ăмăртса, 215 килограмм çĕклесе иккĕмĕш вырăн йышăнать. Çăмăл атлетика енĕпе кĕркуннехи кросра 1000 метрлă дистанцире виççĕмĕш вырăна тухать.

Пур енлĕ аталаннă спортсмен 1995 çулта И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн физкультура факультетне вĕренме кĕрет. Кунта спортри ăсталăха ўстерме майсем пушшех те лайăх. Ăмăртусене тăтăшах хутшăнать, çĕнĕрен те çĕнĕ çитĕнўсем тăвать.

1996 çулхи декабрь уйăхĕнче тутарла-пушкăртла кĕрешес енĕпе рспубликăра мала тухассишĕн Шупашкарта ирттернĕ уçă чемпионатра Руслан Таратин студент 60 килограмм таран таякан спортсменсем хушшинче пĕрремĕш вырăн йышăнать, чемпион ятне çĕнсе илет, Раççей спорт мастерĕн кандидачĕн нормативне пурнăçлать.

2000 çулта педагогика институтĕнчен вĕренсе тухать те Кавалти вăтам шкулта физкультура учителĕнче ĕçлеме пуçлать. Шкулта вĕренекенсене спорта юратма хăнăхтарать. Унăн воспитанникĕсенчен чылайăшĕ халĕ тĕрлĕ ăмăртусенче пысăк ăсталăх кăтартаççĕ. Руслан Николаевич ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе ирттерекен ăмăртусене судья пулса хутшăнать.

2009 çулхи апрель уйăхĕнче Вăрнарта район депутачĕсен Пухăвĕн депутачĕн А.Петровăн тата РФ Аслă сучĕн судйин В.Яковлевăн призĕсене çĕнсе илессишĕн çамрăксем хушшинче самбо енĕпе кĕрешессипе ирттернĕ турнира Кавалсем те хутшăннă. Руслан Таратин тренер хатĕрленĕ А.Ширеева 34 килограмлă виçере, А.Таратина 50 килограмлисем хушшинче виççĕмĕш вырăнсене йышăннă.

## ТАРАТИН Алексей Владимирович



1977 çулхи сентябрĕн 27-мĕшĕнче Чăваш Республикинчи Вăрмар районĕнчи Кавал ялĕнче çуралнă. 1994 çулта Кавалти вăтам шкултан вĕренсе тухнă. Ун хыççăн Вăрмарти ДОСААФ автошкулĕнче вĕренсе водитель правине илет. Ирĕклĕ майпа кĕрешме вĕренмелли секцин занятийĕсене пĕр сиктермесĕр çӳрет, спортри ăсталăха ӳстерсех пырать.

1995 çулта Чăваш ял хуçалăх институтне вĕренме кĕрет. Студент çулĕсенче пултаруллă тренер, бокс енĕпе СССР тава тивĕçлĕ спорт мастерĕ, Европа чемпионачĕн призерĕ, тĕнче чемпионĕ В.Львов патĕнче боксла кĕрешме вĕренет, ăмăртусене тăтăшах хутшăнать, лайăх результатсем кăтартать. Юниорсем хушшинче республика чемпионĕ пулать. Шашкăлла выляс енĕпе иккĕмĕш вырăна тивĕçет.

2000 çулта Чăваш ял хуçалăх академийĕнчен ăнăçлă вĕренсе тухать.

А.В.Таратин уйрăм предприниматель пулнă май, Шупашкар хулинче темиçе маршрутпа çӳрекен таксисен ĕçне йĕркелесе тăрать.

## ТАРАТИН Андрей Владимирович



1979 çулхи мартăн 17-мĕшĕнче Чăваш Республикинчи Вăрмар районĕнчи Кавал ялĕнче çуралнă.

1996 çулта Кавалти вăтам шкултан вĕренсе тухать. Ун хыççăн 1996–1998 çулсенче Раççей Федерацийĕн Шалти ĕçсен министерствин юридици институчĕн Шупашкарти филиалĕнче вĕренет. Ăс пухнă вăхăтрах ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе республикăри Шалти ĕçсен министерствинче ĕçлекен сотрудниксем хушшинче мала тухассишĕн ирттернĕ ăмăртусене тăтăшах хутшăннă, призлă вырăнсене çĕнсе илнĕ. Çавăн пекех шашкălла выляма кăмăллана. Республикăри чемпионатра юниорсем хушшинче призлă вырăнсене йышăннă. Раççей чемпионатне хутшăнма тивĕçлĕ пулнă.

1998 çулта Чăваш Республикинчи Шалти ĕçсен министерствин патшалăх автоинспекцийĕнче (ГАИ) ĕçлеме пуçлать. 1998–2001 çулсенче РФ Шалти ĕçсен министерствин юридици институчĕн Шупашкарти филиалĕнче заочно вĕренет. 2001 çулта юриспруденци специальноçпе аслă пĕлӳ илни çинчен диплома тивĕçет.

2004 çултанпа Чăваш Республикин Шалти ĕçсен министерствин ГИБДД çулпа паруль службин (ДПС) полкĕн пĕрремĕш батальонри взвод командирĕ.

# ĂСТАЛĂХ КĔРЕШӲРЕ ТУПТАНАТЬ

1969 çулта Вăрмар поселокĕнче ачасемпе çамрăксен спорт шкулне уçма йышăннине шкулта вĕренекенсем пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. Мĕнле секцисем уçăласса чăтаймасăр кĕтрĕç. Çĕнĕ шкулта малтанах кĕрешӳ меслечĕсене вĕренмелли тата велосипедпа чупма хăнăхмалли уйрăмсем уçрĕç.

Спорт шкулне уçнăранпа нумаях та вăхăт иртмерĕ пултаруллă спортсменсем хатĕрлеме ĕлкĕрнĕ те.

Мартăн саккăрмĕшĕнчен пуçласа вуннăмĕшĕччен Вăрмарти вăтам шкулăн спорт залĕнче классика енĕпе кĕрешсе республика чемпионĕн ятне çĕнсе илессишĕн пыракан ăмăртусем пулса иртрĕç. Ку вăл – шкулсенче вĕренекен çамрăксен пирвайхи ăмăртăвĕ.

Çак ăмăртура пирĕн районти çамрăк кĕрешӳçĕсем пултаруллăрах, тӳсĕмлĕрех пулнине, тренировкăсенче ăмăртăва тĕплĕн хатĕрленнине кăтартрĕç. Çамрăксем Н.Таратин тренер ертсе пынипе кĕрешӳ техникипе тактикине лайăх вĕренни судьясен коллегине те савăнтарчĕ.

Классика кĕрешекенсен ăмăртăвĕ халиччен паллă пулман çамрăк спортсменсене тата вĕсемпе ĕçлессине лайăхлатмалли майсене уçса палăртрĕ. Вĕсем 9 виçе категорийĕнчен пиллĕкĕшĕнче кĕрешсе «ылтăнсене» çĕнсе илчĕç.

Пирĕн çамрăк спортсменсем кĕрешĕвĕн малтанхи кунĕнчех республика чемпионĕ ятне илмелли йывăр та тумхахлă çула хывма тытăнчĕç. Ытти кунсенче те çак çăмăл мар çулпа, чăрмавсене паттăррăн çĕнтерсе, мухтавлăн утса пычĕç, малтанхи кун тунă çитĕнӳсене çирĕплетме пултарчĕç. Вăрмар кĕрешӳçисенчен пиллĕкĕшĕ финала çитсе унтан та çĕнтерӳçĕсем пулса тухрĕç.

Итогсем çапла: ăмăртăва республикăри 64 кĕрешӳçĕ хутшăнчĕ. Вунулттăшĕ – Вăрмарсем. Малти вырăнсене вара 11 çамрăк йышăнчĕç. Вăрмар районĕн команди пĕрремĕш вырăна çĕнсе илчĕ. Иккĕмĕш вырăнта – Шупашкар районĕн, виççĕмĕшĕнче – Вăрмар районĕн иккĕмĕш команди.

Район чысне хӳтĕлекенсен шутĕнче эпир В.Николаева (48 кг), А.Егорова (56 кг), Г.Васильева (60 кг), С.Ильина (70 кг) тата Ю.Григорьева (75 кг) куратпăр. Вĕсем – хăйсен виçе категорийĕнче çĕнтернĕ спортсменсем, 1969 çулхи республика чемпионĕсем.

1971 çулхи февраль уйăхĕнче Вăрмар поселокĕнче республикăри ялти спортсменсем ирĕклĕ майпа кĕрешсе ăмăртнă. Тупăшăва Вăрнар, Комсомольски, Шупашкар тата Вăрмар районĕсен спортсменĕсем хутшăннă. Çивĕч кĕрешӳре пирĕн район команди – пĕрремĕш, Вăрнарсем – иккĕмĕш, Шупашкар районĕн команди виççĕмĕш вырăнсене йышăннă. Çапла вара пирĕн район команди республикăри «Урожай» ирĕклĕ спорт обществин кубокне çĕнсе илнĕ. Уйрăм виçеллĕ спортсменсенчен çаксем малти вырăнсене тухнă: В.Гаврилов (Шупашкар районĕ), пĕр тăван Владимир, Иван, Николай Таратинсем, В.Николаев, Н.Яковлев, В.Зайцев (пурте Вăрмар районĕнчен). Куракансене уйрăмах Таратинсем кĕрешни килĕшнĕ.

1972 çулта «Урожай» ирĕклĕ спорт обществин Тĕп Совечĕ Свердловск хулинче ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен зонăри ăмăртăвне ирттернĕ. Çав ăмăртуран Анатолий Герасимов чемпион пулса таврăнчĕ.

С.Александров ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе республикăри шкул ачисем хушшинче çĕнтерчĕ.

Çĕнĕ Шупашкарта çамрăксем хушшинче ирттернĕ ăмăртура Вăрмарти спорт шкулĕнчи кĕрешекенсен команди тăваттăмĕш вырăна тухнă.

Малтанхи çулсенче Кавалта йĕркеленĕ секцие (тренерĕ Н.Таратин) ялти спортсменсем кăна мар, кӳршĕллĕ Тутар республикинчи Ечел тата Йăвăнчă ялĕсенчен те çӳренĕ. Чылай çамрăксем кĕрешӳ мелĕсене аван вĕренсе çитнĕ. Акă ăçта вăл интернационалла туслăх. Кавир çинче тутарпа чăваш каччисем хушшинчи тытăçусем пĕрпĕрне хисепленĕ туйăмпа иртеççĕ.

– Тренировкăсене малашне те йĕркеллĕ ирттерсен, пĕр-ик çултан пире вĕсем чаплă результатсемпе савăн-

тарĕç-ха...– тенĕччĕ мана вăл вăхăтра спорт шкулĕн директорĕнче ĕçленĕ Петр Павлович Павлов.

Çак сăмахсем тĕле килнине паян эпир хамăр куçпа курса ĕненетпĕр, савăнатпăр. Çулсерен пултаруллăран та пултаруллă спортсменсем ӳссе çитĕнеççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ спорт шкулĕнчи ирĕклĕ майпа кĕрешекенсем 1973-мĕш çултах Брянск хулинче ирттернĕ Пĕтĕм Раççейри ăмăртăва хутшăнма тивĕçлĕ пулчĕç.

– Брянска тухса кайиччен республикăри çамрăксем хушшинче ăмăрту ирттерер. Çамрăксем кĕрешӳ меслетне ытларах вĕренĕç,– сĕнӳ пачĕç шкул руководителĕсем «Урожай» ирĕклĕ спорт обществин облаçри советĕнче ĕçлекенсене. Вара 1973 çулхи февралĕн 10–11- мĕшĕсенче Вăрмарти Культура çуртĕнче çамрăксем хушшинче ирĕклĕ майпа кĕрешсе республикăра мала тухассишĕн ăмăртусем пулса иртрĕç. Ăмăртăва Шупашкар, Çĕрпӳ, Елчĕк, Канаш, Патăрьел районĕсен командисем хутшăнчĕç. Вăрмар тата Патăрьел районĕсем икшер команда тăратрĕç. Ăмăртăва тĕрлĕ виçеллĕ спортсменсем 86 çын хутшăнчĕ.

Спортсменсем хывăнмалли пӳлĕмрен тухаççĕ те пĕр рете йĕркеленсе тăраççĕ. Ăмăрту курма пынисем вĕсене алă çупса ăшшăн кĕтсе илеççĕ. Вĕсене «Урожай» ирĕклĕ спорт обществин республикăри Совечĕн представителĕ М.Кубенев, Вăрмар райсовет ĕçтăвкомĕ çумĕнчи физкультурăпа спорт комитечĕн председателĕ М.Семенов тата ыттисем саламлаççĕ.

Кăшт тăхтасан ăмăртусем пуçланчĕç. Кашниех çĕнтерессишĕн, финалти ăмăртăва лекессишĕн тăрăшать. Ăмăртăвăн малтанхи кунĕнче кĕрешекенсем нумай пулнипе хăшĕсем пĕрремĕш «тăшманĕсене» парăнтараймасăр çак кĕрешӳрен, кирлĕ таран очко пухаймасăр, тухатуха ӳкрĕç, хăшĕсен, пĕрремĕш «тăшманĕсене» çĕнтерсе, темиçе хутчен те ыттисемпе кĕрешĕве тухма тиврĕ. Малтанхи тытăçусенчех Вăрмарсем кĕрешӳ мелĕсене тата техникине лайăх пĕлнине кăтартса пачĕç. Чылайăшĕ вĕсенчен финала тухма путевка çĕнсе илчĕç.



*1969 çул. «Урожай» ирĕклĕ спорт обществăн чемпионĕсемпе призерĕсем. Сулахайран сылтăмалла: И.Рыбкин (Патăрьел районĕ), П.Степанов (Çĕрпӳ), А.Федотов (Красноармейски), Г.Лешев (Патăрьел), Н.Таратин, Ю.Ефремов, И.Таратин (Вăрмар).*



*1971 çул. Ирĕклĕ майпа кĕрешсе республика чемпионĕн ятне тивĕçнĕ (сулахайран сылтăмалла) пĕрремĕш ретре – В.Таратин, Н.Таратин, В.Таратин, В.Филиппов: иккĕмĕш ретре – А.Александров, А.Ушаков, А.Константинов, И.Таратин, В.Зайцев.*



*1971 çул. Вăрмар районĕн ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен пĕрлештернĕ команди «Урожай» ирĕклĕ спорт обществăн Кубокне çĕнсе илнĕ. Ӳкерчĕкре (пĕрремĕш ретре сулахайран сылтăмалла): В.Тихонов, В.Веселовский, Н.Иванов, Ю.Кузнецов, Ю.Сейфуллин, А.Александров, А.Герасимов, В.Аваков, Н.Кудряшов; иккĕмĕш ретре – Н.Таратин (тренер), А.Адюков, Н.Николаев, Н.Сысоев, А.Веселовский, В.Николаев, А.Егоров, Ю.Никифоров, Ю.Ефремов (тренер).*



*1973 çул. Ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе районăн пĕрлештернĕ команди. Республика чемпионĕсемпе призерĕсем.*



*1974 çул. Кивал шкулĕнчи пултаруллă спортсменсем. Ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе республика чемпионĕсем. Çӳлти ретре (сулахайран сылтăмалла): И.Таратин, Г.Мсксимов, А.Павлов, В.Веселовский, А.Таратин, В.Алексеев, А.Веселовский; варринче — В.Садюков, Ю.Русов, Н.Иванов, П.Кудряшов, В.Адюков; пĕрремĕш ретре — А.Кузнецов, В.Таратин, А.Московкин, В.Адюков, Л.Терентьев, Н.Таратин (тргнер).*



*1975 çул. Республика чемпионĕсем. Виççĕшĕ Кавалсем — Н.Таратин, Г.Исаев, И.Таратин.*



*1975 çул. Кавалти вӑтам шкулта вӗренекенсем – Чӑваш республикин чемпионӗсем. Çӳлти ретре (сулахайран сылтӑмалла): И.Таратин, В.Табаков, Н.Моклаков, А.Павлов, Н.Николаев, А.Веселовский, Н.Таратин (тренер); варринче – П.Кудряшов, В.Веселовский, В.Тихонов; пӗрремӗш ретре – Н.Кудряшов, Н.Иванов, Н.Рожков.*



*Ирӗклӗ майпа кӗрешес енӗпе республика чемпионӗсемпе призерӗсем.*

*Пӗрремӗш ретре (сулахайран сылтӑмалла): Н.Иванов, Н.Таратин; иккӗмӗшӗнче – Г.Разумов, Ю.Ефремов.*

Ăмăртăвăн иккĕмĕш кунĕ татах та интереслĕрех иртрĕ. Финалти тытăçусем пулчĕç.

Чи малтанах кавир çине 45 килограмм таран таякан çамрăксем тухаççĕ. Пĕр-пĕрне алă тытнă хыççăн судья, кĕрешӳ пуçланни çинчен пĕлтерсе, сигнал парать. Акă кĕрешӳ пуçланать. Н.Таратинпа Патăрьел районĕн тренерĕ И.Рыбкин хальхинче уйрăмах хумханаççĕ. Вĕсен воспитанникĕсем кĕрешеççĕ-çке-ха. Кавалти вăтам шкулта вĕренекен Н.Кудряшов, пурне те çĕнтерсе, финала çитнĕ. Паян вара унăн Патăрьел ачипе Г.Лещевпа кĕрешмелле. Кĕрешекенсен техники те лайăх, вăйĕ те пур, çавна пула кĕрешӳ тăсăлчĕ. Малтанхи хутĕнче никам та çĕнтереймерĕ. Иккĕмĕш тапхăр пуçлансанах, Кудряшов Лещева татăклăн çĕнтерсе чемпион ятне çĕнсе илет. Çак виçери Н.Степановпа (Çĕрпӳ) Г.Лещевăн иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсемпе килĕшме тивет.

Вăрмарти вăтам шкулăн тăххăрмĕш класĕнче вĕренекен А.Александров кĕрешме питех те ăста. Чеелĕхĕ те, вăй-халĕ те пур унăн. Ахальтен мар ĕнтĕ вăл финала тухма тивĕçлĕ пулнă. Юлашкинчен унăн Кавалти Ю.Кузнецовпа тĕл пулмалла. Иккĕшĕ те пултаруллă, ăмăртăва лайăх хатĕрленнĕ. Вăрмарти ачасемпе çамрăксем спорт шкулĕн тренерĕ, кĕрешессипе темиçе хутчен те республика чемпионĕн ятне çĕнсе илнĕ Ю.Ефремов шанчăкне пурпĕрех çухатмарĕ. Пуçра пĕр шухăш: «Саша çĕнтермеллех. Мĕншĕн тесен вăл тĕреклĕрех, кĕрешӳ мелне те ытларах пĕлет». Тĕл пулура А.Александров çĕнтерчĕ. Чемпион пулчĕ. Çапла вара, 48 килограмм таран таякан çамрăксем хушшинче Ю.Кузнецов – иккĕмĕш, Канаш спортсменĕ А.Егоров виççĕмĕш вырăнсене йышăнчĕç.

– Кавир çине 52 килограмлă виçери спортсменсем – А.Герасимовпа В.Тихонов тухаççĕ! – пĕлтерет судья.

А.Герасимова поселокра чылайăшĕ лайăх пĕлеççĕ. Футболла, хоккейла е баскетболла вăл яланах ăнăçлă вылять. Кĕрешме те ăста. Финалта вăл Кавал ачипе – В.Тихоновпа тытăçрĕ. Енчен те ăна выляса ярсан, вăл

виççĕмĕш выр̆ана кăна юлать. Вăрмарти вăтам шкулта вĕренекен В.Сейфуллин вара пĕрремĕш вырăн йышăнма пултарать. Чемпион ятне камăн çĕнсе илес килмĕ?

Чылай вăхăт хушши кĕрешнĕ хыççăн çеç А.Герасимов опытлăрах пулни палăрчĕ. В.Тихонова çĕнтерсе «Урожай» ирĕклĕ спорт обществин чемпионĕ пулса тăчĕ. В.Сейфуллинпа В.Тихонов вара иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсенче.

56 килограмм таран таякан спортсменсем хушшинче никама парăнмасăр финала тухнă Кавалти В.Аваков юлашкинчен Патăрьел спортсменĕпе А.Осиповпа кĕрешрĕ. Иккĕшĕ те маттур. Осипов вара татах та тĕреклĕрех. Çавăнпа ĕнтĕ ăмăртăва курма пынисем ун çине ытларах шанчĕç. Анчах та пачах урăхла килсе тухрĕ. Нумай вăхăт хушши спортсменсем пĕр-пĕрне ӳкересшĕн тăрмăшнă хыççăн В.Аваков çĕнтерчĕ. Залра ларакансем пултаруллă спортсмена нумайччен тăвăллăн алă çупса саламларĕç.

Малаллахи виçере Вăрмар спортсменĕ В.Воронов Çĕрпӳ спортсменĕпе Ф.Кабировпа кĕрешрĕ. Чемпион ятне каллех Вăрмар спортсменĕ çĕнсе илчĕ. Унпа пĕр виçери Н.Сысоев (Вăрмар) – иккĕмĕш, Ф.Кабиров виççĕмĕш вырăнсене тухрĕç.

Елчĕкрен килнĕ А.Кассиров спортсмен 65 килограмлă виçеллисен хушшинче питех те хăюллăн кĕрешрĕ. Вăйхалĕ те çителĕклĕ унăн. Пĕрремĕш тĕл пулу ун енче пулчĕ. Иккĕмĕш тĕл пулура та очкосем ытларах пухрĕ вăл. Виççĕмĕшĕнче вара Н.Николаева пурпĕрех çĕнтерчĕ. Чемпион ятне илчĕ. А.Адюковпа Н.Николаев иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене юлчĕç.

Вăрмар спортсменĕ В.Николаев финалта Шупашкар районĕнчен килнĕ Г.Степанова хулпуççи çине хурса çурăмĕ çине вырттарчĕ. Чемпиона тухрĕ.

81 килограмм таран таяканнисем хушшинче И.Пюре тата В.Тамайкин (иккĕшĕ те Патăрьелĕнчен) пĕрремĕшпе иккĕмĕш вырăнсене пайларĕç. В.Табаков (Вăрмар) виççĕмĕш вырăна юлчĕ.

Ăмăрту вĕçленчĕ. Республикăри «Урожай» ирĕклĕ

спорт обществин представителĕ М.Кубенев ăмăрту вĕçленнĕ ятпа спортсменсене ăшшăн саламларĕ. Республика чемпионĕ ята çĕнсе илнĕ команда членĕсене костюмсем парнелерĕ, грамотăсемпе наградăларĕ.

Командăсем хушшинче республикăри «Урожай» ирĕклĕ спорт обществин кубокне Вăрмар поселокĕн команди (тренерĕ Ю.Ефремов) çĕнсе илчĕ. Иккĕмĕш вырăнта Вăрмар районĕн Кавалти иккĕмĕш команди (тренерĕ Н.Таратин), виççĕмĕшĕнче – Патăрьел районĕн пĕрремĕш команди.

1974 çулта ирĕклĕ майпа кĕрешессипе республикăри çамрăксем хушшинче irттернĕ ăмăртура Вăрмар районĕнчи ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕнчи 6 çамрăк – пĕрремĕш, 3-шĕ – виççĕмĕш вырăнсене йышăнчĕç. 81 килограмлă спортсменсем хушшинче Владимир Табаков (Кавал) пĕрремĕш вырăна тивĕçрĕ. Çапла вара, диплом тата куçса çÿрекен кубок Вăрмара килчĕ.

1980–1990 çулсенче те Кавалти вăтам шкулта вĕренекенсем кавир çинче ăста кĕрешме пĕлнипе палăрса тăнă. Николайпа Иван Таратин тренерсем вĕсене кĕрешÿ мелĕсене çине тăрсах вĕрентнĕ.

1982 çулхи апрель уйăхĕнче районти Спорт çуртĕнче шкул ачисем хушшинче ирĕклĕ майпа кĕрешсе районта мала тухассишĕн ăмăртнă. Унта пурĕ 36 шкул ачи хутшăннă. Тупăшăва Кавалти вăтам шкул команди уйрăмах лайăх хатĕрленнĕ. В.Иванов, В.Владимиров, В.Адюков, Н.Мясников, В.Бормисов хăйсен виçисенче пĕрремĕш вырăнсене çĕнсе илнĕ.

Командăсенчен пĕрремĕш вырăна – Кавалти, иккĕмĕшне – Вăрмарти иккĕмĕш номерлĕ, виççĕмĕшне Арапуçĕнчи вăтам шкулсен командисем йышăннă.

1985 çулхи декабрь уйăхĕнче Чăваш ял хуçалăх институчĕн спорт залĕнче «Урожай» ирĕклĕ спорт обществăн область Совечĕн парнисене çĕнсе илессишĕн ирĕклĕ майпа кĕрешекенсем вăй виçнĕ. Ăмăртăва пурĕ 12 команда хутшăннă. Пирĕн район чысне Кавалти вăтам шкулти çамрăк спортсменсем хÿтĕленĕ. Вуннăмĕш класра вĕренекен

Николай Кузьминпа Виталий Адюков, 97 тата 42 килограмлă виçери спортсменсем хушшинче кĕрешсе, çĕнтерӳçĕ ятне çĕнсе илнĕ. Командăри Андрей Семенов 52 килограмм таякан спортсменсем хушшинче виççĕмĕш пулнă.

Пултаруллă çамрăк кĕрешекенсене «Урожай» ирĕклĕ спорт обществăн область Совечĕн пĕрлештернĕ командин составне кĕртнĕ.

Шупашкарти В.И. Чапаев ячĕпе хисепленекен производство пĕрлешĕвĕн Спорт çуртĕнче ирĕклĕ майпа кĕрешсе республикăра мала тухассишĕн ирттернĕ ăмăртура Кавалти вăтам шкулта саккăрмĕш класра вĕренекен Андрей Аваков 41 килограмлă виçеллисем хушшинче пĕрремĕш вырăн йышăннă.

Андрей Семенов 51 килограмлă виçеллисемпе кĕрешсе, виççĕмĕш вырăна тивĕçлĕ пулнă.

1987 çулта тутарла-пушкăртла майпа кĕрешессипе Чăваш ял хуçалăх институчĕн спорт залĕнче республика чемпионачĕ пулса иртнĕ. Кавир çинче 100 яхăн яш пулнă. Çамрăк ачасен юлашки тытăçăвĕнче чемпион ятне Кавал ялĕнчи, ДОСААФ автошкулĕнче вĕренекен Петр Таратин çĕнсе илсе хаклă парнене тата грамотăна тивĕçнĕ.

Иккĕмĕш вырăна Кавалти вăтам шкулта 10-мĕш класра вĕренекен Юрий Смирнов тухнă.

Вĕсем Тутар АССРĕнче Альметевск хулинче пулса иртнĕ РСФСР чемпионатне хутшăннă, лайăх результат кăтартнă.

1989 çулта Шупашкарти ачасемпе çамрăксен виççĕмĕш номерлĕ Спорт шкулĕнче ирĕклĕ майпа кĕрешсе республикăра мала тухассишĕн ăмăрту ирттернĕ.Унта Кавалти вăтам шкул ачисемпе «Ленинский» совхоз çамрăкĕсем хутшăнса палăрмаллах çитĕнӳсем тунă.

32 килограмлă виçеллисенчен Сергей Русановпа (çиччĕмĕш класс) Олег Молокин (улттăмĕш класс) пĕрремĕшпе иккĕмĕш вырăнсене çĕнсе илнĕ.

35 килограмлă виçеллисенчен Сергей Аваковпа Анатолий Игнатьев (çиччĕмĕш класс), 38 килограмлисенчен

Андрей Мучуков хăйсен пултарулăхĕпе палăрнă.

44 килограмлă виçеллисенчен Сергей Таратин (саккăрмĕш класс) пĕрремĕш вырăн йышăннă.

46 килограмлă виçеллисенчен Юрий Яковлев мала тухнă.

50 килограмлă виçеллисенчен Сергей Адюковпа (вуннăмĕш класс) Владимир Иванов иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсенче.

54 килограмлисен хушшинчи кĕрешӳре Валерий Мучуков (тăххăрмĕш класс) çĕнтернĕ.

58 килограмлисенчен Андрей Семенов (вунпĕрмĕш класс) иккĕмĕш вырăна тухнă.

Çамрăксенчен Юрий Смирнов, Алексей Аваков, Сергей Яковлев, Валерий Артюков лайăх результатсем кăтартса малти вырăнсене çĕнсе илнĕ.

Ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе кашни çул тенĕ пекех Кавалтан республика чемпионĕсем çуралаççĕ.

1993 çулхи февраль уйăхĕнче ирĕклĕ майпа кĕрешсе республикăра мала тухассишĕн Шупашкарта ирттернĕ ăмăртура «Ленинский» юлташлăхра шоферта ĕçлекен Николай Кузьмин хăй виçинчи спортсменсем хушшинче пĕрремĕш вырăн йышăннă, чемпион ятне çĕнсе илнĕ.

Кавалти вăтам шкулта вунпĕрмĕш класра вĕренекен Олег Молокин çитĕнсе çитнисем хушшинче виççĕмĕш вырăна тухнă.

Ирĕклĕ майпа кĕрешессипе 1997 çулхи февраль уйăхĕнче Шупашкарта ирттернĕ республика чемпионатĕнче район чысне хӳтĕленĕ Кавалти вăтам шкулта вĕренекен Сергей Русанов, Олег Молокин, Руслан Таратин хăйсен виçисенче лайăх результатсем кăтартнă.

Юлашки çулсенче Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин депутачĕ Павел Семенов пуçарăвĕпе вăл ертсе пыракан Социаллă программăсен центрĕ чылай районта ĕнтĕ çамрăксем хушшинче ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе ăмăртусем ирттерет. Физкультурăпа спорта аталантарас енĕпе йĕркелекен турнир йăлана кĕрсе пырать тесен те

йăнăш мар. 2003 çулхи август уйăхĕнче Павел Семеновăн парнисене çĕнсе илессишĕн çамрăк паттăрсем Кавал ялĕнче вăй виçрĕç. Вырăнти спортсменсем хăйсен Шупашкарти тантăшĕсене йышăнчĕç.

Ăмăртăва хутшăнаканнисене паллă спортсменсем – ЧР физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ тата тава тивĕçлĕ тренерĕ Владимир Семенов, хамăрăн республикăра çеç мар, кĕрешес енĕпе Раççейре та пĕрре кăна мар чăн-чăн паттăр ятне çĕнсе илнĕ Иван Таратин, тĕнче шайĕнчи спорт мастерĕ Иван Григорьев, ял тата район администрацийĕн представителĕсем саламларĕç, чăваш спортсменĕсен тĕнчипех сарăлнă мухтавлă ятне яланах çӳлте тытса пыма, çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тума ырлăх-сывлăх, ăнăçусем сунчĕç.

Кĕрешӳ, тӳрех калас пулать, питĕ хĕрӳ пулчĕ– кашниех Павел Семеновăн парнине çĕнсе илессишĕн тăрăшрĕ. Çамрăк паттăрсем хăйсен пултарулăхне пур енлĕн кăтартма, мала тухма тăрăшрĕç. Николай Таратин тата Владимир Николаев тренерсем кĕрешӳ ăсталăхне хăнăхтарнă çамрăксем чăннипех та маттур иккен. Çавăнпах пулĕ жюри членĕсем пурне те парнесем пачĕç. Туслăх çĕнтерчĕ!

Сентябрь уйăхĕнче Канаш хулин Культура керменĕнче РФ Патшалăх Думин депутачĕн, республикăри ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен Федерацийĕн президенчĕн Павел Семеновăн парнисене çĕнсе илессишĕн ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен республикăри турнирĕ иртнĕ. Ăмăртăва 12 районтан 17 команда хутшăннă.

ЧР Правительствин пĕрремĕш вице-премьерĕ, физкультурăпа спорт министрĕ В.Краснов пурне те Н.В.Федоров Президент ячĕпе саламланă.

«Ăмăртура ăнăçу сунатăп, паянхи кун сирĕншĕн уяв пултăр», – тенĕ Павел Семенов спортсменсене, хăнасене, курма килнисене саламланă май.

Павел Владимирович йĕркеленипе çак ăмăрту чăн-чăн уяв пулса тăнă. Ăмăртăва 200 яхăн спортсмен килсе çитнĕ. Вĕсен хушшинче Раççей, Европа, тĕнче шайĕнче палăр-

ма ĕлкĕрнисем. Ăмăртура хĕрсем, арçын ачасем тата аслисем тупăшнă.

Павел Семенов парнисене çĕнсе илессишĕн Кавал хĕрĕсем та хăюллăн кĕрешнĕ, хăйсен мĕн пур ăсталăхне, вăй-халне панă.

65 килограмм таран таякан спортсменкăсем хушшинче Оля Иванова пысăк çитĕнӳ тунă, иккĕмĕш вырăн йышăннă. Пултаруллă спортсменкăна хаклă парне – музыка центрĕ парса чысланă.

Анастасия Иванова та лайăх кĕрешнĕ. Вăл 60 килограмм таран таякан хĕрсенчен виççĕмĕш вырăна тухма пултарнă. Ăна «Кодак» фотоаппарат парнеленĕ.

«Павел Семенов ачасемпе çамрăксем хушшинче сывă пурнăç йĕркине пропагандăлас, начар йăласене пăрахăçлас тĕлĕшпе нумай ĕçлет», – тенĕ ăмăрту итогĕсене пĕтĕмлетнĕ май Вячеслав Краснов министр.

Спортăн çак енне хĕр ачасем те кăмăллани тата вĕсем хăйсен спортри ăсталăхне тăтăшах ӳстерсе пыни чăннипех те савăнтарать.

Çĕнĕ Шупашкарта хĕрарăмсемпе хĕр ачасем хушшинче ирĕклĕ майпа кĕрешессипе ирттернĕ Чăваш Ен чемпионатĕнче хăйсен виçе категорийĕсенче А.Табакова, Н. Иванова (Кавал), А.Андреева (Кĕтеснер) – иккĕмĕш, О.Иванова (Кавал) виççĕмĕш вырăнсене çĕнсе илнĕ. Т.Романова лайăх результат кăтартнă. 2005 çулта та пысăк çитĕнӳсем тунипе савăнтарчĕç вĕсем пире.

Шкулта вĕренекен хĕр ачасем хушшинче ирĕклĕ майпа кĕрешсе республикăра мала тухассишĕн Шупашкарта ирттернĕ уçă чемпионатра Кавал шкулĕнче ăс пухакансем лайăх результатсем кăтартнă. Хăйсен виçисенче О.Иванова – пĕрремĕш, А.Иванова – иккĕмĕш, А.Табаковапа Т.Романова виççĕмĕш вырăнсене çĕнсе илнĕ.

Тепĕр çулхинче те лайăх кăтартусемпе палăрнă вĕсем.

Чăваш Республикин физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченне В.Смородинова халалласа ирĕклĕ майпа кĕрешессипе республикăра мала тухассишĕн Шупаш-

кар районĕнчи Апашра ирттернĕ турнирта хăйсен виçисенче Кавалти Ю.Горшковапа А.Табакова иккĕмĕш вырăнсене тухнă.

1986-1988 çулхи хĕр ачасем хушшинче республикăра мала тухассишĕн Шупашкарта ирттернĕ ăмăртусенче хăйсен виçисенче Кавалти О.Иванова – пĕрремĕш, Т.Романовапа А. Иванова виççĕмĕш вырăнсене йышăннă.

Кавалти çамрăк спортсменсемшĕн 2007 çул та кăтартуллă.

Челябинск хулинче ирттернĕ Раççей чемпионатĕнче 10 класра вĕренекен Арина Табакова 56 килограмлă спортсменкăсем хушшинче пиллĕкмĕш вырăн йышăннă, спорт мастерĕн кандидачĕн нормативне пурнăçланă.

Раççейре мала тухассишĕн Брянск хулинче иртнĕ ăмăртура Оля Иванова (Шупашкарта Олимп резервĕсен училищинче вĕренет) 67 килограмлă хĕрсем хушшинче виççĕмĕш вырăна тухнă, Мускавра ирттернĕ тĕнче турнирне хутшăннă.

Хĕр ачасемпе арçын ачасем хушшинче ирĕклĕ майпа кĕрешсе республикăра мала тухассишĕн Вăрнарта ирттернĕ ăмăртусенче хăйсен виçисенче Юлия Горшковапа Анастасия Таратина виççĕмĕш вырăнсене çĕнсе илнĕ.

Александр Александровпа Николай Кожанов тата Татьяна Грачева лайăх результатсем кăтартнă.

2008 çул. Апрель уйăхĕ. Çĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕсен шкулĕн спорт залне пултаруллă ентеше В.Чапаева асăнса ирĕклĕ майпа кĕрешсе мала тухассишĕ ирттернĕ Пĕтĕм Раççейри турнира Мускав, Челябинск, Нижнеюганск тата Атăлçи тăрăхĕнчи хуласенчи спортсменсем йышлăн пухăннă. Çак сумлă ăмăртăва Вăрмарсем те хутшăнмасăр юлман, лайăх результатсем кăтартнă. Уйрăмах Кавал спортсменĕсем палăрнă. О.Иванова 72 килограмлă спортсменкăсемпе тупăшнă, пĕрремĕш вырăн йышăннă, спорт мастерĕн нормативне пурнăçланă. Спорт мастерĕн кандидачĕ А.Табакова 63 килограмм таран таякан хĕрсемпе тупăшнă, виççĕмĕш вырăна тухнă. Пысăк



***2008 çул. Районти Спорт çуртĕнче ирĕклĕ майпа кĕрешсе пĕр тăван Таратинсен призĕсене çĕнсе илессишĕн irттернĕ республикăри уçă турнира Иван Петрович Таратин 60 çул тултарнине халалларĕç. Тупăшăва пухăннисене Вăрмар район пуçлăхĕ В.Кириллов саламларĕ, спортсменсене ăнăçу сунчĕ.***



***Ăмăртăва хутшăнакан çамрăксем пĕр рете йĕркеленсе тăнă.***



*Турнира хутшăнакансене И.Таратин юбиляр саламлать.*



*Юбиляра чи сумлă парне тивĕçет.*



***Турнирта РФ Патшалăх Думин депутачĕ, ЧР ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен федераци Президенчĕ П.Семенов ячĕпе ЧР тава тивĕçлĕ тренерĕ В.Семенов саламларĕ, хаклă парне пачĕ.***



***«Чулхулари карас телефонсен çыхăнăвĕ» хупă акционерлă обществăн пирĕн республикăри филиалĕн директор çумĕ В.Маллин та Иван Петрович Таратина парнесĕр хăвармарĕ.***



*Ăмăрту вăхăтĕнче. Вăрмар хула тăрăхĕн пуçлăхĕ В.Иванов, ЧР ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен федерацин вице-президенчĕ В.Семенов, Владимир, Иван, Николай Таратинсем кĕрешÿпе кăсăкланаççĕ.*



*Р.Таратин судья çĕнтерÿçĕне палăртать.*



***2009 çул. Пĕр тăван Таратинсене халалласа ирттернĕ ăмăртăва хутшăнакансене район пуçлăхĕн çумĕ Ю.Соколов саламлать, ăнăçу сунать.***



***Пĕр тăван Таратинсемпе ăмăртăва йĕркелекенсем.***



***Район пуçлăхĕн çумĕ Ю.Соколов, ЧР физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Пысăк Енккассинчи вăтам шкулти физкультура учителĕ Ю.Архипов, И.Таратин ăмăрту йĕркелӳçи, Чăваш ял хуçалăх академийĕн доценчĕ, физкультура кафедрин пуçлăхĕ А.Алексеев, ЧР тава тивĕçлĕ тренерĕ В.Семенов, «Чулхулари карас телефонсен çыхăнăвĕ» хупă акционерлă обществăн пирĕн республикăри филиалĕн директор çумĕ В.Маллин кĕрешекенсен ăсталăхĕпе кăсăкланаççĕ.***



***Ăмăртăва хутшăннă тренерсемпе спортсменсен пĕр ушкăнĕ.***




***Ăмăрту çĕнтерӳçисем те паллă ĕнтĕ.***



***Хисеп пьедесталĕн чи çӳллĕ картлашки çинче***
***Кавал хĕрĕ Анастасия Таратина.***



*Хисеп пьедесталĕ çинче ăмăртăвăн абсолютлă чемпионки, Раççей спорт мастерĕ О.Иванова (Кавал).*



*Ăмăрту çĕнтерӳçисем — Кавал шкулĕнче вĕренекенсем.*

Енккассинчи В.Архипов 57 килограмм таран таякан арçын ачасем хушшинче виççĕмĕш пулнă. Кавал каччи П.Кузьмин 96 килограмлă спортсменсем хушшинче хăйĕн пултарулăхне тивĕçлипе кăтартнă.

2000 çултан пуçласа районти Спорт çуртĕнче ирĕклĕ майпа кĕрешсе пĕр тăван Таратинсен призĕсене çĕнсе илессишĕн республикăри уçă турнир ирттереççĕ.

2008 çулта ăна Иван Петрович Таратин 60 çул тултарнă ятпа йĕркелерĕç. Таратинсем чăннипех те пултаруллă спортсменсем. Николай, Иван, Владимир тĕрлĕ çулсенче ирĕклĕ майпа кĕрешсе Хисеп пьедесталĕ çине темиçе хутчен те хăпарса тăма тивĕçлĕ пулнă. Ялсенче тата район центрĕнче ирттернĕ Акатуйсенче çĕнтерсе нумай чухне чи сумлă парне – така çĕнсе илнĕ.

Акă спортсменсем пĕр рете йĕркеленсе тăнă. Чăваш Республикин Гимнĕ мăнаçлăн янăрать.

Ăмăртăвăн тĕп судйи А.Власов спортсменсем ăмăртăва хатĕрри çинчен район пуçлăхĕн заместительне Ю.Соколова рапорт парать.

– Вăрмар çĕрĕ чаплă спортсменсемпе пуян. Пекинра иртнĕ çуллахи XXIX Олимп вăййисене пирĕн районтан тăваттăн хутшăнчĕç. Пĕр тăван Таратинсем вара ирĕклĕ майпа кĕрешессипе чапа тухнă. Вĕсен спортри çитĕнĕвĕсем паянхи çамрăксене çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантараççĕ. Паян ăмăртăва хутшăнакансене ăнăçусем сунатăп, – тет Юрий Васильевич.

Турнира Иван Петровичăн 60 çулхи юбилейне халалланă май, ун ячĕпе ăшă сăмахсем тата парнесем нумай пулчĕç, ăна кĕрешекенсен чи сумлă парнине – така пама та манса каймарĕç.

Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин депутачĕ, ЧР ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен федераци Президенчĕ П.Семенов пултаруллă спортсмена, физкультурăпа спорта тата ирĕклĕ майпа кĕрешессине аталантарма тивĕçлĕ тӳпе хывнăшăн Хисеп грамотипе наградăланă. Çак наградăна депутат ячĕпе Иван Таратина РФ Патшалăх Думин депу-

тачĕн помощникĕ, ЧР тава тивĕçлĕ тренерĕ, ЧР ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен федерацийĕн вице-президенчĕ В.Семенов пачĕ.

Унтан юбиляра РФ физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Чăваш ял хуçалăх академийĕн доценчĕ, физкультура кафедрин заведующийĕ А.Алексеев, «Чулхулари карас телефонсен çыхăнăвĕ» хупă акционерлă обществăн пирĕн республикăри филиалĕн директор заместителĕ В.Маллин, Чăваш Республикинчи физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ В.Смородинов, ирĕклĕ майпа кĕрешессипе тĕнче чемпионачĕн призерĕ А.Колесников, Пĕтĕм Раççейри категориллĕ судья А.Власов, спорт мастерĕ С.Сергеев, Чăваш Республикинчи физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Ю.Архипов, Иван Петровичăн пиччĕшĕ Николай Таратин тата ыттисем саламларĕç, ырлăх-сывлăх сунчĕç.

Ăмăртăвăн тĕп судйи А.Власов ăмăрту йĕркипе паллаштарчĕ.

Часах ăмăртусем пуçланаççĕ. Пирĕн район спортсменĕсенчен хăйсен виçисенче пĕрремĕш вырăнсене – Д.Скворцов, А.Таратина, А.Алексеев, О.Иванова, иккĕмĕшне – А.Пантелеймонов, А.Александров, П.Кузьмин, К.Миронова, Ю.Горшкова, виççĕмĕшне – А.Табаков, А.Кудряшов, А.Павлов, М.Иванова çĕнсе илчĕç.

Абсолютлă чемпион ята Шупашкарти Олимп резервĕсен училищинче вĕренекен Раççей спорт мастерĕ О.Иванова (Кавал) тивĕçлĕ пулчĕ.

2009 çул та çамрăк спортсменсемшĕн лайăх кăтартусемпе палăрчĕ. Кавал шкулĕнче тăххăрмĕш класра вĕренекен Саша Александров ирĕклĕ майпа кĕрешсе ЧР физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченне тата ЧР тава тивĕçлĕ тренерне Г.Н.Смирнова асăнса февраль уйăхĕнче Шăхасанта ирттернĕ йăлана кĕнĕ республикăри уçă турнирта 69 килограмм таран таякан спортсменсем хушшинче чемпион ятне çĕнсе илнĕ, хисеп пьедесталĕн чи çӳллĕ картлашки çине хăпарма тивĕç пулнă.

1992–1993 çулсенче çуралнă çамрăксем хушшинче ирĕклĕ майпа кĕрешсе республикăра мала тухассишĕн Шупашкарта ирттернĕ ăмăртура Кавал шкулĕнче вĕренекен А.Таратина 46 килограмм таран таякан спортсменкăсем хушшинче, А.Алексеева 85 килограмлисемпе кĕрешсе виççĕмĕш вырăнсене çĕнсе илнĕ. Çивĕч кĕрешӳре А.Александров, Н.Кожанов, Д.Семенов лайăх результатсем кăтартнă.

Март уйăхĕнче Муркаш районĕнчи воин-афганецсене асăнса ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе кунти Спорт çуртĕнче ирттернĕ республикăри турнирта Кавалсем пысăк çитĕнӳ тунă. Хăйсен ушкăнĕсенче А.Павлов (60 кг) тата А.Александров (69 кг) пĕрремĕш вырăнсене çĕнсе илнĕ. Н.Александров (84 кг) иккĕмĕш пулнă. Ăмăртăва хутшăннă 7 командăран Кавалсем виççĕмĕш вырăна тухнă.

1994–1995 çулсенче çуралнă арçын ачасем тата 1995–1996 çулсенчи хĕр ачасем хушшинче ирĕклĕ майпа кĕрешсе республикăра мала тухассишĕн май уйăхĕнче Шупашкарта ăмăрту ирттернĕ. Унăн тĕллевĕ – халăх хушшинче ирĕклĕ майпа кĕрешессине сарасси, спортри ăсталăха ӳстересси, Раççейри ăмăртусене хутшăнма республикăн пĕрлештернĕ командине йĕркелеме вăйлă спортсменсем тупса палăртасси.

Çак ăмăртура пирĕн пултаруллă спортсменсем, 9-мĕш классенче вĕренекенсем призлă вырăнсене çĕнсе илнĕ. 85 килограмм таран таякан çамрăксем хушшинче А.Алексеев (Вăрмарти пĕрремĕш вăтам шкул) – чемпион ятне тивĕçнĕ. 69 килограмм таран таякансенчен А.Александров (Кавал) иккĕмĕш вырăн йышăннă.

Декабрь уйăхĕнче районти Спорт çуртĕнче пĕр тăван Таратинсен призĕсене çĕнсе илессишĕн ирттерекен турнира вуннăмĕш хут йĕркелерĕç.

Ăмăртăва хутшăнакансене район пуçлăхĕ В.Кириллов ячĕпе унăн заместителĕ Ю.Соколов саламларĕ. РФ Патшалăх Думин депутачĕн П.Семеновăн помощникĕ, ЧР тава тивĕçлĕ тренерĕ, ЧР ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен феде-

рацийĕн вице-президенчĕ В.Семенов хăйĕн саламлă сăмахĕнче пĕр тăван Таратинсен 1960– 1970 çулсенчи çитĕнĕвĕсем çинчен тĕплĕн каласа пачĕ. Иван Таратина кĕрешекенсен статуэткине парнелерĕ. Çавăн пекех Николайпа Владимир Таратинсене те парнесемпе тивĕçтерчĕ.

Тупăшăва хутшăнакансене Вăрмар хула тата Куславкка районĕсен çар ĕç комиссариачĕн муниципаллă пĕрлĕх тытăмĕн пай начальникĕ М.Пуклаков, Вăрмар район депутачĕсен Пухăвăн депутачĕ Л.Лукин саламларĕç.

Ăмăртăва йĕркелекен И.Таратин килнĕ хăнасене, тупăшăва хутшăнакансене саламланă май, çĕнтерӳçĕсем валли хаклă парнесем хатĕрлени çинчен пĕлтерчĕ.

Кашни ушкăнрах тупăшусем питех те çивĕч иртрĕç. 69 килограмм таран таякан спортсменсем хушшинче Александр Александров (Кавал шулĕ) чемпион ятне çĕнсе илчĕ.

Хăйсен виçисенче район чысне хӳтĕленĕ Дмитрий Скворцов, Александр Павлов, Анастасия Таратина, Анюта Ширеева, Ирина Молокина призлă вырăнсене тивĕçрĕç. Çĕнтерӳçĕсене район пуçлăхĕн грамотипе наградăларĕç. Медальсемпе хаклă парнесем парса чысларĕç.

Ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе чапа тухнă пĕр тăван Таратинсене районпа республикăра кăна мар, ун тулашĕнче те аван пĕлеççĕ. Раççейре мала тухассишĕн тĕрлĕ хуласенче иртнерне ăмăртусене сахал мар хутшăннă çке-ха вĕсем, спортсменсем пĕр-пĕринпе паллашнă, тупăшнă хыççăн кĕрешекенсем алă парсах уйрăлнă. Спортсменсен тренерĕсем вара хăйсен воспитанникĕсемшĕн чăннипех пăшăрханнă, «тăшманăн» лайăх тата начар енĕсене пĕлме тăрăшнă, тепĕр ăмăртура вара ăнăçлăрах кĕрешме тытăннă. Тĕрлĕ ăмăртусене курма хутшăнса кĕрешекенсен лайăх енĕсене, вăрттăнлăхĕсене, чеелĕхĕсене вĕренсе спортсменсене алла илме пулăшасси тренерĕн тивĕçĕ. «Ĕмĕр пурăн, ĕмĕр вĕрен» тесе ваттисем ахаль каламан ĕнтĕ.

Иван Петрович Таратина тĕрлĕ хуласенче ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе иртterекен Раççей пĕлтерĕшлĕ ăмăртусене хутшăнма час-часах йыхравлаççĕ.

2009 çулхи декабрь уйăхĕнче И.Таратин Шупашкарта Раççей Геройĕн Н.Ф.Гаврилов генерал-лейтенантăн парнисене çĕнсе илессишĕн ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен Пĕтĕм Раççейри турнира савăнăçлă лару-тăрура уçнă çĕре хутшăннă. Спорт уявне Федерацин хăрушсăрлăх службин авиаци управленийĕн пуçлăхĕ, Раççей Геройĕ Николай Гаврилов генерал-лейтенант, РФ Патшалăх Думин депутачĕсем Николай Бударинпа Павел Семенов, Раççей халăх артисчĕ Леонид Якубович тата ытти хаклă хăнасем килсе çитнĕ. Ирĕклĕ стиле кăмăллакан 330 ытла кĕрешӳçĕ пухăннă.

Çак ăмăрту пирки И.Таратин çапла каласа пачĕ: «Ăмăрту питех те çивĕч иртрĕ. Ăна ЧР Президенчĕ Н.Федоров уçрĕ. Вăл çапла каларĕ: «Пирĕн ентеш, пирĕн халăх мухтавĕ Николай Федорович Гаврилов йĕркеленĕ турнир Чăваш Ене сывăрах тума, çамрăк ăрăва воспитани пама курăмлă пулăшу кӳрет. Республикăра пурăнакансем физкультурăпа тата спортпа туслашнине, культурăн çӳлти шайне туртăннине палăртма кăмăллă».

Унтан вăл физкультурăпа спортри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн Чăваш Республикин ирĕклĕ кĕрешĕвĕн «Кĕрешӳ федерацийĕ» общество организацийĕн вице-президентне Иван Григорьева «Чăваш Республикин физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят пани çинчен свидетельство тыттарчĕ.

Нумаях та вăхăт иртмерĕ И.Таратинăн ĕç сĕтелĕ çине каллех йыхрав хучĕ килсе выртрĕ. Ку хутĕнче ăна тусюлташĕсем, çĕршывĕпе тата тĕнчипе чапа тухнă спортсменсем ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе Ульяновск облаçĕнчи Б.Нагаткино поселокĕнче ирттерекен Пĕтĕм Раççейри турнира килме чĕнеççĕ. Çак ăмăртăва Совет Союзĕн Геройне Е.Т.Воробьева халалланă. Унăн призĕсене çĕнсе илессишĕн çĕршер кĕрешӳçĕ тупăшнă.

Çак турнирпа та Иван Петрович Таратин питех те кăмăллă пулнă.




*Пĕтĕм Раççейри категориллĕ судья А.Власов, спорт мастерĕ И.Таратин, ЧР тава тивĕçлĕ тренерĕ В.Семенов ăмăрту пуçланас умĕн. Шупашкар хули.*



*Раççей Федерацийĕн Геройĕн Н.Ф.Гаврилов генерал-лейтенантăн парнисене çĕнсе илессишĕн ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен Пĕтĕм Раççейри турнира уçнă вăхăтра.*
*2009 çулхи декабрь уйăхĕ. Шупашкар хули.*



*И.Таратин спорт мастерĕ ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе Европа чемпионатĕнче иккĕмĕш вырăн йышăннă спорт мастерне И.Григорьева çĕнтерӳ тунă ятпа саламлать. ЧР тава тивĕçлĕ тренерĕ В.Семенов тата РФ Патшалăх Думин депутачĕ П.Семенов та пултаруллă спортсмена ăнăçу сунаççĕ.*




*И.Таратин тĕнче категориллĕ спорт судйипе Ю.Алексеевпа (варринчи).*



***Ирĕклĕ майпа кĕрешсе Раççей Геройĕн Н.Ф.Гаврилов генерал-лейтенантăн парнисене çĕнсе илессишĕн ирттернĕ Пĕтĕм Раççейри турнир вăхăтĕнче (сулахайран сылтăмалла) – Н.Гаврилов (сулахайран виççĕмĕшĕ), РФ Патшалăх Думин депутачĕ, Раççей летчик-космонавчĕ Н.Бударин, спорт мастерĕ И.Таратин. Шупашкар хули.***



***Турнира хутшăннă тренерсемпе спортсменсен пĕр ушкăнĕ.***




*Ирĕклĕ майпа кĕрешсе Раççей Геройĕн Н.Ф.Гаврилов генерал-лейтенантăн парнисене çĕнсе илессишĕн ирттернĕ Пĕтĕм Раççейри турнир хыççăн асăнмалăх тунă сăн ÿкерчĕк. 2009 çулхи декабрь уйăхĕ. Шупашкар хули.*



*Ирĕклĕ майпа кĕрешсе тăватă хутчен тĕнче чемпионĕ ята çĕнсе илнĕ, Олимпиадăн бронза призерĕ пулнă С.Корнилаев (варринчи) районти Акатуйра кĕрешсе паттăра тухнă В.Адюковпа (Кавал) калаçать.*




*Спортпа туслă Таратинсем: Андрей Владимирович, Сергей Иванович, Алексей Владимирович, Руслан Николаевич.*

# ТАРАТИНСЕН ВОСПИТАННИКĔСЕМ

## Педагогика наукисен кандидачĕ ТИХОНОВ Владимир Федорович



1970 çулта вĕсен çемйи Кавала пурăнма куçса килет. Ирĕклĕ майпа кĕрешме вĕрентекен пĕр тăван Николай Петрович тата физкультура учителĕ Иван Петрович Таратинсем уншăн тĕслĕх пулнă. Вĕсем пек пулас, пултаруллă спортсменсенчен вĕренес тесе 1972 çулта ирĕклĕ майпа кĕрешме вĕренекенсен секцине çӳреме тытăнать. Кавал шкулĕнче вĕренекенсем вĕсен тренерĕ Николай Петрович Таратин секцине çӳрекенсен ăсталăхне ӳстерессишĕн хăйĕн мĕн пур пĕлĕвне, тăрăшулăхне панине туйса илеççĕ. Тренер çине тăнипе В.Тихонов 1973–1974 çулсенче çамрăксем хушшинче «Урожай» ирĕклĕ спорт обществин район тата республика чемпионĕ пулса тăрать. Çавăн чухне ĕнтĕ Николай Петрович ăна пĕрремĕш разрядлă спортсменăн значокне парать.

1974 çулта Кавалти вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн вăл Шупашкарти И.Н.Ульянов ячĕллĕ чăваш патшалăх университечĕн электротехника факультетне вĕренме кĕрет. Кунта спортри ăсталăха ӳстерме условисем татах та лайăхрах. Чăваш Енре ирĕклĕ майла кĕрешессине пуçарса янă, физкультурăпа спорт кафедрин заведующийĕ О.Маркиянов тата А.Абрамов аслă преподаватель патĕнче кĕрешӳ ăсталăхне малалла туптать. Университет командинчи М.Капитонов,пĕр тăван Сергейпе Михаил Егоровсем, Р.Алиулов, Л.Васильев, А.Ильин тата ытти

хăш-пĕр студентсемпе пĕрле 1975–1979 çулсенче «Буревестник» ирĕклĕ спорт обществăн чемпионĕ ята çĕнсе илеççĕ.

Чăваш республикинче ирĕклĕ майпа кĕрешме вĕрентес енĕпе чапа тухнă В.Клочков пирĕн ентеше В.Тихонова В.И.Чапаев ячĕллĕ заводăн Спорт çуртне çӳреме ирĕк парать. Кунти пултаруллă спортсменсемпе тĕрлĕрен ăмăртусене тăтăшах хутшăнать. 1976 çулта В.И. Чапаева асăнса ирттернĕ Пĕтĕм Союзри турнирта – тăваттăмĕш тата 1979 çулта республикăри «Труд» ирĕклĕ обществăн чемпионатĕнче иккĕмĕш вырăнсене йышăнать. Ун чухне вăл 68 килограма яхăн таякан спортсменсемпе тупăшнă. Классика енĕпе кĕрешсе 1976, 1977, 1978 çулсенче Чăваш республикин чемпионĕн ятне тивĕçет.

Чăваш патшалăх университетне вĕренсе пĕтернĕ хыççăн ăна лейтенант званийĕ параççĕ, часах Совет Çарне службăна илеççĕ. 1979–1994 çулсенче Инçет Хĕвел тухăçĕнчи Çар округĕнче авиаци чаçĕсенче тĕрлĕрен инженерипе техника должноçĕсенче пулать. Çав çулсенче Хабаровскри институтра физкультура уйрăмĕнче заочно вĕренет, «кĕрешӳ енĕпе тренер-преподаватель» специальноçне илет.

1994 çулта ăна Приморье крайĕнчи Черниговăри авиаци полкĕнче физкультурăпа спорт енĕпе начальник должноçне лартаççĕ. 1996–2006 çулсенче – Уссурийскри авиаци дивизийĕнче физкультурăпа спорт начальникĕ.

Служба вăхăтĕнче вăл кашни гарнизонтах ирĕклĕ майпа кĕрешме вĕренекенсен секцине йĕркеленĕ. Унта çӳрекенсем нумай пулнă. Анчах та 1990-мĕш çулсен пуçламăшĕнче Хĕç-пăшаллă Вăйсенче спортăн çак енне списокран кăларнă. 1990-мĕш çулсен варринче РФ Оборона министерствин спорт комитечĕ çар чаçĕсенче кире пуканĕ йăтассипе ăмăртусем епле ирттернине тĕрĕсленĕ. Çавăн хыççăн пирĕн ентеш – Владимир Федорович служба тивĕçĕпе кире пуканĕ йăтассин техникипе мелĕсене вĕрентме тытăнать. 2001 çулта Хабаровскри физкультурăпа

спорт академийĕн аспирантурине вĕренме кĕрет. 2003 çулта кире пуканĕ йăтакан спортсменсем хатĕрлес енĕпе диссертаци хӳтĕлет, педагогика наукисен кандидачĕн ученăй степеньне илет.

2006 çулта вăл майор званипе запаса тухать. Уссурийск хулинчен Шупашкара куçса килет. Халĕ вăл университетри физкультурăпа спорт кафедрин доценчĕ. 2007 çулта ăна Пĕтĕм Раççейри кире пуканĕн спорт федерацийĕн ĕçтăвком членĕ пулма суйланă, наукăпа методика комиссийĕн председателĕ. 2008 çулта кире пуканĕн спорчĕ енĕпе Раççей пĕрлештернĕ командин тренерĕсен составне кĕртнĕ. Хальхи вăхăтра педагогика наукисен докторĕ О.Маркиянов профессор ертсе пынипе спортăн тĕрлĕ енĕпе ирттерекен наука тĕпчевĕсене хутшăнать.




***Шупашкарти И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ***

# ОКРУГ РЕКОРДНЕ ÇĔНЕТНĔ

## АДЮКОВ Николай Александрович




Кавалта çуралса ӳснĕскер, кăçал вăл 56 çул тултарчĕ. Спортпа туслă пулнăран ăна çавăн чухлĕ параймăн. Çирĕп кĕлеткеллĕскер, вăй питти арçын хăйне вăр-вар тытать. Çамрăк курăнать.

– Улттăмĕш класра вĕреннĕ чухнех йĕлтĕрпе чупма юрататтăм. Канашри педучилищĕрен вĕренсе тухнă хыççăн Иван Петрович Таратин ялти вăтам шкулта физкультура учителĕнче ĕçлеме пуçларĕ. Шкулта ирĕклĕ майпа кĕрешме вĕренекенсен секцине йĕркелерĕ. 30–40 ача çӳреттĕмĕр унта. Кӳршĕ ялсенчи тутар ачисем те хапăлласах килетчĕç. Районта тата республикăра ирттернĕ ăмăртусене тăтăшах хутшăннă, район чысне пултаруллăн хӳтĕленĕ, лайăх результат кăтартнă, – аса илет спорт ветеранĕ шкулта вĕреннĕ вăхăтсене.

Часах ăна Совет Çарне службăна илеççĕ. Кунта та

спорта пăрахмасть вăл, йĕлтĕрпе чупать, ытти спорт мероприятийĕсене хутшăнать. Салтак службии çамрăк каччăшăн сисĕнмесĕрех иртсе каять.

Салтакран тĕрекленсе таврăннă чăваш каччи кӳршĕллĕ Тутар Республикинчи Васильеври автотехникума вĕренме кĕрет, «питĕ лайăх» паллăсемпе пĕтерет. Унтан ăна Нефтеюганск хулине ярăççĕ. 6 çул автоколонна начальникĕнче тăрăшать.

Часах вăл Ямал-Ненец автономи округĕнчи Ноябрьск хулине ĕçлеме куçать. Вăл вăхăтра 46 çулта пулнă. Ирĕклĕ майпа кĕрешессине питех пропагандăламаççĕ кунта. Чăваш спортсменĕ вара штанга йăтассипе иртекен ăмăртусене хутшăнма пуçлать. 2000 çулта спорт мастерĕн кандидачĕн нормативне пурнăçлать, виçĕ енлĕ ăмăртса 600 килограмм çĕклеме пултарать. Ултă çул хушши Раççейре мала тухассишĕн иртекен ăмăртусене хутшăнать, виçĕ хутĕнче виççĕмĕш вырăнсене йышăнать.

2006 çулхи декабрĕн 2-мĕшĕнче кунта тухса тăракан «Северная вахта» хаçатра çапла çырнă: «Пауэрлифтинг ветеранĕ Николай Адюков «штангăпа кукленсе ларасси» упражненире Ямал-Ненец автономи округĕн çĕнĕ рекордне тунă, 270,5 килограмм çĕкленĕ».

Тепĕр çулхине Санкт-Петербург хулинче пауэрлифтинг енĕпе Раççейре мала тухассишĕн ăмăрту иртернĕ. Çивĕч кĕрешӳре пирĕн ентеш тепĕр чаплă çитĕнӳ тăвать. 50–59 çулсенчи 110 кг таран таякан ветерансем хушшинче штанга йăтассипе виçĕ енлĕ ăмăртса 650 килограмм çĕклет, иккĕмĕш вырăн йышăнать. Ăна Раççей ветеранĕсен пĕрлештернĕ командине кĕртеççĕ. Вăл Чехире иртерекен тĕнче чемпионатне хутшăнма путевка çĕнсе илет.

Николай Адюков халĕ те Ноябрьск хулинче автоколонна начальникĕнче вăй хурать, тăван яла – Кавала – килсех çӳрет.

# КĔРЕШӲ ĂСТИ

## ТУРТУШОВ (Николаев) Алексей Иванович



2008 çул Вăрмарта иртнĕ Республика кунĕнче район центрĕнчи стадионта Кавалта çуралса ӳснĕ Алексей Иванович Туртушова (Николаева) республикăри «Кĕрешӳ» тулли мар яваплă обществăн Президенчĕ Т.Петров ячĕпе «Кĕрешӳ ăсти» ятне илни çинчен свидетельство пачĕç. Çак ята пирĕн ентеш чăннипех те тивĕçлĕ.

Кĕрешме хăçан пуçлани çинчен ыйтсан Алексей Иванович çапла аса илет: «Шкулта вĕреннĕ чухнех ярмăрккăра кĕрешекенсем çине ăмсанса пăхаттăм. Хамăр урамри патвар та вăйлă çынсем хушшинче ӳснĕ эпĕ. Вĕсем: Адюков, Исаев, Покровский, Таратин йăхĕсем. Иван Таратин пирĕн Кавалти вăтам шкула Канашри педагогика училищине вĕренсе пĕтернĕ хыççăн килчĕ. Çавăн хыççăн эпĕ спортпа татах та çывăхарах туслашса кайрăм. Иван Петрович маншăн «чун тыткăçи» (кумир) пулса тăчĕ. Вăл мана çуран, йĕлтĕрпе чупма, футболла, хоккейла выляма хăнăхтарчĕ.

Кĕрешесси Тупах ялĕнчен пуçланчĕ. Ял уявне Иван Петрович Таратинпа Юрий Васильевич Покровский тата эпĕ пĕрле кайрăмăр. Иван Петрович мана хăйĕнпе кĕрешме ятарласа çырчĕ. Çавăнтан манăн кĕрешӳ хумĕ тапранчĕ.

Районти тата ялсенчи Акатуйсенче кĕрешме пуçланăранпа пурĕ 15 така çĕнсе илтĕм. Чи асра юлмалли вара Вăрмар станцине туса хунăранпа 100 çул çитнĕ ятпаirттернĕ районти Акатуй пулчĕ. Манăн, чăваш ачин, виçĕ тутар çамрăкĕпе кĕрешме лекрĕ. Вĕсене пурпĕрех çĕнтертĕм, паттăра юлтăм.



Эпĕ выляса илсен, манăн тренер, Иван Петрович питех те савăнчĕ: «Историе кĕрсе юлтăн», терĕ.

Эпĕ Чăваш педагогика институчĕн физкультура факультетне вĕренсе пĕтернĕ. 25 çул Шупашкарти Мускав районĕнчи 50-мĕш шкулта физкультура учителĕнче ĕçлетĕп. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче Раççей Президенчĕн 100 пин тенкĕлĕх грантне тивĕçрĕм. Манăн хамăн наци программи пур. Программăра палăртнă вырăн-ĕлĕкхи халăх вăййисене физкультура урокĕсенче выляттарни.

Çĕнĕ Шупашкар хулинче А.Г.Николаев летчик-космонавта асăнса саккăрмĕш çул ĕнтĕ ирĕклĕ майпа кĕрешсе регионсем хушшинчи «Улăп» турнир иртет. Вĕрентекен ачасене кашнинчех унта хутшăнтаратăп. Вĕсем яланах малти призлă вырăнсене çĕнсе илеççĕ».

А.Туртушов хăй те вĕренекенсемшĕн тĕслĕх пулса тăрать. 2008 çулта ирĕклĕ майпа кĕрешсе ветерансем хушшинче мала тухассишĕн Çĕнĕ Шупашкарта иртнĕ ăмăртура 100 килограмм ытларах таякан ветерансем хушшинче пĕрремĕш вырăн йышăннă. Хăйĕн ĕçне, спорта чунтан парăннă аслă категориллĕ физкультура учителĕ Алексей Иванович Туртушов, Раççей халăх вĕрентĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ спортăн анлă çулĕ çине тухма пулăшнă Иван Петровича Таратина тав тăвать.

# РАҪҪЕЙ СПОРТ МАСТЕРĚ

## ИВАНОВА Ольга Валерьевна



Ялти вăтам шкулта 6-мĕш класра вĕреннĕ чухнех спортпа туслашнă вăл. Ирĕклĕ майпа кĕрешессине килĕштернĕ. Н.Таратин тренер тăрăшнипе хăйĕн спортри ăсталăхне ӳстерсех пынă. Саккăрмĕш класс хыççăн Шупашкарти Олимп резервĕсен училищине вĕренме кĕрет.

2001 çулхи октябрь уйăхĕ халĕ те унăн асĕнчехха. Кадетсем хушшинче ирĕклĕ майпа кĕрешсе республикăра мала тухассишĕн Çĕнĕ Шупашкарта ирттернĕ ăмăртусенче вăл çĕнтерӳçĕ пулса тăрать.

Тепĕр çулхине те 65 килограмм таран таякан спортсменкăсем хушшинче каллех республика чемпионкин ятне тивĕçет.

2003–2005 çулсенче хуть те хăш хулара ирттернĕ ăмăртусенче те вăл яланах малти призлă вырăнсене çĕнсе илнĕ.

2006 çулхи февраль уйăхĕнче 1986–1988 çулсенчи хĕр ачасем хушшинче ирттернĕ ăмăртура республика чемпионĕн ятне тивĕçет.

Шупашкар хулинче Раççей çамрăкĕсен пĕрремĕш çуллахи Спартакиадине ирттернĕ. 72 килограмлă спортсменкăсем хушшинче пирĕн Оля каллех çĕнтерӳçĕ пулса тăнă.

Пултаруллă спортсменкăн ытти çитĕнĕвĕсем те савăнтараççĕ. Апрель уйăхĕнче Шупашкарта граждан вăрçин

геройне В.И.Чапаева асăнса ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе Пĕтĕм Раççейри турнир иртнĕ. 67 килограмлă хĕрарăмсем хушшинче вăл каллех пĕрремĕш вырăн йышăннă.

Июль уйăхĕнче Брянск хулинче Совет Союзĕн икĕ хут Геройне П.М.Камазина халалласа ирĕклĕ майпа кĕрешсе XXIV мемориал иртнĕ. Çивĕч кĕрешӳре 67 килограмлă хĕрарăмсем хушшинче Оля иккĕмĕш вырăна тухнă.

Пирĕн ентешĕн пултарулăхне училище дирекцийĕ (директорĕ Ф.Семенов) те тивĕçлипе хакланă. 2006–2007 вĕренӳ çулĕнче Пĕтĕм Раççейри тата тĕнчери ăмăртусенче пысăк çитĕнӳсем тунăшăн Ольга Ивановна Грамотăпа наградăласа пысăк чыс тунă.

2008 çула та ăнăçлă пуçланă Оля. Февраль уйăхĕ. Атăлçи федераллă округра мала тухассишĕн Хусанта ирттернĕ ăмăртусене Йошкар-Ола, Мускав, Брянск, Ижевск тата ытти хуласенчен чи пултаруллă кĕрешӳçĕсем пуçтарăннă. Кашниех мала тухассишĕн ĕмĕтленнĕ. Самаях пысăк опыт пухнă Кавал хĕрне хăйĕнпе тупăшакансене çĕнтерессе пĕрре те иккĕлентермен. 72 килограмм таран таякан, 1988–1990 çулсенчи юниоркăсем хушшинче, пурне те çĕнтерсе, каллех чемпионка ятне тивĕçнĕ. Апрель уйăхĕнче Çĕнĕ Шупашкарта граждан вăрçин геройне В.И.-Чапаева асăнса Пĕтĕм Раççейри турнир иртнĕ. Ку хутĕнче те хăйĕнпе кĕрешекенсене пурне те çĕнтернĕ, Раççей спорт мастерĕн нормативне пурнăçлнă.

Умра тепĕр яваплă ăмăрту. Июль уйăхĕнче Саратов хулинче Раççей Ял хуçалăх министерстви çуллахи иккĕмĕш Универсиада ирттерет. Чăваш хĕрĕ унта хутшăнма тĕплĕн хатĕрленет. Çапла вара пирĕн республикăран унта хутшăнма тĕрлĕ категорири 12 спортсмен тухса каяççĕ. Пурин те пĕр шухăш – çĕнтермелле. Вĕсенчен чылайăшĕ шанăçа сухатмаççĕ, призлă вырăнсене çĕнсе илеççĕ. Оля вара 72 килограмм таран таякан спортсменсене çĕнтерсе каллех чемпионка ятне çĕнсе илет. Спорт мастерĕн нормативне пурнăçланине тепĕр хут çирĕплетет.

– Финалти ӑмӑрту ҫӑмӑл пулмарӗ. Тутар Республикинчен пынӑ Ангелинӑпа икӗ тапхӑр кӗрешме тиврӗ. Пурпӗрех ҫӗнтертӗм, – хӑйӗн савӑнӑҫне пытармарӗ Ольга Валерьевна.

2007 ҫул вӑл заочно майпа Чӑваш ял хуҫалӑх академин экономика факультетне вӗренме кӗнӗ. Спортпа пиҫӗхнӗ хӗр ӑслава та ҫӑмӑллӑнах ӑша хывать.

2009 ҫулта Тольятти хулинче Вячеслав Петрова асӑнса ирӗклӗ майпа кӗрешес енӗпе ирттернӗ ӑмӑртура Атӑлҫи федераци округӗн чемпионки пулса тӑнӑ.



***Оля Иванова спорт мастерӗ хӑйӗн тренерӗпе Николай Таратинпа***

# КАВИР ÇИНЧЕ – КАВАЛ ХĔРĔ

## ТАБАКОВА Арина Владимировна



Кавалта спорта хисеплеççĕ. Ахальтен-и спортăн тĕрлĕ енĕпе пултаруллă спортсменсем сахал мар тухнă кунтан. Арина Табакова тăваттăмĕш класра вĕреннĕ чухнех ирĕклĕ майпа кĕрешме вĕренмелли секцие çӳренĕ. Тăрăшни сая кайман. Спортри пултарулăхĕ çулсерен ӳссе пынă. Пиллĕкмĕш класра вĕреннĕ чухнех Шупашкарта ирттернĕ ăмăртура иккĕмĕш вырăн йышăннă.

2002 çул халĕ те Арина асĕнчех-ха. Çавăн чухне ĕнтĕ вăл 1986–1988 çулсенче çуралнă, 38 килограмм таран таякан хĕрсем хушшинче Шупашкарта ирттернĕ ăмăртура пĕрремĕш вырăн йышăнать.

Çамрăк спортсменкăн тепĕр çулхи кăтартăвĕсем те курăмлă. Март уйăхĕнче 1986–1988 çулсенче çуралнă, 40 килограмм таран таякан кадетсем хушшинче Атăлçи федераци округĕнче Раççейре мала тухассишĕн ирттернĕ ăмăртусенче виççĕмĕш вырăна тухать.

Апрель уйăхĕнче «Агро-инвест» хупă акционерлă обществăн призĕсене çĕнсе илессишĕн ирттернĕ Пĕтĕм Раççейри турнирта иккĕмĕш пулать.

Ноябрь уйăхĕнче 1987–1989 çулсенче çуралнă 46 килограмм таран таякан хĕр ачасем хушшинче республикăра мала тухассишĕн ирттернĕ тупăшура иккĕмĕш вырăн йышăнать.

Ытти ӑмӑртусенче те ҫӗнтерӳ хыҫҫӑн ҫӗнтерӳ тунӑ пирӗн пултаруллӑ ентеш, хӑйӗн спортри ӑсталӑхне ӳстерсе пынӑ. Ҫитӗнӳсем тума ӑна унӑн малтанхи тренерӗ И.Таратин, каярахпа Р.Таратин вӗрентсе, хавхалантарса пынӑ.

2008 ҫулхи ҫитӗнӗвӗсемпе А.Табакова чӑннипех те савӑнать. Республикӑра мала тухассишӗн Шупашкарта irttернӗ ӑмӑртура ҫӗнтернӗччӗ. Акӑ тепӗр пысӑк ҫитӗнӳ, 56 килограмм таран таякан спортсменсем хушшинче ирӗклӗ майпа кӗрешес енӗпе ирттернӗ вӗренекенсен Раҫҫейри виҫҫӗмӗш ҫуллахи Спартакиадинче виҫҫӗмӗш вырӑн йышӑнать, спорт мастерӗн кандидачӗн нормативне пурнӑҫлать. Ӑна физкультурӑпа спортӑн федераллӑ агентствин тата вӗрентӗвӗн федераллӑ агентствин виҫҫӗмӗш степеньлӗ дипломӗпе наградӑланӑ.

Тӗрлӗ ӑмӑртусенче пысӑк ӑсталӑх кӑтартса, хӑйӗнпе кӗрешекенсене ҫӗнтерсе вӑл 15 медаль ҫӗнсе илнӗ. Чӑннипех те пултарать Арина Владимировна. Татах та нумай ҫӗнтерӳсемпе савӑнтарӗ-ха пире пултаруллӑ хӗр ача. Халӗ вӑл Чӑваш ял хуҫалӑх академийӗнче экономика факультетӗнче вӗренет.



*Хисеп пъедесталӗн чи ҫӳллӗ картлашки ҫинче – Арина Табакова*

# ÇАМРĂК ĂРУ, ПУЛАС ЧЕМПИОНСЕМ ÇИТĔНЕÇÇĔ

Кун хыççăн кун иртет, пурнăç шав малаллах чупать. Таратинсен йăхĕнче те хальхи пекех маттур, Тăван çĕршыва, ĕçе чунтан парăннă çирĕп сывлăхлă, шкулта тарăн пĕлӳ илессишĕн хыпса çунакан, хăйсен сывлăхне ача сачĕсенче çирĕплетсе тĕрĕс воспитани илекен çамрăк ăру çитĕнет. Вĕсен хушшинче эпир çамрăклах физкультурăпа тата спортпа туслă арçын ачасемпе хĕр ачасене куратпăр. Ашшĕ-амăшĕ вĕсене мĕн шкул саккинчен пуçласах çирĕп сывлăхлă, Тăван çĕршыва юрăхлă пулма, ĕçе чунтан парăнма, спортăн анлă çулĕ çине тухма тĕрĕс воспитани парассишĕн хăйсен мĕн пур пĕлĕвне, ăсталăхне, вăй-халне параççĕ.

Ачасене тĕрĕс воспитани парса ӳстерес тĕлĕшпе амăшĕн тӳпи уйрăмах пысăк. Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин депутачĕ, «Единая Россия» партин фракци членĕ Павел Владимирович Семенов Чăваш çĕрĕн хаклă хĕрарăмĕсене Амăшĕн кунĕ ячĕпе çапла саламлать:

«Эсир çемьене тата ачăрсене паракан чун-чĕре ăшшишĕн тата ырă кăмăлшăн тав сăмахĕсем калама ирĕк парсамăр. Çĕр çинче пурăнакан кашни çынна эсир чи хаклине – пурнăç парнеленĕ. Эсир – кил ăшши, пӳрт-çурта илем, хăтлăх кĕртетĕр, ырă канашпа, сăмахпа пулăшатăр, чун ăшшине паратăр. Ахальтен мар халăхра çакăн пек калаççĕ: «Хĕвел айĕнче çутă, анне хӳттинче ăшă». Эсир хăвăр ачăрсене Тăван çĕршыва юратма хăнăхтаратăр, ăсхакăллă, ырă, тӳрĕ кăмăллă пулма вĕрентетĕр. Сире чунчĕререн телей, çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, тăнăçлăх тата ырлăх-сывлăх сунатăп. Çывăх çынсен юратăвне тата тимлĕхне яланах тивĕç пулăр!»

Çак сăмахсем кашни хĕрарăмах ачисене тĕрĕс-тĕкел пăхса çитĕнтерес енĕпе яваплăха ӳстерме хистеççĕ.

Зоя Тимофеевнăпа Петр Сергеевич Таратинсен çемйинче Коля виççĕмĕш ача.

**Галина Васильевнăпа Николай Петрович ТАРАТИНСЕМ** виçĕ ача çуратса пăхса ӳстернĕ, пурнăç çулĕ çине кăларнă. Вĕсем халĕ пурте çемьеллĕ. Чи асли – **Анжелика**. Ун хыççăнхи – **Петр. Руслан** вара чи кĕçĕнни. Ашшĕпе амăшĕ ачисемпе тивĕçлипе мухтанаççĕ. Вĕсене çĕршыва юрăхлă çынсем пулма воспитани парса ӳстернĕшĕн савăнаççĕ.

Аслă хĕрĕ çемйипе Мускав хулинче ĕçлесе пурăнаççĕ. Ывăл ачисем вара тăван ялтах, Кавалтах тĕпленнĕ. Кирлĕ вăхăтра ашшĕ-амăшне пулăшма васкаççĕ.



Анжелика, Петр тата Руслан ашшĕ-амăшĕпе пĕрле

**Анжелика Николаевнăпа Валерий Михайлович Гусаровсем** Мускавра ĕçлесе пурăнаççĕ. Вĕсен икĕ ача. **Алена** тата **Миша**. Алена Мускавра институт вĕренсе пĕтерсе аслă пĕлӳ илнĕ, унтах тăрăшать. Михаил Шупашкарти кооператив институтĕнче виççĕмĕш курсра вĕренет.



Алена




Миша

**Татьяна Владимировнăпа Петр Николаевич** икĕ ача çитĕнтереççĕ. **Настя** Шупашкарта медицина училищинче вĕренет. Ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе чапа тухнă. Республикăра мала тухассишĕн Шупашкарта ирттернĕ ăмăртăва хутшăнса вăл призерсен йышне кĕнĕ. **Коля** шăллĕ Кавал шкулĕнче çиччĕмĕш класра вĕренет. Вăл та спортпа туслă.



Татьяна Владимировна



Петр Николаевич



Настя



Коля

**Ирина Михайловнăпа Руслан Николаевичăн** ачисем пĕчĕккĕ-ха: **Денис** – 5 çулта, **Арина** – 7 уйăхра. Вĕсем те физкультурăпа спорта хăнăхса ӳсеççĕ.



Пулас пăхаттирсем çитĕнеççĕ



Дениспа Арина



Денис

**Галина Михайловнăпа Иван Петрович ТАРАТИН-СЕМ.** Сергей ывăлĕ ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе Раççей спорт мастерĕн нормативне пурнăçланă.



Галина Михайловнăпа Иван Петрович Таратинсем Сергей ывăлĕпе. 1977 çулта тунă сăн ÿкерчĕк.



Наталья Валентиновнăпа Сергей Иванович Таратинсем хăйсен ачисемпе.

**Наталья Валентиновнăпа Сергей Иванович** хăйсем пекех маттур икĕ ывăл ача çитĕнтереççĕ. **Андрей** 7 çул тултарнă, Вăрмарти пĕрремĕш номерлĕ вăтам шкулта 1 «а» класра вĕренет. **Кирилл** – 5 çулта.



Сергейпа Наталья



Андрей



Кирилл

**Юлия Михайловнăпа Владимир Петрович ТАРАТИНСЕН** икĕ ывăл та пĕр хĕр: **Андрей, Алексей** тата **Оля**.



Ачисем пурте çемьеллĕ. Пулас чемпионсем çитĕнтереççĕ.

«Пуян пурăнас тесен кăмака çинче ларма юрамасть», текен ваттисен каларăшне çемье пуçлăхĕ Владимир Петрович тахçанах ăша хывнă. Ахальтен-и вăл механизатор профессине суйласа илнĕ.

Мăшăрĕ – Юлия Михайловна вара кĕçех 88 çул тултаракан амăшне Екатерина Никифоровнăна çамрăклах хурт-хăмăр пăхма вĕрентсе ӳстернĕшĕн паян кун та тав тăвать. «Аçу-аннӳн ани-çаранне нихçан ан ман» текен анлă сарăлнă каларăша яланах асра тытать. Амăшĕ мĕн ĕмĕр тăршшĕпех «Ленинский» совхозра, каярахпа «Ковали» хуçалăхра хурт-хăмăр ăсти пулса ĕçленĕ май, хĕрне те çак ĕçе хăнăхтарса пынă. Юля вара паян кун та хурт-хăмăртан уйрăлма шутламасть. Хăйсен килĕнче вĕсем темиçе пуç вĕлле тытаççĕ, пыл туса илеççĕ, ачисемпе мăнукĕсене пылак çимĕçпе савăнатараççĕ.

**Алена Геннадьевнăпа Андрей Владимировичăн Ваня** ывăл ача çитĕнет. 4 çулта кăна-ха вăл. Моряк тата пултаруллă спортсмен пулма ĕмĕтленет.





Ваня

**Наталья Александровнăпа Алексей Владимировичăн Максим** ывăл ачи 2 çулта. Вăл та пултаруллă спортсмен пуласса шанчăк çуратать.



***

**Ольга Владимировнăпа Андрей Геннадьевич Васильевсем** Шупашкарта пурăнаççĕ. Вĕсен икĕ ача: **Света** – 5 çулта, **Даша** – 2 уйăхра.

# КĂШТАХ ИСТОРИРЕН

Ирĕклĕ майпа кĕрешекенĕн хăйĕнпе тытăçакана кĕрешмелли кавир çине çавăрса çапас тесен алăпа та, урапа та тĕрлĕ мелсемпе усă курма юрать. Ăмăртăва тĕрлĕ виçеллĕ спортсменсем хушшинче (ачасем, юниорсем, çамрăксем, çитĕнсе çитнисем) ирттереççĕ.

1950-мĕш çулсен пуçламăшĕнче ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен ушкăнĕсем чи малтанах республикăри Патăрьел, Йĕпреç тата Вăрмар районĕсенче йĕркеленнĕ. Унтан Шупашкарта тата Канашра секцисем уçнă.

1960 çулта республикăра пĕрремĕш чемпионат ирттернĕ. Ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе 1962 çулта О.Маркиянов чи малтан СССР спорт мастерĕн нормативне пурнăçланă. 1963 çулта А.Егоров Атăлçи чемпионатăн призерĕ пулнă тата РСФСРти халăхсен çуллахи 3-мĕш Спартакиадин финалти ăмăртăвĕсене хутшăннă. Чăваш кĕрешӳçисенчен нумайăшĕ ирĕклĕ спорт обществисен Тĕп Совечĕн, Раççей, СССР, Европа тата тĕнче чемпионачĕсене хутшăннă. 120 ытла çын СССР тата Раççей спорт мастерĕсен нормативĕсене пурнăçланă. Афинăри (2004 ç.) çуллахи XXVIII Олимп вăййисене хутшăннă О.Смирнова, Н.Гольц тĕнче чемпионкисем пулса тăнă. И.Григорьев та тĕнче чемпионĕн ятне тивĕçнĕ. М.Савинов (пирĕн ентеш, Кивĕ Вăрмар ялĕ, 1979 çул) Тĕнче Кубокне çĕнсе илнĕ. И.Уркинпа В.Филимонов тата ыттисем СССР чемпионачĕсен призерĕсем.



***1970 çул. Иван Таратин, Николай Таратин, Рашид Зинатдуллин – Чăваш Республикин чемпионĕсем.***

*Никам та чемпион пулса çуралмасть. Ачаран пуçласа çитĕнсе çитичченех ăсталăха ырми-канми ÿстерсе пырсан çеç ятлă-сумлă спортсмен пулатăн. Ку енĕпе тренерсемпе пĕр чĕлхе тупни, вĕсем хушнине тата вĕрентнине пурне те çирĕп пурнăçласа пыни кирлĕ.*

*Çитĕнÿсен çăлкуçĕ – харпăр хăй тăрăшнипе пĕрлех физкультурăпа спорта аталантарма тивĕçлĕ условисем пурри, ашшĕ-амăшĕсем витĕм кÿни.*

*Сывă пурнăç йĕркине çирĕп пурнăçласа пыни Таратинсене ĕçре, пурнăçра çĕнĕ çитĕнÿсем тума хавхалантарать. Вĕсен ырă тĕслĕхĕпе ыттисем те маттур та пултаруллă, спортпа туслă пулма тăрăшаççĕ.*

# ТУПМАЛЛИ

Умсӑмах .......... 4
Таратин Петр Сергеевич .......... 6
Колхоз председателӗнче – 6 ҫул .......... 10
Малтанхи утӑмсем .......... 13
Спорт ветеранӗсен аса илӗвӗсем .......... 15
Таратин Геннадий Петрович .......... 23
Таратин Юрий Петрович .......... 24
Таратин Николай Петрович .......... 27
Таратин Иван Петрович .......... 32
Таратин Владимир Петрович .......... 49
Таратин Сергей Иванович .......... 52
Таратин Петр Николаевич .......... 57
Таратин Руслан Николаевич .......... 58
Таратин Алексей Владимирович .......... 60
Таратин Андрей Владимирович .......... 61
Ӑсталӑх кӗрешӳре туптанать .......... 62

**Таратинсен воспитанникӗсем**

Тихонов Владимир Федорович .......... 95
Адюков Николай Александрович .......... 98
Туртушов Алексей Иванович .......... 100
Иванова Ольга Валерьевна .......... 102
Табакова Арина Владимировна .......... 105
Ҫамрӑк ӑру, пулас чемпионсем ҫитӗнеҫҫӗ .......... 107
Кӑштах историрен .......... 117

Хованский Анатолий Ильич

# РОДНЫЕ ТАРАТИНЫ

Редактор **А.И.Хованский**

Компьютерный набор *С.Н.Матросовой*
Вёрстка *Н.П.Шутеевой*
Дизайн обложки *Н.Л.Лукиной*

Подписано в печать 16.11.2010. Формат 60x84/16.
Бумага офсетная. Печать офсетная.
Гарнитура Arial Cyr Chuv. Физ.печ.л. 7,5.
Тираж 500 экз. Заказ №279.

Отпечатано в типографии ИП Сорокина А.В. «Новое Время».
428034, Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1.
Тел.: (8352) 41-27-98, 46-43-46.
E-mail: newtime1@mail.ru.

